С. Елкер

# ХĔН-ХУР АЙĔНЧЕ



Чăвашгосиздат - 1937

ЧĂВАШ
ИЗДАТ
1937

С. ЭЛЬГЕР

# ПОД ГНЕТОМ

*ИСТОРИЧЕСКАЯ*
*ПОЭМА*

ВТОРОЕ
ИСПРАВЛЕННОЕ ИЗДАНИЕ

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВ. ИЗДАТЕЛЬСТВО
ЧЕБОКСАРЫ 1937

Ç. ЕЛКЕР

# ХĔН-ХУР АЙĔНЧЕ

*ИСТОРИЛĔ*
*ПОЕМĂ*

---

ЙУСАСА ÇĔНЕТНĔ
ИККĔМĔШ ИЗДАНИ

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
1937 ШУПАШКАР

Редактор Н. К. ЯНГАС
Техн. редактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ
Рис. худ. В. МАКАРОВА
Обл. художника А. САВЕЛЬЕВА

Сдано
в произв. 18|VIII
1937 г. Подп. к печати
15|X 1937 г. Печ. лист. 6,28.
Печ. знак. 49920 в п. л. Тир. 5000 экз.
Формат бумаги 72×105¹|₃₂. Чу-
вашглавл. № 1993. Зак.
№ 2583. Чуваш-
гиз № 143.

Типография № 2 Чувашгиза
в г. Алатыре, Чувашской АССР.

## I. КАНТУР—ЧУНИЛЛИ.

Кушлавăш—текен вуникĕ йал уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать;
Çула йе хĕлле—такам та туйĕ—
Вăрманлăх кунта хўтлĕхне тытать.
Хаваслă çĕршыв! Сывлать вăл кал-кал...
Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман.
Пĕр-икĕ ĕмĕр пирĕнтен авал
Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман.
Ик-виç çĕр çулхи йаштак ват хырсем
Кармашнă унта пĕлĕте пăхса,
Кунĕн те çĕрĕн канмасăр вĕсем
Кашланă текех тем канашласа.
Çак хырлăхсенчех ушах[1] мăк шурри
Талккиш-талккишпе выртнă саралса.
Пăши-пăлансем вăрманĕ тулли
Çўренĕ унта шурлăха çăрса.
Мăк шурлăх лешйен—чăрăшлă вĕтлем—
Хĕвел çуттине çĕр çине йаман;
Унта çăмламас, хайар упасем
Нимле кайăка пуç пулма паман.
Унтах, тĕлĕпе, катмар йумансем
Çăра çулçăпа шавланă текех.
Çамра[2] тĕрлĕрен кайăк-кĕшĕксем

[1] *Ушах*—лачака.
[2] *Çам*—çулçăлă вăрман, çамлăх.

Йантратнă йурра кунĕ-çĕрĕпех.
Унта та кунта ахрат[1] çырмисем
Выртнă пытанса вăрман тĕпĕнче;
Çут тĕкĕр тĕслĕ тăрă шывĕсем
Курăк айсемпе йухнă вĕсенче.
Йантак[2] чăрăшсем вăрман варринче
Пăхнă кармашса тĕнче хĕрнеле;
Таçти, инçетри уй-хир тӳпинчен
Курăннă вĕсем чиркӳ тăрриле;
Çынна палламан вĕлле хурчĕсем
Сĕрленĕ унта ирĕклĕн вĕçсе,
Ёшне-уйсенчи чăпар чечексем
Чӳхеннĕ вĕл-вĕл вĕсене чĕнсе.
Çак аслă вăрманăн сĕмлĕх варрине
Чылай ĕмĕрсем çын пырса кĕмен.
Катмар йăвăçсем хăйсен ĕмĕрне—
Мĕскер вăл пуртă—курман та пĕлмен

* * *

Кунсем, çулсем иртнĕ.
Хайхи вăрмана
Етем пырса çитнĕ...
Улах вырăна—
Уй-хир çĕрĕнчен пынă чăвашсем
Ларса хӳтĕленнĕ;
Кушлавăш, Хапăс, Хумпуç йалĕсем
Унта тĕвĕленнĕ.
— Тарар сĕмлĕхе,
Пурнар ирĕкре...

[1] *Ахрат*—çапса çурнă пек тарăн çырмана „ахрат çырми“ теççĕ.

[2] *Йантак*—йаштака, вăрăм, тӳрĕ.



Пире пуçлăхсем унта тупас çук,—
Шутланă вĕсем куçса ларнă чух.

---

Анчах, инкеке, пытанчăк йалсем
Часах мĕн тухнă „тĕнче“ куç умне;
Есрел пек пупсем, усал пуçлăхсем
Кунти кĕтессе те пуçланă çитме.
Ырхан йалсене кашни уйăхрах
Тустарнă çитсе кантур таврашсем.
Шăнкравпа, йалан виçшер лашапа
Йан-йан! йантратса çӳренĕ вĕсем.
Йала пырсанах хурал пӳрт умне
Мĕн пур халăха пухтарнă хуса.
Пуху пухсанах,—пĕл унта камне,—
Пурмис йе тийек кăшкăрнă урса.
— Часрах куланай! куланай!..—тесе,
Чухăн халăха пăвнă тек măйран;
Парăмлисене çĕре ӳкерсе
Хунав хулăпа кастарнă йалан.
Хулли пĕтес çук: кĕлти-кĕлтипех
Выртнă чăсăлса пуху умĕнче;
Хресчен çыннин ăна курнипех
Сăрканă сив йун çанçурăмĕнче.
Мĕскер тăвас тен? Тӳлесех пулать:
Кам-ха çийес тет вилĕм патакне?
Çӳçенчĕк чĕрӳ хуйхăпа тулать:
Парăма йулсан—сĕвеççĕ тирне.

* * *

Йалти чухăнсем усаççĕ пуçа,
Шыраççĕ меслет укçа-тенкĕ тупма.
Вăрман çĕрĕнче килмест-мĕн укçа.

Тырри шав пулмасť. Ăçта тыр сутма?!
Сутçан тырруна—пӳлмӳне тасат.
Çемйӳ пĕтме те вара пит ансат.
Мĕн пур пек шанчăк—пĕр аслă вăрман.
Пулаť-ши усси унпа тăрмашсан?..

---

Аптранă халăх сахал укçашăн
Ваклаť вăрмана, касаť те кăклаť.
Çырма тĕпсенче курăс тăвасшăн
Чаваť, тергленет, пĕвесем тăваť;
Чĕрет чĕренче—хиреле сутма,
Сараť уй çĕрне—нумайрах акма.
Пур пек тавара йăвăр асаппа
Шупашкар йенне леçеççĕ лавпа.
Вăрманĕ нумай—май пур-ха касма:
Анчах усси ун сахал пуранма.
Ĕçлен кунĕпе—илен пилĕк пус,
Ăçтан ес унпа витен тăкакна?
Хĕлĕ çывхараť, кĕтсех тăр ак, тус,
Сан пур-и, çук-и, пĕлмеççĕ ăна:
Кантур—чунилли çитет ак, хĕсет,
Укçу пулмасан—тытаť те хĕртет.

## II. КУЛАНАЙШĂН.

Пĕрре ак хĕлле, сивĕ кунхине,
Вăрман хушшинчи Кушлавăш йалне
Кантур таврашĕ çитет ыткăнса,
Çитет те хăвăрт пухаť халăха.
Хура хурал пӳрчĕ. Ăшчикĕ кичем:
Тарпа, сĕрĕмпе сăрланнă çтена,
Иķ йенчен пĕрер пĕчик чӳрече
Кăшт çутă кĕртсе тăраççĕ ăна.
Хĕсĕк тĕпелте, тур кĕтессинче,
Лараť тăлăххăн лутака сĕтел.
Кăвак кантăкран сар сĕтел питне
Имшеррĕн пăхса çутатаť хĕвел.

* * *

Çитнĕ кантуртан пурмиспа тийек,
Килнĕ тийесе йал тулли инкек;
Иккĕш те вĕсем калăпсăр мăнтăр,
Пиче-куçĕсем шыçмак та сăнсăр.
Çиллĕн мăшлатса, хайаррăн пăхса
Лараççĕ вĕсем сĕтел хушшине.
Умри мужиксем шикленсе тăрса,
Пуçа пĕшкĕртсе пахаç урайне.
Пӳртри халăх шăп, вилнĕ пек тăраť.
Паллах, ырра мар, ун чунĕ хараť.

Ак сас илтĕнет, пуху хусканать.
Хăравçă çынсен чĕри кускалать.
Тийек мăшлатса мăн кĕнекине
Çĕклет йерипен, уçать листине.
Сив куçлă пурмис сулать алăпа,
Пуçлать сăмахне хулăм сасăпа:
— Епир çитрĕмĕр—пĕлĕр хăвăрах,
Часрах куланай!.. Куланай тавай!
Пĕрре анчах мар, кашни уйăхрах
Сире кун çинчен калатпăр нумай.
Саккун хушнине парса татмасан,
Питех те йăвăр сире пайантан!
Кам пайан памасть—текех каçармасп.
Мăн парăм пулсан, чĕррĕн хăвармасп.
Кам путсĕр, кахал, куланай памасть,—
Пайан ун пеккин пуçĕ те йулмасть.
Ун пек кахала хаљ ӳкермеле,
Хулăпа касса тирне сӳмеле!..
Пурмис сăмахĕ халăх хăлхине
Вут-хĕм пек вĕрин кĕрет пĕçертсе.
Шикленнĕ хресчен хыçать ĕнсине,
Пит-куçĕ унăн çунать ĕнĕхсе.
Тийек пикенет йат тăрăх чĕнме,
Пурмис—пурне те хăтăрса хĕсме.
Хăравçă мужик йачĕ тухсанах
Сикет кăрт! ıырать сĕтел патнеле,
Тӳлет парăмне укçи пулсанах,
Тăрать пашкаса хăранипеле.

* *
*

Тĕрĕслерĕç йат, камăн пур—пачĕç,
Кам-кам параймасть—тытса хăварчĕç.

Пурмис ак пухха тула кăларать,
Тыткăнрисене çаптарма хушать.

* *
*

Хĕрӳсĕр хĕвел аран çутатса,
Анать васкаса кăнтăр тӳпинчен.
Хайар сивĕ çил кас-кас вашлатса
Килет çурçĕрти тĕнче хĕрринчен.
Хурал пӳрт умĕ йӳçет хумханса.
Унтах, халăхран патах уйрăлса,
Тăраççĕ сĕнксе çич-сакăр мужик...
Пурмиспа тийек, унтах ак сутник
Васкаççĕ часрах ӳт-тире сӳме,—
Хистеççĕ вĕсем теçетниксене.
Ак ӳкет пырса кĕлтипе хулă.
(Шăшийе—куççуль, кушакка—кулă!)
Ак ват Итапай выртать чăсăлса.
Тийек хăй ăна антарать пусса.
Шыçмак тийеккин аллисем паттăр,
Ӳркенмест-мĕн вăл—пит çăттăр-çаттăр—
Ĕçне тума та пуçлать вăл хăйех,
Кама ĕнтме те чухлать чиперех:
Тăратчĕç унта икĕ теçетник,
Тийек вĕсене малтан тивертет.
— Маттур пул!..часрах! вăрт-варт!..—
тет сутник.
Тийекĕ хĕмлет, сутникĕ тимлет.

* *
*

Выртать йур çинче кăвак Итапай,
Ун шывлă куççем сикеççĕ пĕрмай.
Хĕрӳ тийеккин аллисем вĕри,
Патшашăн çунать ун тискер чĕри.

Пурмис мĕкĕрет:—Çапăр алла рас!—
Кайат йанраса аслати пек сас.
Ак ик теçетник вăр-вар васкаса
Итапай тумне илеççĕ хывса;
Хура сăхманне сараççĕ айне,
Ӳпне вырттарса хываççĕ йĕмне.
Шăп пилĕк таран кĕпине сирсе
Параççĕ палла:—ан сиклен!.. тесе.
Ырхан Итапай, ватă пуçĕпе,
Выртаť чĕтресе пĕтĕм пĕвĕпе,
Тискер чунилли пуçлаť хăй ĕçне—
Касма пикенет Итапай ӳтне.
Касаť те касаť, суса та пыраť,
Ырса çитет те—сутнике хушаť.
Итапай старик, тӳсеймен пирки,
Ача сассипе йараť çухăрса.
(Çаплаçке ĕнтĕ патшасен йĕрки—
Кӳпки-çапкипе панă ырлăхне!)
Пĕр вăтăр çапсан, вата Итапай
Халтан кайнипе ăнтрашаť чылай.
Çапса пĕтерсен, вилнĕ пекскерне
Хураççĕ кĕртсе пуш хурал пӳртне.

* *
*

Киленнĕ пурмис çӳлеле вĕрет,
Сив сывлăш туртса каллех мĕкĕрет:
— Ак куртăр ĕнтĕ: тӳрккес çынсене
Йепле еп савса манми ачашлап...
Кам хăйне шеллет—таттăр парамне!
Ун пек çынсене халех хăтарап.
Пурмис малала лӳпперĕн пăхаť.
Сулаť алăпа, хĕрӳлĕн калаť:
— Çаптар лешсене!



Касчен пĕтерсе вĕçес кил йенне...
Чĕр йун сирпĕнсе пăрланă вырăна
Чĕнсе кăлараççĕ пĕр çамрăк çынна.
Ку çын—хут çинче Йакку йатлăскер,
Йалта, чăвашла—*Чакка* тенĕскер.
Çынни ку—тăлпан, çӳлĕ мар—вăтам.
Пит-куçĕ—чĕрĕ, илемлĕ, çуткам.
Сухалĕ кăшт çеç тăрат мăкланса.
Çине кивĕ тум йанă тăхăнса.
Чакка вырăсла та пăртакçă чухлат,
Çампа пурмиса пуççапса калат:
— Ей, ырă пурмис, хĕрхенĕр мана...
Халех, ыранах кайап хулана.
Виç лав ман курăс кайса сутмала.
Ăна сутсанах укçа пулмала:
Тенкĕ çур пулат—катап парăма...
Тархасшăн ан тив... хăтар пуçăма...
Сасартăк тийек пурмиса калат:
— Ку çамрăк чăваш ытла мăшкăлат!
Вăл куланайа икĕ çул татман...
Ун пек кутăнсем нумайах йулман.
Тăват тенкĕ те çирĕм икĕ пус
Унтан илмеле... Ак мĕнле вăл йус!
Тийек сăмахне илтнĕ-илтменех,
Пурмис мĕкĕрет хĕремесленсех:
— Ăшалăр ăна чĕри çурличчен!
Тĕп пултăр кунтах, епир кайиччен...—
Шăртланнă пурмис, талхăрнă чухнех,
Тапат Чаккана пуçран пĕреççех.
Ун йавăр кĕлелĕ сулмаклă атти
Лекет вирлĕнех Чакка çамкине.
Мĕскĕн сулăнат, чĕтрет ун тути,

Кайат йаванса вăл таптав йур çине.
Сулмаклă тапкă лекнĕ выранта
Лĕпке тĕлĕнчен ӳт-тир вистенет,
Вĕри чĕп-чĕр йун сăрхат сурантан:
Йухат йун, тумлат—пит-куç хĕрелет...
Çĕкленнĕ Чакка каллех тилмĕрет,
Сасси чĕтренсе аран илтĕнет:
...Тырриçке пулмаст...
Укçи тупăнмаст...
Каçарăр пайан!—
Тейет вăл аран.
Пурмис, мăн сухал, çынна хĕрхенмест—
Чакка кĕллине хăлхана чикмест;
Супне-çĕлĕкне хывса тахăнат,
Часрах хĕнесе пăрахма хушат...
Ак çамрăк пуçа хураççĕ чăсса,
Çири тумтирне илеççĕ хывса;
Пилеш хуллисем суйласа илсе
Пуçлаççĕ ăна касса ислетме.
Ак çапнă йĕртен чĕр йун пĕрĕхсе
Шур йур çинеле кайат сирпĕнсе;
Ахлатнă сасă çурат чĕрене.
Ку сас—хайар сасă—сарлат йал çине...
Ни хурлăхлă сас, ни куççуль, ни йун,—
Нимскер хускатмаст шыçмак пуççене.
Упа пек урса, çапла, кĕтмен кун,
Йунлаççĕ вĕсем пĕчĕк йал питне.

* *
*

Хĕрӳсĕр хĕвел ансах ларайман.
Шăхрат сивĕ çил, карлат сĕм вăрман.
Пурмиспа тийек, ĕçне пĕтерсе,
Кайаççĕ йалтан тăман вĕçтерсе.

Варман варринчи улах пĕчĕк йăл
Шанкрав сассипе йулат çӳçенсе.
Ку вичкĕн йантрак—ыра мар—усал,
Тăрат нумайччен йан-йан илтĕнсе.

* *
*

Каç. Тĕттĕм... Пытанна хĕвел.
Кушлавăш хушши çаплах-ха йантрат:
Ватти, çамрăкки, ачи-пăчи—шел,
Калла та малла чупат урамра.
Унта та кунта хурланчăк йĕрӳ,
Йаслав, çуйхашу, тĕслĕрен сас-чӳ...
Ак çак хушăрах çуналă лавсем
Пыраççĕ шуса хурал пӳрт умне;
Вилес пек вуртан çынсене вĕсем
Тиййеççĕ йатса—часрах килеле!

* *
*

Каçхи кавакшуçăм тӳпере сӳнсен,
Тинех лăпланат йĕни, çуйхашни;
Пĕчĕк чӳречелĕ хура пӳртсенчен
Курнат хăйçути сиксе чăлкăшни.
Етем сасси çук.
Тепле çеç, хăш чух,
Хупса питĕрен хапха-алăксем
Шалт-шалт! тукалаççĕ тăлăххăн, кичем...
Тепле, сайраран, урам варрипе
Пĕччен çын мĕлки иртет васкаса;
Вал, тăкăс йура хирсе утнипе,
Чĕриклеттерет пуша урамра.
Ура сассине хайар йытăсем
Сиксе хамлатаççĕ хапха умсенчен,
Виртленĕ пекех—вĕсен сассисем
Тапаççĕ калла вăрман хĕрринчен.

## III. ЙУНЛĂ МУНЧА ХЫÇÇĂН.

Каçхи тĕттĕме йерипен сирсе,
Хĕрӳсĕр хĕвел курăнат аран;
Çурт хушшисемпе шăхăрса, йĕрсе,
Хĕвеланăç çилĕ кĕрлет тапхăртан.
Лутра пӳртсенчен унтан та кунтан
Çăра шурă сĕрĕм тухат палкаса.
Ирех вăраннă анканă çăхан
Йал урлă вĕçет хыт кăранклатса.
Кантур „хăватне" курнă Кушлавăш
Пĕр чунсăр пайан ларат тĕмсĕлсе.
Хурал пӳрт умĕнчи лапсак ват чăрăш
Хуллен сулланат уса[1] вĕçтерсе.
Çак тĕксĕм йалта, Тукас варнеле,
Пер шăтăк кил-çурт тăрат курăнса.
Ун килкартинче, хапха йеннеле,
Пĕчик хура пӳрт ларат лăпчăнса.
Ку хăрăк кил-çурт—Итапай пиччен
(Хăй чухăн пирки—çурчĕ те черчен).

* * *

Итапай йачĕ вырăсла—Ласăр.
Анчах, пуп хунă йата йуратмасăр,
Килте урăх йат панă, тет, ăна,

---

[1] *Уса*—хĕлле йăвăç çине ларнă йур чăмакн.

Вара—Итапай тенĕ ку çынна.
Йаш чух Итапай йăвăрнех туйман,
Ун чух вĕт унта пуçлăхсем пыман.
Кам пытăр ун чух вĕсен йаљ йенне—
Таçти, улахри вăрман сĕмлĕхне?..
Вăл ўснĕ сĕмре кайăк пек шăппăн,
Çўренĕ маттур, луçă пек каскăн,
Çўренĕ ухата хĕлĕн те çăвĕн;
Ун çывăх туссем—ухă йе капкăн...
Старик Итапай çакăнти çĕре
Вырнаçнă ача чух, ашшĕпе пĕрле;
Ун ашшĕ Йартух—хастарлă хресчен,
Вăл куçнă кунта Çавал вурринчен[1]...
Тырпул пулмасан та, ĕçчен Итапай
Малтан хăйне хăй пурăннă самай:
Карташ тулли ун вĕркенĕ сурăх,
Ик-виçĕ лаша та улт-çичĕ ĕне...
(Выљăх тытмасан, ку çĕрте урăх
Нимрен усă çук хресчен çыннине.)
Çапла çав пулнă пирĕн Итапай.
Анчах та пурнăç ăнмаст ун пĕрмай:
Пурăна киле, сисмен вăхатрах,
Пушар пĕтерет унăн кил-çуртне.
Вăй çитнĕ таран чăтса, хăвăртрах
Лартат вăл çĕн çурт—кăмрăк вырăнне.
Çуртне лартсанах, пĕр-икĕ çултан,
Усал хурахсем хуплаççĕ ăна:
Пур пек лашине çула, вăрмантан,
Кĕтмен хушăрах кайаççĕ тытса.
Кайран туйанна пĕртен пĕр лаши,

---

[1] *Çавал вурри*—Çавал Атăла хутшăннă вырăн.

Тем чĕмерипе, ӳкет те вилет.
Ытти выљăхĕ, пĕр-ик çул хушши,
„Тухатмăш мурпе“ йăлтах хирĕлет!
Инкек-синкекпе Итапай пĕтет,
Йалан куљанса ун ăс те çĕтет.
Çавах та хуллен вăл çӳретчĕ-ха,
Майлатчĕ хăйех пур-çук пурлăха.
Ак хаљ, ĕнер кун, пурмиспа тийек
Ватса çĕмĕрни пĕтерет ăна.
Кун-çул тайăлсан çакланнă инкек
Йăлтах тĕп тăват йӳтенĕ çынна.
Ак хаљ вăл ĕнтĕ çак пĕчĕк пӳртре
Пайан ирхине асаппа вилет.
Ун ват карчĕкпе хĕрĕ—Кулине
Саспа кăшкăрса йĕни илтĕнет.

* * *

Итапай пиччен йышĕ пысăк мар:
Пĕр карчăк тата ик хĕрĕ анчах.
Хĕрĕсем чипер ун, айван хĕрсем мар—
Ашшамĕш йатне ӳснĕ ачапчах.
Пĕр хĕрĕ—Тайпи, тепри—Кулине,
Кӳреççĕ вĕсем йал-йыш илемне.
Тайпи—хаљ арăм, ачи те ун пур,
Вăл качча тухни çитет пилĕк çул.
Тайпи—чĕрĕ çын, ĕçчен те маттур,
Анчах çапах та çук çав вĕсен мул!
Ашшĕн ирĕкпе тухнă вăл качча,
Çапах каччине кайнă йуратса.
Каччи те унăн хăй пек чиперскер,
Йалтах, инçе мар—Чакка йатлăскер.
Анчах Чаккана, хунĕпе пĕрлех,

Хурал умӗнче хӗнерӗҫ ӗнер.
Кантур пуҫӗсем ӑна хӗрӗнсех:
— Ку пӗттӗр!—тесе туларӗҫ тискер.
Чакка та пирӗн ак ҫавӑн пирки
Вилес пек выртать пайан кунхине.
Ват ашшӗ вилет пулсан та, Тайпи
Унта кайаймасть, пӑхать Чаккине.

* *
*

Чакка ачалах йулнӑ тӑлӑха:
Ашшӗ вилнӗ чух—пулнӑ тӑххӑрта,
Амӑш вилнӗ чух—вунпилӗк ҫулта.
Тӑлӑх ҫамрӑклах курнӑ хурлӑха.
Тата унпала тӑлӑх пурнӑҫа
Йулнӑ пӗр шӑллӗ—нишлӗ Йатарин.
Ҫак шӑлнӗшӗн те ку ҫамрӑк пуҫа
Килет тӳсмеле талккишпе, тӗппин.
Ӳссе ҫитсенех, пӗр ҫирӗм тӗлне,
Авланнӑ Чакка—илнӗ Тайпине.
Анчах авланни пӗр-ик ҫул тулсан,
Кӗтмен тӗлтенех йалти пӗр пуйан
Чакка пурнӑҫне таптать ҫӗрпе тан,
Хаԓхи инкек те тухать ҫакӑнтан.

* *
*

Чакка йалӗнчех, чи йал варринче,
Пурнать пӗр куштан—пуйан Алапит.
Кун пек ҫын сайра Кушлавӑш йенче:
Никам умӗнче чакмасть вӑл пӗр шит.
Алапит паллӑ, ун йачӗ хайар;
Пурмис-тийек те унпа тус пурнать.
Мулне кура ун йыш те пӗчӗк мар:
Виҫ ывӑл, пӗр хӗр унӑн йал касать.

Пĕрре, тенепле, йал тĕлĕнмеле.
Куштан Алапит хăй те сисмесле,
Ун хăй савакан вăтам ывăлĕне
Чĕнеççĕ хăвăрт салтак службине.
(Салтак пурнăçĕ хĕн пулнă авал,
Ăна чухлама çитмест пирĕн хал:
Кайан салтака—иртет ĕмĕрĕ,
Калла киличчен шуралать çÿçÿ!)
Алапит, усал хыпара илтсен,
Сикет те тăрать мулне ĕненсе.
Пырать вăл хăвăрт вулăс кантурне—
Пылпа, мулĕпе çаврать тийеке.
(Кунта пĕлмеле ĕлĕк мĕнлине:
Камра выртнă-ха леш тĕп кĕнеке?)
Тийекĕ вара, парне туйанса,
Ĕçе „тÿрлетет“ хăй пĕлнĕ майпа:
Алапит ывăлĕ йатне хуратса
Çырать Чаккана, тĕплĕ ăслайпа.
Çампа та ĕнтĕ пĕр хÿтсĕр Чакка
Кĕтмен тĕлтенех кайать салтака.
Кайать вăл, çапах нумай пурăнмасть;
Йутри хыт пурнăç ăна хавшăртать:
Ик çул пурăнсан, вăрах чирлесе,
Килет вăл пуçпех аран силленсе...
Килте те чылай выртса хăрнăскер,
Чакка хаĕ çине чухăнччĕ питех.
Ик çул татайман куланай пекскер
Çапла майпа ун пухăннă текех.
Ак хаĕ, тамаша, тийекпе пурмис
Чакка кун-çулне пăхмарĕç нимскер:
Сан пур-и, çук-и (йал-йыш кур та сис!)
Хĕмлерĕç ăна, пĕтерчĕç ĕнер.

* * *

Тискер ĕç пулни иртет пĕр ерне.
Часах манас çук-ха усал ĕçсене...
Çапса хĕненĕ çич-сакăр çынтан
Ик-виçĕш вилеççĕ ерне хушшинче.
Пĕр тăкăс сив кун... карлат сĕм вăрман.
Курак кăраклат вăрман хĕрринче.
Çанталăк питне шăн пĕлĕт карат—
Имшер хĕвеле витсе хупăрлат.
Çак кун ак, каçпа, хĕвел анайсан,
Чакка, вăй-халĕ самай пек туйса,
Хура пŷртĕнче пĕчченех, аран,
Нар сакĕ çинче ларат тайăнса.
Ун пĕчĕк çемйи пайан килте çук.
Виç кун ак çитет Итапай вилни:
Пайан ак, хунĕ вилни виç кун чух,
Ана асăнма кайнă ун çемйи.
Çампа та пайан, улах сехетре,
Çаврат вăл пуçне иртнĕ ĕçсемпе.
Çапла ларнă чух, сисмен те Чакка,
Пырат ун патне старик Тевенеш.
Ку паттăр ват çын—хисеплĕ йалта;
Ун çуҍ те чылай, пĕр çитмĕл тĕлеш,
Анчах вăл хĕрŷ, утат-ха маттур.
Сухаҍ ун сŷс пек, варкăшат шап-шур...
Пŷрте кĕрсенех хыват çĕлĕкне,
Каштт-кашт шалкалат çут пуç тŷпине.
— Ман килес,—тет те малала утса,
Ват çын сассипе ыйтат Чаккаран:
— Мĕнле сывлăху, самай-и, Чакка?..
Шеллетĕп хыр пек йака шăмшакка!

Чакка:

Самай пек пайан... Анчах та темле...
Те чĕрлĕп ĕнтĕ... те тен вилмеле...
Ех мăшкăл, мăшкăл! пăх-ха, мучей, вырт!
Нимскер тума çук: шăлусене çырт!..

Тевенеш:

Самай пек пулсан чĕрлен-ха еппин;
Турра тавтапуç... хăрамали çук!..
Сăмах ман пурччĕ. Калап ĕнтĕ тин,
Калам-ха сана, пўртре уллах чух.

Чакка:

Каласам, кала—
Мĕскер-ха апла?..

Тевенеш:

Вăт, Чакка ачам,
Итле, ак калам:
Ес хаљ тўсекен пур инкек-асап
Мĕнтен пулнине еп тĕппех курап...
Çарта пулман пулсан—ес чирлес çук;
Сыв пулнă пулсан, куланай пекки
Çапла çултан çул йулса пырас çук,
Патак та пулмастчĕ халĕ ун пирки...
Салтакне кайрăн каймас çĕртенех.
Еп витĕр пĕлтĕм ку вăрттăн ĕçе:
Пĕтерчĕ сана хамăр йал-йышех—
Алапит, анчăк, турĕ ку ĕçе!..
Усал инкекĕн кăкне курнипе,
Тăртаннă Чаккан алли-урисем
Тăрр! туса илчĕç шăнăр туртнипе.
Шăнк хытса ларчĕç хăмăр куçĕсем.
— Чăнах-ши вара ку?..
Чăнах-и? Ну!.. ну!..—

Тесе пырат̆ вăл сăмах хыçĕнчен.
Тевенеш тăхат̆ хăй пĕлни çинчен:
— Чăнах пулмасăр...
Еп çын—суйасăр...
Еп хамçке илтрĕм... Текей патĕнче
Леш кĕр, чўклеме ĕçки ĕçнĕ каç,
Çавскер ўсĕрпе, кĕреке хушшинче
Ларат̆ мухтанса, ех, ан та калаç!
— Кам пур ман пекки!—тет,—
Ампар тулли тыр, пыл-çу ишĕлет...
Пурмис та, пуп та—сирĕншĕн çĕлен!
А маншăн вĕсем—ыр туспа пĕрех;
Çампа хут̆ хăçан, инкек-мĕн çитсен,
Йуман пек тăрап епĕ тўп-тўрех!
Мул вăл—çын турри,
Етем—ун чури...—тет.
Мухтанчĕ чылай. Вара Текейе
Кăшт пăшăлтатрĕ хăлхи патĕнчен.
Еп сисрĕм унтах... еп те вĕт чейе.
Кайран Текейрен ыйтрăм ун çинчен.
Вара вăл тĕппех каларĕ çакна:
Хăй ывăлђ вырăнне йанă, тет, сана!..
Анчах—ан шарла!—тет, турран килеш...
Текей вĕт ун тус...—терĕ Тевенеш.
Чакка:
Ых, есрел çынни!..
Йепле сывалам...
Пуйан çын кулли
Тума кăтартам!..
Тевенеш:
Çапла, ун пирки есĕ хĕн куран...
Мăнланнă чăваш—чăвашах çийет!

Пурмис та, пуп та—шуйттанпа тăван
Вăл пур—вĕсемпе ĕçет те сикет!
Ну, шăллăм Чакка, кăна ан манах...
Ĕç пурчче. Кайам-ха ĕнтĕ васкасах...
Сывалччĕ!..—тет те Тевенеш, кайат.
Пăлханнă Чакка пĕчченех йулат.

Чакка хаљ анчах пĕлейни çинчен
Кăшт сиснĕ пек пулнă ăна çийĕнчех.
Анчах, Тевенеш сăмахне илтсен,
Ку чăн пулнине ĕненет тинех.

## IV. ПĔРРЕ, ÇУРХИ КАÇ...

Тăманлă, тĕксĕм сив хĕл кунĕсем
Ак карĕç иртсе—çитет çуркунне.
Карти-картипе кайăк-кĕшĕксем
Килеç кăнтăртан Кушлавăш йенне.
Çара çам вăрман каллех тумланать—
Пур кайăксене витсе хӳтĕлет;
Шур хуран çинче куккукĕ куклать,
Семлĕх варринче шăпчак треллелет.
Кушлавăш йалĕ те, варанна пекех,
— Çу çитрĕ!—тесе шавлать майĕпе.
Ĕçчен хресченсем, йурсем пĕтсенех,
Пуçлаççĕ сарма хăйсен уй çĕрне.
Хавас çуркунне çитсе тăнине
Туйать-мĕн пурте—мĕн пур чĕрĕ чун.
Кушлавăш сынни ăшчик-чĕрене
Варман хушшинче уçать кунран кун.
Чакка та ĕнтĕ сывалать хуллен:
Ӳт-тир йусанать, суран тасалать.
Çӳрет чиперех, ĕçлет йерипен;
Çурхи акана та хăйех вăл тăвать,
Анчах, сывалса çитнĕ пулин те,
Усал синкере Чакка манаймасть;
Иртнийĕ çеç мар, малашнехи те
Ăна хăратать, ним канлĕх памасть.

Малала пĕр шиксĕр пурăнас тесен,
Куланай татма укçа тупмала.
Çампа та кăçал кĕре çитиччен
Улт-çичĕ тенкех тупса хумала.—

* *
*

Çу кунĕ иртсе тӳлек каç пулаť,
Кушлавăш йалĕ хавассăн сывлаť.
Каçпа пур çамрăк хăпаť урама.
Пуçлаççĕ вĕсем йала чун пама.
Урам вĕçĕнчи симĕс çеремре
Йаш-кĕрĕм йурри шăнкрав пек йанраť.
Хастар йур кĕвви тӳлек сехетре
Йĕри-тавралах шăранса йухаť.
Шап-шур чечекпе тумланнă çĕмĕрт
Вăрман хĕрринчен ыр шăршă сараť.
Çурхи илемпе чĕрĕлнĕ ĕмĕт
Малашлĕх йенне чĕнсе хаваслаť.
Çак каç ак Тайпи хăйсен пӳртĕнче
Пĕчĕк ачипе лараť йăпанса;
Ачи—Иљушша—амĕш çумĕнче
Пĕр хуйхă туймасăр пуплет çуйхашса.
Чакка килте çук.
Кичем вăл çук чух.
Ерне ак çитет, вăл кӳршисемпе
Кайсаччĕ лава Шупашкар йенне...
Унтан çуркуннех пĕр хуçа килсе
Чĕр тир, ăвăс, пыл пухсаччĕ илсе.
Хаљ çав тавара улт-çичĕ лавпа
Кайна тийесе вырăс хуçапа.
Лава кайансем (Чакка та пĕрле)
Пулнă таврăнма тăват кун çинче.

Ак халӗ—ерне!—Килмеҫҫӗ темме...
Ӳкеҫҫӗ хуйха вӗсен килӗнче.
Тайпи те ҫампах ак ҫак каҫхине
Хура пӳртӗнче ларат̆ тӗмсӗлсе.
Йурӑ сасси ҫеҫ ун тӗттӗм пӳртне
Парат̆ чӗрӗ чун, кантӑкран кӗрсе.

* *
*

Анчах ак кӗҫех йурӑ чарӑнса,
Вайӑри ҫамрӑк чӑл-пар саланат̆.
Унтан Йатарин те часрах, хыпӑнса,
Хӑйсен кил йенне ҫерҫи пек чӑмат̆.
Йатарин килте. Кӗрет вӑл пӳртне.
Кӑҥ-каҥ пӑхкалат̆—курат̆ инкӗшне;
Шур шӗлепкипе тӗрлӗ халатне
Хыват̆ те ҫакат̆, пуҫлат̆ пуплешме:
— Инке, теп, инке! ҫӳҫенчӗк хыпар
Илтрӗмӗр хаљ ҫеҫ епир вайӑра.
Хаљ ҫеҫ Хумпуҫрен килекен Йуксар
Каларӗ пырса: малти рашчара
Темле етемсем...
Хӗҫлӗ-пӑшаллӑ, тет, пурте хӑйсем,
Выртаҫ, тет, канса ӗшне варринче...
Ик-виҫ каҫ ҫавсем Хумпуҫ уйӗнче
Хупланӑ, тет, шалт хӑшпӗр йалсене...
Хаљ ак кунталах тухнӑ, тет, килме...
Хӑруш ку капла!..—
Калат̆ Йатарин хумханчӑк саспа.
— Тур ҫырлах анчах,
Тем курас татах!?.
Камсем-ши вӗсем?!—тейейрӗ Тайпи.
Усал хыпарпа ҫӳҫенет чӗри.

Нумай та тӑмаст—хапха уҫӑлат...
Йатарин шӑлт-шалт! пӳртне питӗрет.
Анчах, никам мар—Чакка таврӑнат,
Ун ырнӑ лаши аран сӗтӗрнет.
— Ак, ҫитрӗ пичче!.. Тинех хайхискер...
Еп леш хурахсем пулђ тесе темскер...
Лаша тӑварас... лӑштах пултӑм тин,—
Тейет те сикет тула Йатарин.

* *
*

Чакка ак пӳртре. Урине салтса,
Часрах вырнаҫат сӗтел хушшине.
Тайпи, уйран ӑсса, тип ҫӑкӑр касса,
Апат хатӗрлет Чаккийӗ умне.
Тата, ҫул ҫинчен, шӑмшакка кайма,
Ӑсат вӑл сӑра пӗр пӗчӗк чӑмна...
Йатарин кӗрет лаша тӑварса.
Тайпи тараватлӑн хурат ак ыйтса:
— Мӗнле-ха, Чаккам, ҫӳрерӗр нумай?..
Хӑрарӑмӑр епӗр... кӗтетпӗр пӗрмай...—
Чакка пуҫне кӑшт сулласа илсе,
Хуллен тытӑнат сӑмахне сӗрсе:
— Ну-и, хӑйамат...
Хуплантӑмӑр шалт!..
Лава тытакан—вӑл тӗп хуҫи мар,
Хуҫи хӑй лере... Хупласҫӗ ҫынна!
Лав хакӗ пирки кайрӗҫ кутӑна.
„Сум та пиллӗкех[1] тытса“, тет, вӑрҫат,
Лавран ҫирӗм пус катса хӑварат.
Вара, хай хуҫи патне кӗтӗмӗр.

---

[1] *Сум та пилӗк пус*—30 пус.

Анчах унта та тĕнкевлентĕмĕр...
Тапукпа Мики—мулкачпа пĕрех,
Çав хуçа патне такки кĕмерĕçех.
Вĕсем йалта çеç маттур та хайар.
Вăт ес вĕсене ĕçе шанса йар!
„Ес кĕр те ес кĕр“ тесе тавлашса
Сехет иртрĕ пулĕ, тăраççĕ хытсах.
Хуçин тарçи пур—кĕртмест, тамаша!
Çапах хам кĕтĕм унпа çапăçсах...
Ах, çурчĕ таса-а-а!.. Хуçи, тачкаскер,
Ларать саралса. Пăхать хăй тискер!
Калап шалăпа. Хăтăрма пăхать:
„Çитет вăтăр пус!“—тесе кăшкăрать.
—Тархасшăн,—тетĕп,—чунран йăлăнап,
Сăсар-тилĕ тирĕ нумай пирĕнте...
Пуçтарăп саншăн çак çитес кĕрте.
Уçсам кăмăлна...—терĕм те, хуçа
Тинех çемçетет хайар пит-куçа.
„Йурать... ыйтнинех сире еп парап...
Анчах пĕр-ик кун ĕçлĕр ман патра;
Складран таварсем турттарма йарап.
Кашни лав пуçне вуншар пус вара.
Кайатăр?“—терĕ. Йӳнрех те, мĕн тен?!
Ĕçлерĕмĕр вара укça тӳличчен,
Виç кун,—тет Чакка, йăвашшăн кулса.
Унтан уйранне пĕр тапхăр сыпса,
Алне чавсалать сĕтел хĕрнерех.
Каллех ак пуçлать лери çинченех:
    — Ех, Атăл çинче!..
    Ăçта вăт тĕнче!..
Мĕн чухлĕ етем! Мĕнчул баржăсем!..
Баржисем çине тир, курăс, çăм, сӳс

Тийеççĕ чыхса... Бурлак мĕскĕнсем
(Выççи хуплат çав: кĕрĕшнĕ те—тӳс!)
    Туртаççĕ чуллăн,
    Йурлаççĕ хурлăн...
Ну, йăвăр пулас пурнăçĕ вĕсен:
Мĕн чухлĕ тӳсӳ, вăй кирлĕ иккен!..
— Мĕскер вăл—бурлак? Илтеп епĕ тин...
Баржи те темскер?—ыйтат Йатарин.
— Бурлак вăл—етем. Тулли баржсене
Туртаççĕ вĕсем мăн шыв хĕррипе;
Лаша вырăнне кӳлнеççĕ вĕсем.
Баржи—пысăк ким... тĕрлĕ таварсем
Пиншер пăт таран тийес ун çине,
Туртаççĕ вара, - тет Чакка шăллĕне.
    Хавассăн пырат пĕр вĕççĕр сăмах.
Çуркаç та çитет. Тулта сĕм... шăпах.

## V. ПӐКАЧАВ МӖЛКИ—ПАХОМКӐ.

Жил-йыш ҫыврайман. Чӗтрет хӑйҫути.
Пӗр Илюш анчах туртат ӑйӑха.
Ак халтӑрт! тӑват пӳртӳм картлашки,
Кив пӳрт алӑк те йари уҫӑлат.
Унччен те пулмаст, ак пӗр самантра
Улт-ҫичӗ ҫын харӑс кӗреҫҫӗ пӳрте.
Улт-ҫиччӗш те йут. Пурин те алра—
Кинжал йе пашал... Хӑйсем шӑп пурте.
Пӗри вӗсенчен—тӑлпан, ҫӳлӗскер,
Ҫӳҫ-пуҫӗ кӑвак, сухал пысӑкскер,
Тӳрех талтлатат Чакка патнеле.
Ӑна ҫурӑмран ҫемҫен лӳпкесе:
— Аван-и, хуҫа!.. Пиртен ан хӑра.
Хӑйҫути пуртан кӗтӗмӗр кунта.
А ну, ес, итле-ха: ҫук-и ҫимели
Сан мӗн те пулин? Пулсан—тӑрантар!..
Ху лайӑх пулсан—утаман алли
Сана тивес ҫук... Мӗн пур? Тавай, пар.—
Ыйтат вӑл тимлӗн, хӑйулӑн, чипер.
Чакка шӑнк хытса кайнине кура:
— Иваш!.. ӑҫта ес? Кала-ха, пӗлтер,—
Тет те утаман, пӑхат хай тавра.
Иваш тесенех—алӑк патӗнчен
Тухат чалт! сиксе пӗр ҫамрӑк чӑваш.
Утаман вырӑсла мӗн ыйтни ҫинчен
Калат чӑвашла маттурӑн ку йаш.

Сикме, хускалма пӗлмерӗ Чакка,
Йупа пек ларать сӗтел хушшинче:
—Апла-ха, тăнлап... ҫтан тупас ҫукка?!—
Тет вăл Иваша. Ҫанҫурăм ҫинче
Пăчăрр! вӗри тар тухать ун тапса.
— Ҫăкăр пур... Уйран... нимскер урăх
ҫук...
Камсем-ха есӗр?—ыйтать вăл хăйса.
— Хуть те кам пулар... Айта, есӗ тух!
Тавай, тупса пар, шăрттан йе сӗт-ҫу!..
Паран-тăк—час пар, хамăр лайăх чух!
Хирҫен-тӗк—пуҫна та ҫийӗпӗр, асту!—
Йунаҫҫӗ сиввӗн ик-виҫӗ ҫынни,
Хыҫран илтӗнет хӗҫ чăнкăртатни.
—Кусем—хурахсем, касаҫҫӗ!—тесе
Хавшак Йатарин пикенет тарма;
Тайпи те сасартăк йарать ҫихӗрсе,
Вăраннă Иљуш пуҫлать макăрма.
— Ей, чарăнăр! Шăп!.. Курмастăр-им—
кам?!
Ку ҫын—пуйан мар... Пуплӗп епӗ хам.
Хуҫа, ан хăра!—тет утаман пекки.
Пурте шăп. Тăпах хусахсен пулкки.
Чакка та аптрать, чӗнмест вăл нимскер.
Хай пысăк сухал пуҫларӗ пӗртем:
— Епир хурах мар—ирӗк хусахсем.
Ес епӗр камне пӗлес тен пулсан,
Нумай, пит нумай калас пулать ман.
Анчах ҫапах та кăшт калам сана:
Ӗлӗк аҫусем йуратнă ҫынна,
Пăкачав йатне ес пӗлетӗн-и?
Пӗлетӗн пулсан, еп ҫав ҫын мӗлки...

Нумай калаçма пирĕн вăхăт çук,
Пĕлтерпĕр епĕр сана ӳлĕм чух...
Çапла калаçса тăнă самантра
Шик! шик! шăхăртрĕç малти урамра;
Кĕçех хайаррăн „хурах!“ кăшкăрни
Таçта илтĕнет.—Çырлах!—тет Тайпи.
Улт-çичĕ хусахран ик-виççĕш часах
Чупаççĕ тухса кăшкăрнă сасса.
— Ей, ирĕк çынсем, сирĕншĕн пулсан,
Нимскер те шел мар килте мĕн пурри...
Пичке сăрам пур... кăмăла кайсан,
Лартам та парам сирĕншĕн йури,—
Йантратрĕ Чакка. Сикет вăл, тăрат,
Уçат нар сакне—пичке кăларат:
— Ак, мейĕр—сире!.. Ĕçĕр киленсе!
Анчах, çиме çук,—терĕ вăл хĕрсе.
— Аван ку, йурат,—терĕ утаман,
Ларат савăнса сĕтел хушшине.
— Ну, есĕ, Лавруш, чуп часрах, ан ман:
Тупăр çимели!—тет вăл йулташне.
Сӳсленчĕк, хăйпак, тăсланкă Лавруш
Тухат те чупат... Çӳçенчĕк, хăруш!

* * *

Килет тул çути.
Сӳнет хăйчикки...
Ак çак самантра уçă алăкран
Пĕр ушкăн хусах кĕрет ак пырса.
Пĕрин аллинче—сĕт-çу та шăрттан,
Теприн—йӳç пылпа тултарнă катка.
—Хурал сых тăрат—ларсах ĕçсе çи...
Кусем—типĕ аш, ку—пыллă йӳççи,—
Теççĕ хусахсем ват утамана:

Мӗн тупнӑ—йӑлтах параҫҫӗ ӑна.
Тинех хусахсен тӗнчи уҫӑлать:
Ташши те йурри вӗсен пуҫланать.
Умра пуррине ӗҫсе пӗтерсен,
Каллех ак шерпет тупрӗҫ кӳршӗрен.
Кӑвак утаман, хӑйпе йунашар,
Сӗтел хушшине лартать Чаккана.
—Манран ан хӑра, пупле—паллашар!..—
Тесе вӑл хавас пуҫлать халлапа.
Пуҫлать—ачаран улпут аллинче
Ӗҫпе пиҫӗхсе хӗн курни ҫинчен,
Вунсакӑр ҫултан Атӑл хӗрринче
Баржсем сӗтӗрсе ҫӳрени ҫинчен.
Калать вӑл: йепле Пӑкачав тухса
Атӑл таврашне кисретни ҫинчен;
Ҫирӗм ик ҫултах унпа ҫыпҫӑнса
Улпут таврашне ҫӗмӗрни ҫинчен.
Чылай каласан, вӑл хайарланса:
— Ҫук ӗнтӗ Пӑкачав! Ҫирӗҫ ун пуҫне!..
Анчах манас ҫук епир ун ӗҫне!..
Ак вун ҫул иртет... епир унтанпа
Йултӑмӑр виҫҫӗн ҫеҫ ак ҫак ушкӑнра;
Ҫӳретпӗр ишсе сӗм-сӗм вӑрманпа—
Сӑртан—Атӑла, Атӑлтан—Сӑра,—
Тет вӑл кӑшкӑрсах, пӳрте йантратса.
Тайпи ачипех ӗнтӗ лӑпланса
Кайса хӗсӗнет тӗпел кӗтесне.
Шик чун Йатарин, никам туймасла,
Чӑмать таҫтала—ҫӑва шӑтӑкне.
Ӗҫсе пуҫ хӗрнӗ сивлек утаман
Тӑрать ак тӑтӑш, утса ҫаврӑнать;
Вӗри шухӑшсем пусма пуҫласан,

Агал йуррине йантратса йарат.
Йе татӑш хӑйне ҫамкаран ҫапса,
Пӑхат урайне—калат кӑшкӑрса:
— Пахом! Ех, Пахомкӑ! пурнӑҫу начар.
Ирӗкшӗн тӑрса хӗсрӗҥ кун-ҫулна.
Йалсем, ҫӳт уйсем ӗнтӗ саншӑн мар.
Асту: вунӑ ҫул йӗрлеҫҫӗ сана!..

* * *

Хӗвел сӗм вӑрман ҫине хӑпарат.
Кӑвак утаман тӑрса кӑшкӑрат:
— Ну, ирӗк хусах!.. вӑхӑт хускалма:
Хура вӑрман ав пуҫлат хумханма...
Хӗвел те хӗртет—тапранӑр, ҫитет!
Сӗм вӑрман пире паҫӑрах кӗтет...

Пӗр ҫамрӑк хусах рожок кӑларса
Мӗкӗртет виҫ хут тӑп йал ҫинеле;
Нумай та иртмест, мӗкӗртнӗ сасса
Темиҫе хусах, ушкӑнпа пӗрле,
Йуланутсемпе пырат сиктерсе.
Пӗри—йал ҫынне пырат сӗтӗрсе:
Ку ҫын вӑл—Итрен, Алапит ачи,—
Кӑшкӑрнӑ ҫӗрле урама тухса.
Анчах ӑнмасса (тулнӑ ун шалчи),
Ӑна хусахсем тытнӑ-мӗн хуса.
Итрен йӗкӗте илсе ҫитерсен,
Кӑвак утаман тӗпчет ун ҫинчен.
Чылай тӗпчесен, йунат вӑл ӑна:
— Ай-йай, упӑте, ҫийетӗн пуҫна!..
Кай!.. анчах, асту, сыхлан малашне,—
Тет те вӑл, хуллен сӗлтет Итрене.
Хӑранӑ Итрен тӑрат шӑнк хытса.
Пӗр ҫӗтӗк хусах ик-виҫҫӗ ҫупса,

Тĕкет те йараӑ чĕтрен Итрене.
Итренĕ аран тĕрнет пӳрт çумне.

* * *

Чаккана тавпа ырӑ кун сунсан,
Йӑлтраӑ кӑшт çиçсе ватӑ утаман.
Унтан вӑл вӑшт-вашт лашине тытса,
Йаш çын пек çӑмӑл лараӑ утланса.
— Шӑллӑм, сывӑ пул!.. Пуçсем пĕтмесен
Куратпӑр каллех!—тет çеç вӑл хуллен.
— Ăçтала есир?—тесе пӑвӑртсан,
— Ăçта ирĕкрех—епир те унта!—
Теççĕ те вĕсем, хӑпаççĕ йалтан.
Лаша чуппи çех кĕрлет вӑрманта.

* * *

Хусахсем кайсан, йалти пур етем
Ватти-вĕттипех тухаӑ урама.
Пурин те пĕтми сӑмах-йумахсем
Вĕçеççĕ анчах таса усламппа.
Никамах та мар, усал таркӑнсем
Алапите çех шар[1] тунӑ ытла:
Мĕн пур укçине, пур мулне вĕсем
Тустарнӑ унне... тĕп тунӑ çапла.
Виççĕр тенкĕ кĕмĕл!—сахал укça мар,
Ăна вӑл ваккӑн пуçтарнӑ вун çул.
— Кĕтмен çĕртенех кун пек пысӑк шар
Йал-йыш тĕкмесен нимпе пулас çук!—
Чакка патĕнче ĕççе çинĕрен,
Алапит ӑнах хураӑ йунава.
— Çавах тĕп турĕ!—тесе ун çинчен
Вӑл шалӑп пама чупаӑ кантура.

---

[1] *Шар*—инкек.

## VI. ÇАПĂÇУ.

Сасартăк хусах-таркăнсем килсе
Улах йалсенче тустарни çинчен
Хир йен йалĕсем те тавралах пĕлсе,
Хăраççĕ хытах пулас инкекрен.
Алапит йышши муллă пуйансем
Çакна илтнипе чĕтреççĕ сиксех,
Вĕсен сăмахпе мĕн пур йал-йышсем
Синкерлĕх кĕтсе хăраç ахалех.
Усал хыпара пурмис та пĕлсе
Çарпуçĕ патне çырать ун çинчен;
Алапит елекĕ тăрăх ĕненсе—
Чаккана тытса пыртарма хушать.

* *
*

Алапит урать:—тўсми тарăху!..
Çилли сирличчен пухать вăл пуху.
Унта Чаккана тытса çыхтарма
Хĕрўлĕ сăмах пуçлать калама:
— Ей, халăх!.. халăх!.. пурăнăç хăруш...
Хуплаççĕ пире хусах-таркăнсем...
Куратăр пурте—йепле-ха ку хуш
Пурнатпăр чунсăр, тăван йал-йышсем.
Малала лăпкă пурнасчĕ тесен,
Часрах пурмисран пулăшу ыйтас;
Çав таркăн майлă Чаккана халех

Тытас та ҫыхас, кантура йарас...
Пурмис хăй хушаттă!— ҫавраттă Алапит.
— Хăрушлă!.. шиклĕ!..—теҫҫĕ сасăсем.
— Анчах Чаккана ма-ха есĕ пит...
Тăрнан ахалех?—теҫҫĕ хăшĕсем.
— Ара, шухăшлăр, тăрăнса-и ку?..
Чакка вĕт хăйех вĕсене чĕнсе
Пĕрле ĕҫсе ҫинĕ... Чакка вăл шăршу!
Вăл ҫын пурлăхпе ҫӳрет кĕвĕҫсе!—
Тесе ҫуйăхаттă ҫиллĕ Алапит.
Пĕчĕкҫĕ пуху тĕлĕнсех кайаттă.
— Таса ҫын пуҫне пылчăкпа ан вит!—
Кăшкăраттă пĕр сас. Пуху хумханаттă.
— Чим-ха, ачасем, чим-ха, хулленрех:
Чаккан айăп ҫук... ҫавăн пек тĕлеш:
Унта таркăнсем кĕнĕ хăйсемех,—
Чараттă шур сухал—ватă Тевенеш.
— Вăл ма таркăнсен пуҫне ăсататтă?!
Мĕн-ма ал параттă? Пĕрле вăл, йытă!
Ҫавах йал-йыша ҫаратма хушаттă,—
Ҫĕмрет Алапит, йантраттă вăл хытă.
— Чăнах, чăн та вăл хурахсемпе тус...
Тытас паттă[1] ăна... Ҫыхас! Ăсатас!..
Ҫийет йала вăл—усал шăши-йус!—
Теме пуҫлаҫҫĕ ик-виҫ уҫă сас.

* * *

Пуху кĕрлесе тăнă самантра,
Чакка унта хăй пыраттă те кĕрет.
Алапит туссем, Чаккана кура,
Караҫҫĕ ҫăвар,—Кушлавăш чĕтрет.

---

[1] *Паттă*—„пулат" тенĕ сăмаха кĕскетсе калани.

— Акă вăл килчĕ!.. Тытас та çыхас!
Пурмис хушат-тĕк, мĕн пăхса тăрас?!—
Чакка йеннеле хускалат пуху.
Вайланат пушшех шай-шай, çуйхашу.
— Мĕн-ма ку мана? Мĕнле айăппа?—
Ыйтат кăшкăрса тĕлĕннĕ Чакка;
Хăйне çыхланан Текейе вăйпа
Кисет вăл пĕрре, сирет айакка.
— Чим-ха, етсемри[1], елек хыççăнах
Çынна айăпсăр шыва йарас мар...
Еп хам вĕт пĕлеп,—çав таркăнсемех
Хăйне те ăна хырнă сахал мар,—
Тет те Тевенеш, утат малала.
—Мĕскер ес лăркан? Мĕскер ес куртăн?
Пуçу кĕçтет-им? Кай айăккала!—
Çĕмреççĕ хыттăн ик-виçĕ кутăн.
Анчах Тевенеш хĕрет ак пушшех,
Кĕрет вăл утса пуху варнерех:
— Тен, тепле, Чакка хур турĕ пулсан,
Ку Алапите тавăрни анчах...
Чакка ун пирки чăтнине курсан,
Пурте калăттăр: кирлĕ лайăхрах!—
Таврат Тевенеш хыттăн кăшкăрса.
Калатчĕ татах ĕçе хускатса,
Анчах вăл хĕрсе кайнине кура,
Ăна Алапит йарат те илет.
Ăшчик урнипе, пĕр çур самантра,
Вăл ват шăмшакка хуçса ӳкерет.
Шăлтах тĕлĕнет пухури халăх:
Такамшăн, темшĕн тăрас, тахăш май!?

---

1 *Етсемри*—ачасемĕр.

Чӑнах та ӗнтӗ Чаккийӗ лайӑх,
Ӑна ҫавӑнпа шеллекен чылай.
Тата Тевенеш сӑмах те, темле,
Часах ҫавӑрать Чакка йеннеле.
Ак Чакка, ҫӗмрен пек, старикс ҫӑлма
Алапит патне пырса ҫапӑнать;
Ӑна иртнишӗн тавӑрса пама
Тытать те илет, силлеме пуҫлать.
Анчах ҫак тӗлтех Итренпе Текей
Ларассӗ сиксе Чакка пуҫ ҫине.
— Ей, сирлӗр кунтан! Тӑр, есӗ мучей!..—
Тейейчӗ Чакка вӑрҫа пикенсе,
Ак сылтӑм алне вӗҫертсе илсе,
Пӗрех вӑл сулать хӑрах йеннеле:
Алапит ывӑлӗ—Итрен, вӑшт! вӗҫсе,
Кайать сирпӗнсе ҫерем ҫинеле.
Унтан Текейе, вирлӗнрех тытса,
Ик-виҫҫӗ кисет—ҫапать ҫӗр ҫумне.
Текех вӗчӗхен Текей, ӑнтӑхса,
Выртать чылайччен тӑн пӗтнӗ йенне.
Шӑртланнӑ Чаккан аллисем чулла.
Ак ӗнтӗ вӑл хаӗ пӗлмест чарӑнма;
Пуйан пусмӑрне—хирӗҫ пусмала,—
Ун унсӑр чӗри пӗлмест лӑпланма!
Вӑл акӑ каллех тимӗр алсемпе
Алапит пӳне тытса пӑркӑҫлать;
Текех хӗмленен хӗрӳ ҫиллипе
Тачка шӑмшакка туптама пуҫлать.
— Ес-и вӑл текех мана тӑрнакан?..
Ак парӑп сана ҫынна хуптарма!..
Ес-и вӑл ҫынна шыва йаракан?!
Вӗрен вӑт, акӑ, салтака сутма!..



Сана-а! акă! ак!—тесе Чакка
Туптаť те туптаť тачка шăмшакка.
Çак хутра Итрен, карсак пĕк сиксе,
Йăтаť те пыраť таçтан чĕренче,
Пуху хушшине вăркăнса кĕрсе
Сулаť вăл унпа Чакка пуç çине.
Вĕр-çĕн чĕренче хыттăн çапăнса
Шартах хуçăлаť хулпуççи çинче.
Нимскер пулман пек, Чакка чалт тăрса
Йараť те илет хайхи Итрене.
— Сана-и лекмен!..—тесе кăшкăрса,
Ăна çавăнтах пуçлаť лăскама.
Ак çак самантрах Текей тăрайса,
Сехри хăпнипе пикенет тарма.
Пуху—пур йал-йыш, аптранă йенне,
Кулаť те мухтаť Чакка вăй-халне.
Куштан Алапит сикме те хăраť:
— Ей, халăх, чарăр! Чарăр упана!
Çийет ачама!.. шеллетĕр ăна...
Ей, чарăн, Чакка!—тесе кăшкăраť.
Анчах та пуху йăлтах Чакка май:
— Ес ху пуçларăн!—теççĕ ик-виç сас.
— Ну, çитĕ, Чакка, патăнçке самай,—
Чĕнеççĕ часах, çавсемех пулас.
Итрен çемçелсе лăштăрах кайсан,
Чакка тин ăна йараť аларан.
— Ах, ман Йаратав ма пулмарĕ-ши?
Вăл пулнă пулсан, еп парнаттăм-и?!
Мĕн пур халăхне чăл-пар! тăваттăм...
Ку вăрă пуçне çыхса йараттăм...
Пурте Чакка май... есрел илтĕрех!—
Хирçет Алапит, тарăхса йĕрсех.

— Ес мӗн калаҫан? Мӗн сан халӑхпа!?—
Чараҫҫӗ ӑна пурте пӗр саспа.
Алапит шӑпӑрт,—ҫӗклет Итренне,
Ӑна ҫавӑтса утать кил йенне.
Антранӑ Итрен аран сулланса
Утать ашшӗпе, темскер ылханса...
Алапит ҫемйи—арӑмпе хӗрӗ—
Вӑрҫа тин сиссе чупаҫҫӗ хирӗҫ.
Ҫуйхашнӑ сасса Тайпи те ҫитсе,
Хайар Чаккине кайать сӗтӗрсе.
Тевенеш мучей, тинех ак темччен,
Калать пухӑва Алапит ҫинчен.
Чылай кӗрлесен, пуху саланать.
Пурте тӗлӗнсе пӗҫҫе шарт! ҫапать.

* *
*

Те йал халӑхӗ Чакка майлӑран,
Те чӑн та вара хӑй ӳкӗннипе,
Ҫак вӑрҫӑ иртсен, тепӗр ик кунран
Пырать Алапит Тевенеш патне.
— Тевенеш пичче! каҫарах туршӑн...
Ак ӗнтӗ ик кун ҫунать ман ӑшчик:
Тем ӑсран тухса, ухмах, тем муршӗн,
Еп ҫапрӑм сана! Ех, тӑрлик! тӑрлик!
Ес кирлӗ мара тапратса йани
Хуйхатрӗ пулас питех те мана...
Ах... ват ҫын ҫине аллӑма хуни
Ытла та ҫылӑх... Ех, ку пуҫ-тӑна!
Каҫарччӗ, тур пул, Тевенеш пичче,—
Ирӗлет Алапит мучей умӗнче.
—Мӗскер кирлӗ мар? Кирли ҫинченех,
Ху кутӑн пирки тапратрӑм ӑна...

Ҫан вăрттăн ĕҫне пĕлеп тĕппипех.
Чакка пачах та айăпсăр кунта,—
Таврат Тевенеш сивлеккĕн пăхса.
Нимскер пытарма май ҫукне курса,
Ларат Алапит чăркуҫҫи ҫине,
Чĕрине уҫса пуҫлат тилмĕрме:
—Тевенеш пичче! чăн, ман айăп пур,
Чаккана сутса кăтартрăм хĕн-хур.
Ҫампах пуљ хăй те, ҫakна сиссех пек,
Хупларĕ мана—турĕ мăн инкек.
Ҫавах епĕ хам каҫарап ăна.
Анчах есĕ те каҫарччĕ мана!
Ес—ватă, ыр ҫын, хисеплĕ етем,
Еп сан ҫиллўне мĕнле-ха тўсем?!
— Тин ан йăпăлтат. Тăр, апла ан лар!
Хама тивнĕшĕн сана ним те мар:
Чакка хĕнлĕ ҫын—каллех ес тăрнан.
Асту, ун пирки хăна ху хуплан!—
Питлет Тевенеш сасне чĕтретсе.
Алапит ура ҫине ҫĕкленсе
Каллех йăлăнат:—Тевенеш пичче!
Итле, ак епĕ—турă умĕнче:
Текех Чаккана тытма тăрас ҫук,
Анчах ҫапах та ăна ырлас ҫук...
Пурмис хăй килсен:—йăнăшнă, тейĕп.
Мĕнле те пулсан ĕҫе сўнтерĕп...
Ҫапла тунипе ес мана каҫар.
Леш—хай сăмахне хунтах тыт, ан сар.
Старик Тевенеш, кулнă пек пулса,
Витўлĕн, хыттăн хурат каласа:
— Алапит, асту:
Ахаљ хур ан ту!..

Пурмис-тийекпе, чиркӳ пупсемпе,
Чараймăп—йавăç. Анчах чĕрӳпе
Вĕсемшĕн ан пул чăн-чăн тĕрĕс тус:
Тултан шăлса çеç вĕсемпе ес кус!..
Йал-йыш çынни те вĕсем май пулсан,
Пĕтес пат̆ вара—мĕнле пурăнан!
Ыррăн сывлама пулмĕ апла май,
Хаљ те вĕсенчен тӳсетпĕр нумай.

Алапит:

Ара, шухăшла, хайар пуçлăха
Мĕнле-ха хăйас хуса кăларма?
Пырат̆ те кĕрет—ыйтат̆ вăл ĕçме,
Пĕлес пат̆ вара унпа килĕшме...

Тевенеш:

Ак ĕнтĕ хăвах чухла, Алапит:
Ес пĕр хуна çеç шутлан, вара, пит.
Чаккан та çавах. Тискер утаман
Пырат̆ те кĕрет. Ăна мĕн тăван?..
Вăл сан пуçлăхран пĕртте кайа мар:
Мĕскер вăл хушат̆—туртăнса ан лар!
Атту çавăнтах касат̆ те хурат̆.
Хусах вăл хайар, сан пĕлес пулат̆.

Алапит:

Апли вăл апла... анчах та мĕн-ма
Хистенĕ Чакка мана çаратма?

Тевенеш:

Йурат̆-ха сана çаратнă анчах,
Вĕлернĕ пулсан—пулаттăн шăпах.

Алапит (*шăлăнса*):

Ну, йурĕ унпа... тĕп пултăр ку ĕç:
Йал-йышăм усал,—пуçа та сутĕç...
Айта-ха, пичей, кайар ман пата,

Пăртакçă „тутли“ йулсаччĕ унта.
Йе, кăмăл пулсан, кунтах кÿртерем:
Ĕçер те пĕрре, пĕтчĕр сăмахсем...
Хе-хе-хе!.. Итле, Тевенеш пичче!
Ей, тем те курăн! Ех, ку çут тĕнче!

Тевенеш:

Пулмасть пуль ĕçсе, Алапит тиллĕм,
Шăлса, ĕçтерсе мана çаврас çук.
Ес ху та куран—çук-тăр ман çиллĕм.
Анчах еп санпа туслă пулас çук...
Пĕлен ес, мана пур йал хисеплет.
Йал ман сăмахран тухмасть те иртмест.
Пĕр çав хисепе, ĕçкĕ ĕçтерсе,
Çаврасшăн ес халь ху май илĕртсе.
Кайах, кирлĕ мар санăн шерпетÿ!
Пулинччĕ пĕрре ултавсăр чĕлхÿ...

Алапит (*урса*):

Мĕнле вăл хисеп?! Пĕлместĕп ăна...
Питех хирĕçсен, палла ес мана:
Ес мар йал хуçи,—хуçи ак вăл—ку!..
Чакку-мĕнĕпех ăсатăп, асту!—
Сасартăк хăйне кăкăртан чышса,
Лăс-лăс вăл силлет хура çÿç-пуçне,
Мăкăльт çавăрать хура куçсене,
Тухать те кайать алăка чышса.
— Кайах!—тейейчĕ шур пуçлă старик.
Сикмерĕ пулас ун пиçнĕ ăшчик;
Ачин ачисем çеç, шикленнĕ йенне,
Тараççĕ чупса тĕпел кĕтесне.

## VII. ТĔШМĔШЛĔХ.

Уйар, шăрăх кун...
Чăмат сулхăна мĕн пур чĕрĕ чун.
Анчах, унта та ларса тăнă чух
Шăна çинипе нимпе канма çук.
Усал купăсла нăйкан ўпрене
Кăштах та пулин хуса кăларма,
Лаçри, пўртсенчи вучах тĕпсене
Тултарнă çўп-çап сĕрĕм палкатма.
Тайпи те пайан хура пўртĕнче
Ларат чыхăнса сĕрĕм ăшĕнче.
Ларат вăл, шырат им-сумлăх йĕрри;
Ачи чирлĕрен çунат ун чĕри.
Ачи, Илюшша, темрен, хăвăртах
Вĕри тытнипе ўкет йăвăрах.
Пайан ир чипер çўрекен ача—
Вилес пек выртат аран пашкаса,
Çири кĕпи ун кăвак улача—
Лачкам шыв тăрат, вĕри тар йухса.
Синкер чир-инкек çитсе пуснă чух,
Илюшăн ашшĕ—Чакка килте çук.
Виç кун ак çитет, вĕсем шăллĕпе
Кайсаччĕç тaçта—чĕренче чĕлме.
Тайпи, пĕчченскер, хытах шикленсе,
Чĕнет васкасах йалти вĕрўçе.

Вӗрӳҫӗ-карчӑк, чире тишкерсе,
Часах пуҫӑнать им-сумлас ӗҫе.
Сывмар ачана ҫаврать вӑл виҫ хут:
— Ку чир кӗлӗрен... Йӗкӗс кӗллинчен.
Асту, ан пултӑр каллӗ-маллӗ шут,
Халех чӳклесе хывмала каҫчен,—
Тет карчӑк. Вара, курка шыв ӑсса,
Вӗрет вӑл шыва, сурать, пӑтратать;
Алӑк хӑлӑппе каштасем ҫуса,
Пӑтранчӑк шыва Иљуша парать.
Тайпи, ун амӗш тата Кулине
Туса тӑраҫҫӗ вӗрӳҫ хушнине.
Хуллен шӑвӑнса иртет ик-виҫ кун...
Иљуш ак пушшех ҫунать мӗскӗн чун.

* * *

Ик кун ҫинче тин, каҫа хирӗҫле,
Чакка шӑллӗпе ҫитет вӑрмантан.
Иљуш чирлӗрен, ӑш ҫуннипеле,
Вӗсем чӗмсӗрех пулаҫҫӗ малтан.
Унтан Йатарин хускалать тӑрук,
Калать пиччӗшне:—Кӗлӗрен мар... ҫук...
Чим-ха, ку инкек йӗрӗхрен мар-и?!.
Астурӑм епӗ: пӗрре вӑл йури
Хӑпарнӑ йӗрӗх ампарӗ ҫине,
Темскер, хушӑкран пӑхать ун ӑшне.
— Еп йӗрӗх курап!—тет хӑй йӑлкӑшса.
Нимпе те анмасть пырса хӑвиччен,—
Терӗ Йатарин хӑйаккӑн пӑхса.
—Ҫырлахтӑр анчах! ма ес, ывӑлсам,
Хаљччен ун ҫинчен пире каламан?
Пӗлмен пиркийех пӗтетпӗр ку кам!

Ма карăр унта?—пăвăртаť Тайпи.
—Пĕлетĕр, нихçан йулмасť вăл манран.
Кайсаттăм уйа... вăл пычĕ хыçран.
„Йулатăп“, терĕ уйа тухнă чух.
Пăхап кайала—чăнах Илђуш çук!
Калла килнĕ чух курап хайхине,
Выртаť шаккаса ампар тăрринче,—
Тет те Йатарин, лараť сак çине.
— Çампах пулђ апла...—тет Чакка кўтсе.
— Ех, ку ачапча!.. Çавăнтан апла.
Пĕлмен пиркийех тем те курмала!
Йĕрĕх ампарĕ çавтер вăл хайар,
Патне пырсан та унтан ырă мар.
Хуçи ун, Çатăк, вилни вăтăр çул.
Шăпах вăтăр çул ун алăкне уçман.
— Ех, ну, Йатарин, пăртак ăсу пул,
Мĕнле ун çинчен шăл çыртса пурнан?—
Тет Тайпи амĕш—хыткан Иťукка.
— Чăнах, еп маннă...—терĕ Йатарин.
Нимскер те чĕнмест ăш кўтнĕ Чакка.
— Нухрат тенкисем тупасчĕ, еппин...
Ах, чим-ха, Тайпи, шултра нухратсем
Ман пурччĕ килте... кайам еп илме.
Вĕрўç имлени тухмарĕ ку тем!—
Тет те Иťукка, чупаť хăй килне.

* * *

Тĕшмĕш Иťукка кайнă хыççăнах
Пĕр тапхăр шăпăрт хура пўрт ăшчик.
Тайпи вырнаçаť ачи çумнерех;
Ун пичĕ çинче—пĕр канăçсăр шик.
Хавшак Йатарин, айăплăн туйса,

Выртат̆ лӑпчӑнса хӗрт-сурт кӗтесне.
Ӑш ҫуннӑ Чакка, пӗр сассӑр тӑрса,
Пӑхат̆ Илъушне—выртат̆ вӑл сикми...
Ак ҫак самантрах—шӑт-шат! тӑвайса
Ҫурлат̆ кив маччан хӑрӑмлӑ кашти.
—Ех, ку—ырра мар... инкек!—тет Чакка.
— Инкекӗ умрах... Виҫӗм кун ҫапла,
Хура чӑх хыттӑн, ҫунатне ҫупсах
Автан пек авӑтрӗ... Вӑл та усаллах!
Ҫук ҫав, чӗрлеймӗ,—куљанат̆ Тайпи.
— Темле ҫав, темрен,—пуҫларӗ Чакка,—
Ахаљ те, ку хуш, йӑвӑр самани.
Ӗнер еп илтрӗм: хир йенче, пат̆кка,
Ҫӗмрет, тет, темле, мурла хайар чир.
Кипек уйӗнче ҫынни-выљӑхпех
Хирет, тет, ҫав чир... Тур, усала сир!
Епир анчах мар,—мӗнчул йӗрӳ... ех!
Пурне те шеллеп,—тет Чакка хуллен.
Халлап хушшинчех ҫитет Ит̆укка,
Ун ывӑҫ тулли—нухрат тӗрлӗрен.
Каллех ак чӗнмест, шӑп пулат̆ Чакка...
    Татах виҫӗ кун иртет йерипен.
Чӳклес, кӗл-кӗллес, хывас тӗлӗшрен
Виҫ кун хушшинче пӗр турӑ йулмаст̆,
Анчах пӗри те ҫаплах ҫырлахмаст̆.
    Куллен им-сумпа муталанӑран
Пӗчӗк Илъушша тертленет нумай.
Ӳт-тир хӗрелсе,пырӗ шыҫнӑран,
Уйӑх иртсен тин сывлат̆ вӑл самай.

## VIII. ИКĔ ЙУНАВ ХУШШИНЧЕ.

Ĕçç и умĕсем...
Пĕрре çухалнă хусах-таркăнсем
Çитеççĕ каллех Кушлавăш йенне,
Тухаççĕ куллен улах йалсене.
Пуйан килсене хăйулăн кĕрсе
Ыйтаççĕ вĕсем ĕçме-çимели.
Кам хирĕç тăрсан, хытах хĕмлесе
Сехре хăптараççĕ. Çук çăв чĕнмели!
Йăлтах улшăнать тăп пурнăç йĕрки!
Пуйан Алапит те, хайарлăх пирки,
Тўсет чылайах ак çак кунсенче:
Пĕрре утаман хăйех хĕнесе
Кăштах вĕлермен ăна килĕнче.
Вара, çакăнтан, пуйан Алапит
Пылпа-çупалах чыслать вĕсене;
Хуть те ăçта пыр, хуть те ăçта çит—
Хăймасть вăл çиме Пахомкă йатне.
Анчах вăл çавах кунĕн-çĕрĕнех
Чĕри тĕпĕнче кĕтет пурмиса:
„Пурмис пулăшсан таврап пĕтĕмпех!“—
Тет хăй ăшĕнче, тем пек кĕвĕçсе.
Анчах пурмисĕ хаљ хăй те аптрать,
Йăла пыма мар, килте те хăрать.
Пурмис уйесрен ыйтать пулăшу,—

Çарпуçĕ йарат̆ çакăн пек çыру:
„Салтак-мĕн йама—вĕсем ман сахал.
Анчах сыхланма йарап хĕçпăшал...
Пит шиклĕ пулсан, Пукрав вăхăтне
Йарăп килекен салтак отрйадне“.
Кун пек йăпатни памаст̆ нимле хал.
Памаст̆ вăл канлĕх, хăйулăх—нимех.
Анчах хавшани пушшех те усал.
Çампа та пурмис „ĕçлет“ пикенсех.
Ак вăл çывăхри сутниксем патне
Йарат̆ час-часах çакăн пек приказ:
„Патша йачĕпе çĕкленĕр пĕр кас,
Хăвăр халăхпах Пахом шайккине
Ăсатăр тытса çарпуçĕ патне...
Ун пек тумасан—хăвăрах начар,
Пур пуçлăх йенчен сире аван мар...
Йепле те пулсан ĕçсе суптарас,
Вара тытмала“,—тет вăрттăн приказ.
Вăрман айĕнчи чăваш йалĕсем
Ик йенчи йунав хушшинче тăрса
Аптраççĕ питех. Чĕнмеççĕ вĕсем.
Алапит хăй те тăрат̆ чарăнса.
Анчах, ак йалти çара чухăнсем
Хусах ушкăнне, паллах, вашават.
Пăкачав йатне чĕртнĕ таркăнсем
Хĕн-хур çыннине хушаççĕ çунат.

* *
*

Хура кĕркунне. Çăнталăк йĕпе.
Ак кайăк хурсем, карти-картипе,
Киклаççĕ вĕçсе çут кăнтăр йенне.
Шуракăш кĕтӳ теваскат̆ хăй килне.

Ҫаралнӑ йӑлтах Кушлавӑш чӗрҫи:
Типет, сарӑхать ун симӗс витти.
Хурхух-пиҫен пуснӑ ҫуртрисем анчах
Лараҫҫӗ ҫаплах тӗл-тӗл хумханса,
Йе хӑмӑл ҫинчех, ыраш пек лачах,
Сӳсен-мачӑлта ларать кашласа.
Шурутлӑ васан ҫеремсем ҫинче
Мӗн пур выљӑххи ҫӳрет ирӗкре.
Йал-йыш сыннисем тӳлек кунсенче
Ватти-вӗттипех тӗрлӗрен ӗҫре:
Хӑшӗ вут-шанкӑ касса хатӗрлет,
Хӑшсем—кайӑкра, хӑш—авӑн илет.
Савкай мучи те куланай пухма
Тухать картсене шакӑртаттарса.

* *
*

Чакка та ӗҫлет йал-йышӗ пекех:
Вуник урапа ыраш кӗлтине
Хурать вӑл ҫапса сӳсенӗ-мӗнпех.
Унтан тытӑнать ухата ӗҫне.
Чакка ачаран, хӑй хуннӗ пекех,
Хура вӑрмана йуратнӑ чунран.
Вӑрман—уншӑн чун. Хӗлӗ-ҫӑвӗпех
Хӑй сывӑ чухне тухман вӑл унтан:
Ҫула ҫӑвӗпе—чӗлнӗ чӗренче,
Хӗлле, кӗркунне—чупнӑ кайӑка.
Ак хаљ те Чакка, кӗр кунӗсенче,
Каллех иленет хура вӑрмана.
Вӑл халӗ ӗнтӗ, сывалнӑранпа,
Хуйхӑ пуссанах тӑраймасть килте.
Хуйхи ун пысӑк: куланай татма
Ҫич тенкӗ патнех кирлӗ ҫак хӗлте,

Тем пек ĕçлесен те çав мăн укçана
Ниçта та, нимпе тупса илме çук.
Çампа та Чакка йалан вăрмана
Тухаť те утаť ăшчик çуннă чух:
„Сăсар йе тилĕ тепле çаклатсан—
Çавраттăм сывлăш çак кĕрте самай...
Тен, ак, кайăкпах ик-виç сум тупсан—
Ку пит те аванччĕ!“—тет вăл пĕрех май.
Çампа та Чакка йалан кайăкра,
Анчах кайăкне çаклатаť сайра.

* * *

Çитет сивĕ хĕл.
Чулланнă шăн çĕр курнаť-ха тĕл-тĕл.
Тăтăш—çил-тăман... вĕçет мамăк йур.
Варсем, сăртламсем шуралнă шап-шур.
Ак ку вăхăта хайар таркăнсем
Тепрер тапхăра кайаççĕ кунтан.
Никам та пĕлмест—ăçтарах вĕсем:
Те Кăрмăш йенче, те Улатăрта?
Чӳкуйăх çитсе тăнине кура,
Ĕçрен те пăртак пушаннă пирки,
Чăваш йалĕсем тăваççĕ сăра,—
Пуçлаççĕ хĕрсех чӳклеме ĕçки.

## IX. АЛАПИТ ЁҪКИ.

Уйар сивӗ каҫ.
Ҫӗн уйӑх кӑпка йурпа йӑлтрашаҭ...
Йалта—кӗр сӑри. Хӑшпӗр шӑтӑк лаҫ
Ҫаплах-ха ҫиҫсе сӑра йухтараҭ.
Ҫак каҫ Алапит хӑна пуҫтарсах
Кӗрхи мӑнтӑрпа ӗҫет чӳклеме.
Ун килӗ-ҫурчӗ, хӗвел ансанах,
Вӗлле пек сӗр-сӗр пуҫлаҭ сӗрлеме:
Хавас сасӑсем те ҫемҫе кулӑсем
Пӗр вӗҫсӗр, пӗр пек йантраҫҫӗ унта;
Йут йал хӑнисен лаши-ҫунисем
Карташ туллийех тӑраҫҫӗ тулта.
Алапит кил-ҫурчӗ вырӑсла манер:
Ҫуртсем ун шултра, ҫӳлӗ те чипер.
Хуралт ҫисене тавралах лап-лап
Чӗренче ҫинчен пустарнӑ шулап.
Ун пӳрчӗ катмар, йалта пӗр пӗччен
Ҫӗн май, шурӑла лартнӑ чӑсӑк пӳрт.
Ҫапла, Алапит—пуйан хресчен,
Пули-пулми ҫын—ан ту унпа шӳт!
Ҫампах ӗҫке те вӑл вӑйлӑ ӗҫет,
Вӑтӑр ҫухрӑмран хӑна чӗнтерет.

* *
*

Пӳлмексӗр, вӑрӑм, хура сӑнлӑ пӳрт—
Хурӑн хӑйӑйипе тӑраҭ ҫуталса.

Кӳрĕш хĕрачи—шур питлĕ Аҗтӳт
Унтах хăййине тăрать майласа.
Кайри кĕтесре, кăнтăрла йенче,
Тăпа çурти[1] кăшт çунса чăлкăшать.
Аран йăлкăшан çурта умĕнче
Чӳклеме пăтти пăсланса ларать.

* *
*

Пырас хăнасем пухăнса çитсен,
Кĕреке умне пырать Шерпике
(Шерпике—хуçан сар хĕрĕ иккен),
Пырать те калать хĕрĕнк ашшĕне:
— Атте, теп, атте! Лартас пуҗ апат...
Пуçлас çĕн пичке... шерпетне ăсас:
Хăшпĕр хăнасем йурласшăн пулас,—
Тейет Шерпике ăшшăн, тарават.
— Йурать, хĕрĕм, ларт... пуçла шерпетне.
Çапла пуҗ, карчăк, çиме те вăхăт...—
Тет те Алапит, пăхать ик йенне:
Арăмĕ килĕшет, хăнасем шăпăрт...

* *
*

Ик-виç самантран сĕтел çи тулли:
Вун тĕслĕ апат, сăра та шерпет...
Кăнтăр кĕтесре çунакан çурти
Пăчăх сывлăшпа аран вĕлтлетет.
— Тăрар пуҗ, ачсем, турра кĕлтăвар,
Чӳклев йачĕпе пиллĕхне ыйтар...—
Чĕнет уйăх пек шур пуçлă старик—
Хир йенĕ хăни—хисеплĕ Тепик.

---

1 Вăл вăхăтра чăвашсем çуртасене хăйсемех тăпа-рап (шăратнă ăвăсран) тунă.

Пӳрт тулли халăх тăрат шакăрах,
Тĕллеççĕ пурте кăнтăр кĕтесне.
Тепик, чи ватти, тăрат маларах,
Алапит тăрат ун сылтăм йенне.
Çири кĕрĕкне лăшт йӳле йарса,
Хăрах хул хушне çĕлĕкне хурса,
Шур пуçлă Тепик тытăнат кĕлле.
Йантрав пӳрт шăпах пулат ку тĕле.

Ей, пĕсмĕлле, çырлах!..
Турă, ан пăрах!
Алапит хăй кил-йышĕпе
Чӳклеме пички пуçласа,
Виç тĕслĕ тырпул сĕчĕпе
Чӳклеме курки тытса,
Ырă турă, сана асăнат, витĕнет.
Килнĕ хăнапа пĕрле:
Кӳршĕ-аршăпа, йалĕ-йышĕпе,
Пĕлĕш-тантăшпа асăнат, витĕнет.
Çырлах, турă, амин!
Ей турăçăм! Çура çитсессĕн,
Виç тĕслĕ тыррăма-пуллăма
Акма тийесе кайсассăн,
Усал-тĕселтен, синкек-сехметĕнтен
Сыхласамччĕ, упрасамччĕ, турă!
Ку сăмаха епĕ мар,—Алапит калат.
Ана çиве çитсе утне-тумне кӳлсен,
Шăрт касса тĕрен хăпартма пулин те
Парăсăнччĕ, турă!
Ку сăмаха епĕ мар,—Алапит калат.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

Кĕлтăват чылай шур пуçлă старик,
Пурин те лăштах çемĕçет ăшчик.
— Ну çитĕ, ачсем, ларар вырăна,—
Хушат вăл хуллен, кĕлле пĕтерсе.

— Ҫитетҫке,—терӗ Алапиг ӑна.
Лараҫҫӗ пурте хавассӑн ҫиҫсе.
— Чӳклеме курки!..—сӗнет Алапит.
Пурне те алла параҫҫӗ курка,
Шерпет-сӑрипе тултарнӑ курка.
Нимле сас-чӳ ҫук, шӑпах тулли пӳрт.
Пур пек ват ҫынна курка тыттарсан,
Каллех ак Тепик тӑмашкӑн хушать,
Чӳклев йачӗпе тулли кӑмӑлтан
„Ҫӗрӗҫ йуррине" йурлама калать.
Тӑраҫҫӗ кашӑл! Ваттисем умра.
Тӑсаҫҫӗ харӑс авалхи йурра:

Аки пӗр сухи тивлечпе,
Ӗҫер-и кӑна-а-а, ҫийе-ер-и-и,
Ӗҫер-и кӑна-а, ҫийе-ер-и,
Выҫар-и халӗ-ӗ, кула-ар-и...
Хурӑнлӑ ката хыҫӗнче
Ахӑрса ака тӑваҫ, тет,
Хура та вӑрман ҫумӗнче
Шӑхӑрса сӳре сӳреҫ, тет...
Ултӑ пӗр лаши акара,
Ҫичӗ кӗсри сӳрере...
Аки пӗр сухи тивлечпе
Ӗҫӗр-и кӑна ҫийер-ри...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ҫӗрӗҫ йуррийӗн аваллӑх кӗвви
Уҫнӑ тӗнӗ[1] витӗр йанрать тулала.
Вак ҫуртлӑ лутра чӑваш йал хушши
Чунран тинкерсех тӑнлать ку йурра.
Йурри пӗтсенех, хӑнасем каллех

[1] *Тӗнӗ*—тӗпел кӗтессинчи пӗчӗк чӳрече.

Ӑараççӗ харӑс харкам вырӑнне.
Тинех ӗнтӗ хаҙ, чӑрмав иртсенех,
Йурри те, ташши те тулаҭ пӳрт ӑшне.
Кӗрнек кӗреке—сарлака сӗтел—
Лараҭ пӑсланса апат-сӑрапа.
Хӗрарӑм кӗтесӗ—нар саклӑ тӗпел—
Сӗрлет те йантраҭ хавас йурӑпа.
Кӗреке пӗр йенче кӗслеçӗ Йуксар
Тӗнкӗлтеттерет кивӗ кӗслине.
Ӳсӗр хӑнасем мӑшӑрпа, вӑр-вар
Тӑраççӗ, тӗвеççӗ урай хӑмине.
Алапит хӗрӗ, кинӗ, ывӑҙсем
Хӑна хушшинче арканса кайса,
Майпе ташша та йурра шӑратса,
Çӳреççӗ текех сӑра куркипе.
Ак çак самантрах кукша стариксем
Сӗтел хушшинче сарӑлса ларсах,
Ним шав çук пекех йӗркелӗн, пӗртем,
Йумах-халлапа çапаççӗ çаплах.
Алапит, тулли çырӑ питлӗскер,
Хура çӳç-сухаллӑ, хура куçлӑскер,
Тачка пӗвӗпе сарӑлса ларса,
Кулаҭ, выҙатаҭ кӑмӑлне уçса.
— Ёçер-р-р, тӑвансем!—тет ак Алапит,—
Çаратрӗç... çавах аптрамӑп-ха пит:
Пин пӑт тырӑ пур, çирӗм пӑт пыл пур,
Кӗтӳпе сурӑх, ултӑ ӗç лаши...
Шур пӳрт тулли йыш,—ачамсем маттур...
Мӗн-ма куҙанас, ма ӗçес мар-ши?!
Кӑçал çич ӗне çӳрет картара,
Утмӑл купа утӑ çултӑм пахчара...
Хусах-таркӑнсем урӑх тивмесен,

Алапит пурнаҫ! Пурнаҫ вăл, пĕтмен!..
— Вĕçех ĕнтĕ, вĕç! Çавăнçке чĕлхи!—
Пӳлет ăна кĕç çумри карчăкки.
— Нимскер вĕçсе мар, чăн, утмăл купа!
Чăн!.. чăн! – хушаҫ вăл хавас сасăпа.
— Хе-хе-хе!.. утмăл купа тан!
Ман хĕрĕх анчах... ара, пахчу сан
Ытла та пысăк...хе-хе-хе!..–ехĕрет Текей,
Шавлаҫ те кĕрлет тулли кĕреке.

Алапит:

Пахча ман пысăк—шăп ик теçеттин...
Сан пĕчĕк пулсан, аслат ес, еппин!
Карта тытассах ӳркенетĕр çав.
Кам—çук, тет, хирçет,—вăл çемçе, йулхав.

Текей:

Йулхав та пуҫ те,—çук еп унпа мар:
Ытла выçăхсан—йалтан аван мар.

Тепик:

Ей-йай, тăвансем, сирте хаҫ аван.
Ав, пирĕн йенче çĕршыв хĕсĕнет.
Килейчĕ улпут таçтан, çăваран,
Чи ырă çĕре касаҫ те илет!..
Тата вырăссем кӳрет вăл хăйпе.
Каллех килет, тет. Турах вĕсемпе!..

Текей:

Чим, Куҫцав улпут, теççĕ-и ăна?—
Чĕрлех вăл çийет, тет, аллинчи çынна...

Тепик:

Кашни ернерех ун хресченӗсем
Тӑват кун ӗҫлеҫ улпутшӑн анчах.
Виҫ кунне аран илеҫҫӗ хӑйсем...
Васкавлӑ ӗҫ чух—ерне уншӑнах.
Ӗҫсемшӗн улпут пӗр пус та памасть.
Ӗҫрен пӑрӑнсан—чунна кӑларать!
Тата, мӑшкӑла, ҫав мур улпутах
Хӗрпе каччӑна хӑй мӑшӑрлатать.
Илемлӗ хӗре качча парсанах,
Малтанлӑх каҫсем унпа хӑй ҫыврать...
Йутри ват хӑна сӑмахне илтсе
Тулли кӗреке кайрӗ тӗлӗнсе:
— Ай, тур ҫырлахах!.. Ав ӑҫта хӗн-хур!
Ун пек пурнӑҫран мӗн кӗтмели пур!?
Апла пирӗнтен хӗнтерех вӗсен,—
Теҫҫӗ Тепике ик-виҫӗ йенчен.

Тепик:

Хӗнни ӗнтӗ пур. Анчах вырӑссем,
Хӑйсен улпучӗ ӗшкӗртсе-и, тен,—
Чӑваш ҫыннине ҫийеҫҫӗ ытла:
Таптаҫҫӗ уйра ӳсен тырпула...
Ҫав улпут йалне пырса та ан кӗр,—
Ватти, ачипчи витлет тем те пӗр...
Урам хушшинчех картлаҫҫӗ ҫулна,
Чипер ҫӗртенех переҫҫӗ чулпа...
— Улпучӗ хушать пуль... ахаль ма вӗсем
Пире тивмеле?!.—теҫҫӗ ватӑсем.

Текей:

Ех, вӑл улпутсем!.. татах вӑт темле:
Тата ик улпут килет, теҫҫӗ-ха...

Хаљ çеç ак пĕри пăхрĕ пĕр тĕле.
Хура çĕреçке шыраççĕ ытла!

Алапит:

Ей... лутра вырăс вăрман касать, тет.
Чĕлхе-çăвара çыртмала килет!

Тепик:

Начар ку, начар... Хĕсеççĕ каллах.
Вăтăр çул ĕлĕк çакна шутламан.
Вăрманччĕ тавра—пĕтет вăл часах,
Ак уй те йулмĕ каплах хăтлансан!
— Çултан çул ӳсет тӳлев-куланай...
— Лещ пуп таврашсем хĕсеççĕ хăй май!
— Çаплаçке, çапла...—теççĕ хăнасем,
Лапсак пуççене суллаççĕ хăшсем.
Кичемлĕ халлап пусасран пулас,
Хĕрĕнк Алапит тапратрĕ хавас:
— Ей-ну, тăвансем, чĕр пуç пурăнать!..
Ак, сывă пулсан, çула ман туйсем:
Итрен авланать, Шерпике кайать.
Анчах çывăхра çук-ха мăшăрсем...
Ну... тупăп çирĕм-вăтăр çухрăмран,—
Пуçлать Алапит урăх халлапа.
Кĕреке тулли халлап пынă чух
Тĕпел кукринчи çамрăк арăмсем
Йараççĕ йурра вĕçĕ-хĕрри çук.
Илемлĕн йантраç кĕсле хĕлĕхсем.
Тачка Алапит, халлапне чарса,
Ĕçки хăватне сăнама тăрать.
Курать вăл—ĕçки питех те паха,
Мăн пӳрт ăшчикки шавлать, арканать...

Хайхи—талт! сиксе, кĕсле кĕввипе,
Маттур йĕкĕт пек ташша çантарат.
Сиксе ĕшенсен, сăвлă йуррипе
Каллех кĕреке хушшине ларат.
— Ей-ну, куккамçăм, мĕн-ма шăп ларан?
Йурла-ха пĕрре авал йуррине!..
Йурру-сăввусем питех тутлă сан,—
Хистет Алапит Тепик-куккăшне.
Тепик, çутă пуç, туртăнсах тăмасть,—
Пĕр кивĕ йурра шăратма пуçлать:

Ан ух пуçна, лашам, кăвак лашам,
Инçе çулна çывăх тăвасшăн,
Ан тапăртав, лашам, ырă лашам,
Тĕпсĕр çырма урлă, ай, каçасшăн.
Ан сик, чĕрем, ан сик, ан та хумхан,
Хĕн пурнăçна ирĕк, ай, тăвасшăн,
Ан шухăшла, пуçăм, тек ан хускан,
Патша саккуњ урлă, ай, пурнасшăн...

Пуйансен йуррин çак нишлĕ кĕвви
Кĕрлен халăха шăп тăвать пĕр си.
— Ку йурра Илхун, Пăкачав пĕтсен,
Куççуљпе йĕрсе йурланă пĕччен,—
Терĕ ват Тепик. Кун хыççăн каллех
Халлап-калаçу кайать хĕрӳрех.
Пуçлаççĕ—таçти авалхи çинчен,
Пăкачав вăрçи... Пахомкă çинчен.

* * *

Ире хирĕç тин ĕçкĕ лăпланать:
Йал-йыш, кӳрĕш-кӳп киле саланать.
Йут йал хăнисем выртаç саланса...
Тулта автансем автаç шарлатса.

## X. ПУППА ТЕЧУК.

Хавасла ёҫкён иккёмёш кунё.
Шăп кăнтăр тёлне хăна пухăнать.
Алапит ÿсёр, вёҫет унăн чунё—
Пуплет вăл, йăлтрать, хавассăн йурлать;
Ăна ҫёклеме йут йал хăнисем
Пуҫлаҫҫё хăйсен хир йен йуррине.
Йантраҫҫё уҫҫăн Итрен сăмахсем.
Йуксар та ҫитсе тытать кёслине.
Сасартăк хапха кăрринк! уҫăлать.
Шерпике, хăна килет пуљ тесе,
Часрах кантăкран ÿпёнсе пăхать.
Анчах, кётмесле, кайать ҫÿҫенсе:
— Атте, тет, пăх-ха, пăх-ха хапхана,
Пуппа хай течук килеҫҫё, асту!..—
Тет вăл васкаса, вут пек хыпăнса.
Пÿртре пёр самант тухать пăлхану.
— Ах, чим... ăҫтаччё вырăс турри ҫав?
Ачсем! ей... илёр, сак айне кёрсе!
Ес, тух-ха хирёҫ, тух, тух, Йаратав!—
Хушать Алапит шыв пек чÿхенсе.
Йаратав—хуҫан уйрăлнă ывăљ—
Часрах вашкăнса тухать пÿртумне,
Чи кёҫён ывăљ—хурамша Йымăљ—
Лартать турăша хăйён вырăнне.

Алапит хăй те, шерпет тултарса,
Пупсене хирĕç тухмашкăн васкаť.
Арăмĕ, сисми, майпе йăпшăнса,
Тĕпел кĕтесне кайса вырнаçаť.
    Кĕреке ак пушах.
    Пӳрт ăшĕ шăпах...
Итрен хăвăртрах мăн çурта çутса,
Ăна çыпăçтарчĕ турăшĕ умне;
Чӳклев пăттине вăшт-вашт пуçтарса
Лартаççĕ часрах нар сакки айне.
Пӳрте пуп кĕрет, ун хыççăн—течук.
Йĕнрен тин тухнă упасем пекех,
Вĕсем иккĕш те мăклă тумсемпе, —
Хайар сивачи нихçан çыртас çук.
Урайваррине чарăнса тăрса
Çири тумсене хывса пăрахсан,
Пуппа мăн течук йупа пек хытса,
Пур хăнасене тĕсеççĕ малтан.
Унтан çăмлă пуп кĕтессе пырса,
Хăма турăша тинкерсе пăхаť.
Кĕçех вăл мĕшĕл çаврăнса тăрса:
— Сух-сух ту! Сух-сух! – теме тапратаť.
Течук, Алапит патне çывхарса:
-- Сух-сух ту, сана, Ӆоксандр хоçа!
Госпоť сух-сухас!..—терĕ кăшкăрса.
Пур пек хăнасем усаççĕ пуçа.
— Турра кĕлтума хушаççĕ вĕсем;
Тăрар-им, еппин, савнă хăнасем!—
Терĕ Алапит. Тăраççĕ пурте.
Пуппа мăн течук тăсаççĕ кĕлле.
Йурра мĕкĕрсе йурланă чухне
Вĕсен аллисем пĕлмеççĕ канма;

Йурланă чухнех пур хăнасене
Хушаççĕ виç хут ӳксе пуççапма.
Кĕлле пĕтерсен, пуппала течук
Лараççĕ кĕрсе сĕтел хушшине.
Сĕтел патĕнче пĕр хăна та çук—
Лăпчăннă пурте алăк кĕтесне.
— Ех ку, пĕтермĕш, мĕншĕн килчĕç-ши?
Ёçки пĕтсен хут йуратчĕ килме,—
Тесе хирĕçет хуçа карчăкки.
Кӳрĕш-арăшсем шăваççĕ килне.
Хăнисем кăмăл хуçнине кура,
Алапит хăй те имшерсе ӳкет:
— Кусем кĕтмесле килнĕ-мĕн, ара...
Чиркӳ хырçине пухма килнĕ, тет.
Епир ĕçнине пĕлтернĕ пулас...
Пĕлсен, веç, кунта вĕçтернĕ хавас,—
Калат Алапит кăшт пăшăлтатса,
Салхулă Тепик патне çывхарса.

* * *

Иртет пĕр сехет. Пӳртре урăхла.
Пур пек хăнасем пĕррĕн-иккĕнех
Пĕтеççĕ кайса унта-кунтала.
Алапит çемйи йулат пĕчченех.
Малтан тиркешнĕ пуппала течук
Хаљ ĕнтĕ айта—çăтаççĕ йăлтах!
Анчах пӳртĕнче никам ларма çук,
Кам пырса кĕни—тарат кайалах;
Течук хут кама тытат çулăхса—
Хĕрес çакнине пăвăртса пăхат;
Пуп, хăй çилхине салатса йарса,
Йалт та йалт! сикет, сăхсăхма хушат.

— Киремет вилнӑ—госпот пор!—тесе
Йантрат, кӑшкӑрат, „отчӗ наш“ йурлат;
Тепик старике кӗтессе хӗссе
Çумри хӗреспе çамкаран шаккат.

* * *

Каçа хирӗç тин, вил ӳсӗр пупсем
Ӳкеççӗ лапах кӗреке хушшине.
Анчах ку тӗле çук тек хӑнасем.
Çут пуç Тепик те шӑват кӳрӗше.
— Чӗнмен хӑнасем—йытран та усал.
Йӗрки-мӗн сахал...
Ӑнмарӗ ку пит!..
Пӗтерчӗç ӗçке,—хирçет Алапит.
Каç... Йаратав та çамрӑк арӑмпе,
Ачине йӑтса, утат хӑй килне.

## XI. ТУРĂ ЙАЧĔПЕ.

Чӳклев йачĕпе ĕçен хресченсем
Нимле мăн ĕçе тытмаççĕ питех.
Тухмаççĕ йалтан пур пек арçынсем:
Каçпа – ĕçкĕре, ирпе—ахалех.
Çанталăк сивĕ. Сывлăш тĕлĕрет.
Хĕвел тухаспа, хăйăсем сӳнсен,
Чĕренче витнĕ хура пӳртсенчен
Палкаҭ сăрă сĕрĕм,—йала тĕтĕрет.
Çак кун Чакка та хăйĕн килĕнчех,
Пӳртре, урхалăх вĕçлесе лараҭ;
Шăллĕ—Йатарин, алăк патнерех,
Саккăр çăпати хуçса калăплаҭ.
Тайпи тĕпелте йухтараҭ сăра.
Иљушĕ çаплах-ха ăшă ăйăхра.

* * *

Чаккан, вуттине ирех хутнăран,
Хура пӳртĕнче йӳçек сĕрĕм мар;
Маччи-çтенисем йăм хăрăмлăран,
Тул çутăлсан та, пӳртре çутах мар.
Тĕн чӳречине хупса ăш ансан,
Хура пӳртре те лармашкăн чипер;
Чакка çемйи те, çаплах ак пайан,
Аван сывласа, кĕтмест ним синкер.

— Пичче, ес пĕлсе-и: ĕнер каçпала,
Алапит хĕрсе ĕçме тапратсан,
Пыраť-кĕрет, тет, пуп течукпала...
Вара хăнисем пĕри те йулман, —
Пуçлаť Йатарин йăлкăшса кулса.
— Илтсе ĕнерех еп, — тет ăна Чакка.
Кулăшла халлап кайаť тапранса.
Ак çак сехетрех уçăлаť хапха.
Пăхаççĕ — хайхи пуппала течук,
Тата вĕсемпе — кутамас сутник.
— Мĕскершĕн кусем?! Нимĕн пĕлме çук!
Чĕре — шӳ-ӳ! тăваť, çӳçенет ăшчик... —
Кĕреççĕ пӳрте. Пупĕ чи малта:
— Здоровă, хоçа! — тет те вăл, часрах
Иртет тĕпеле, пăхаť таврала.
Нумай та иртмест, иккĕш харăсах:
— Ăçта сан икон? — теççĕ мăн саспа.
— Еп... икон илмен... еп чăваш тĕнпе... —
Пуçлаť тыттарма аптранă Чакка.
— Мĕскер-ха кирлĕ? — ыйтаť шиклĕхпе
Унтах тăракан Тайпи хыпăнса.
— Вырăс туррине ыйтаççĕ вĕсем...
Еп — çук теп. — Çук! — тет çыхланнă Чакка.
— Кунтах вăл, çӳлтех... халех ак илем, —
Тейет те Тайпи, уçаť пĕр сакка.
— Ах, ку хĕрарăм, пĕтерчĕ ухмах! —
Куç хĕсрĕ Чакка, кăшт пăшăлтатса.
— Çуках тенĕ пулсан — ырччĕ хамăрах...
Хаљ ĕнтĕ мĕн тес? — терĕ вăл çунса.
Хура хăмапуç сăнне курсанах,
Течук сăхсăхса çулăхаť ăна:

— Баҫушкă, асту, пăх-ха икона—
Куҫсем ун шăтăк! Мĕнле ку капла?!
Хăйсем шăтарнă пулмала ăна?!.
— Колдун! Киремет!.. Усал чĕпписем!..
Тамăк хураннех сире йамала!..
Мĕнле тӳсейнĕ госпоҫ, ангĕлсем?!
Хаљ сирĕн куншăн ĕмĕр ҫунмала...
Тавай-кă пăхас—пор сирĕн хĕрес?
Кил, сотник, халех пăхас, тĕрĕслес!..—
Ак пуп, мăн течук, чи хыҫра сутник
Тăраҫҫĕ Чакка умне пухăнса.
— Кăтарт хĕресне, тухатмăш! Ан сик!!!—
Теҫҫĕ Чаккана хĕсме тапратса.
— Хĕрес ҫухалнă... кайăр ҫăвана!—
Пăрнаҫ те Чакка, тĕкет течука.
— Тавай лешсене! Лешсене пăхар!—
Теҫҫĕ хайхисем. Тытаҫ Тайпине.
—Ҫухалнă... ҫук, ҫук!—ҫихрет вăл хайар,
Ҫапаҫ те сирет течук аллине.
Ак ҫак хушăрах хыҫри Йатарин,
Сентре ҫийĕнчен хĕресне илсе,
Ҫакаҫ сисмесле:—Ак пăхăр, еппин—
Хĕрес манăн пур,—тет вăл шикленсе.
— Вырăс тĕнпе-и? Мĕнле сан йату?—
Пăваҫ Чаккана пуппала течук.
— Йалта еп—Чакка, хут ҫинче Йакку.
Ҫапла йат хунă мана пĕчĕк чух.
Шыва кĕртнĕ те пурнап чăвашлах,—
Калаҫ хай Чакка хăйулăнтарах.
Течук, кĕсйинчен сар хут кăларса,
Чакка сăмахне кармаклаҫ ҫырса.

Пуп:

Тата ачу сан мĕнле тĕнпеле?
Тавай-ха, кăтарт,—пур-и ун хĕрес?

Чакка:

Вăл вырăс тĕнпе... хĕресĕ тепле?
Çаксаччĕ. Анчах ăçтан ман пĕлес?

Пуппа мăн течук чарчĕç куççене,
Лăс-лăс вĕçтереç вăрăм çÿççене:
— Тавай виçĕ тенкĕ! Тавай, халех туп!
Ес унсăр пĕтен, катăргă!—тет пуп.

Чакка:

Çук, çук, пуп мучи, ним те параймасп,
Пĕр пус та саншăн ниçтан тупаймасп.

Течук:

Мĕн-ма шăтаран икон куççене?
Мĕн-ма çакмастăр господ хĕресне?..
Виç тенкĕ саха-ал!.. Асту, памасан,
Çыратпăр халех—миçе айăп сан!?

Сутник:

Чакка, ну, чăнах, куншăн лайăх мар,
Каçарччăр тесен—мĕн те пулсан пар.

Чакка:

Тайпи! Йатарин! ах ку, тамаша!..
Кам пăсрĕ капла вырăс туррине?
Кун пек пуласса илмен те ăша!
Ех!..—тет те Чакка, ларăт сак çине.
Ак ку самантра пуппала течук
Пăвсах çитереç „виç тенке“ ыйтса.
— Чакка, вĕсенчен ахаљ йулас çук,
Парсам!..—тет сутник, пуп майлă тăрса.

П у п:

Чăваш—киремет! Чăн туррун куçне
Мĕн ăспа хăйса шăтартăн апла?
Асту, чĕрĕлех кайан çĕр тĕпне!
Пуçна çăлас-тăк—укçа памала!..

Ч а к к а:

Пĕр пус та ман çук. Ан кĕтĕр манран...
Пĕтсен те пĕтем, çунам тамăкра.
Епир ак хаљ те пурнатпăр аран:
Чĕрлех тамăкра, йалан асапра...

П у п:

О-о, мĕн калаçат, усал киремет!..
Кăна пурмиса калатпăр халех,—
Сана йусама вăл аван пĕлет.
Йе хаљ—виç тенкĕ тӳле ирĕклех!

Т е ч у к:

Укçа памасан, виç пуç выљăхна
Тытатпăр пайан... пăхмастпăр сана!

Шăлт кӳтнĕ, тĕппех шăртланнă Чакка
Чăтса тăраймаст пуппа течука:
Пĕрех кăшкăрат вăл, хайаррăн тапат,
Сасартăк пупа çӳçрен çулăхат:
— Есир-и, есре-ел, шуйттан çилхисем,
Çăтасшăн чĕрлех выç çыннăн пуçне!..
Сире еп, на вăт, хĕсме вĕрентем!
Ак кам, вăл, тамăк сунат çынсене!—
Тет Чакка, пуçлат пупа лăскама.
Арăмпе шăллĕ чараççĕ ăна.
Чăсмак, мăн течук тухат те тарат,
Йăлт-йалт пăхса çеç вĕçет урама.
Хăрана сутник Чаккана чарат,

Чунран йăлăнса хушаŤ лăпланма:
— Ей, Чакка ачам, пĕтен хăна ху...
Ăсран тухрăн-им, — мĕскер хăтланан?
Мана та усал. КаçмасŤ ĕнтĕ ку! —
Тесе ўкĕтлет сутник Утихван.
— Хуна лекиччен часрах тухса кай!
Ес ху та — йытă, çавран вĕсем май! —
Тесе кăшкăраŤ Чакка сутнике.
Çантах вăл йарри алăка уçса,
Малтан сутнике, ун хыççăн пупне
ЙараŤ сирпĕтсе, çурăмран тапса.

Пуппала сутник, хапхаран тухсан,
Йунаççĕ тăрсах Чакка çинеле.
Чакка шарламасŤ, хăвмасŤ вăл хыçран,
Кĕрет те пўртне, лараŤ тĕпеле.
— Ес пуљ-ха кăна, Йатарин? Итле:
Мĕн турăн, ухмах, пуŤсĕр чĕмере!..
— Еп мар çав, пичче. Ман çине ан хуш.
Çулах вĕт ăна шăтарчĕ Иљуш, —
Сĕрет хăранă хавшак Йатарин.
— Иљуш вăл — ача. Ес хушнă, еппин...
Ăна хушма мар — санăн чармала.
Ак тўс хаљ ĕнтĕ: мĕскер курмала?! —
ВăрçаŤ тарăхса аптранă Чакка.
Нимскер чĕнеймест Йатарин ăна.
Тайпи те ĕнтĕ лăпланма пĕлмест:
— Ех, Чакка, пĕтрĕн... ех! — тет, вĕтĕнет.

Чакка:

Пĕтсен те пĕтеп — мана ырри çук:
Ак кĕç куланай ыйтаççĕ каллех, —
Пуç сыв йуласса ан та кĕт ун чух.

Киле пăрахам та тарам ак халех...
Ак килеç кунта хусах-таркăнсем:
Кайам вĕсемпе - ирĕкре çӳрем...

Тайпи:

Чаккаçăм! Чакка!.. есĕ хăтăлан—
Пире кам ваљљи тăкса хăваран?!
Ачу-пăчупа ăçта ман кайас?
Пĕтес-тĕк пĕтес—пĕрлех пурăнас.

* *
*

Чаккашăн кĕтмен пăлхав кӳнĕ кун
Хĕрӳ шухăшпах иртсе, каç пулаť.
Çав кун, каçченех сарлаť чапĕ ун—
Мĕн пур пек йал-йыш Чаккана мухтаť.

## XII. ПУÇЛĂХСЕМ ПĂВАÇÇĔ.

Хĕлле. Сивĕ кун. Тул çутăлна тин.
Чакка шăварать кăвак лашине.
Сарай умĕнче ĕçчен Йатарин
Турать, купалать ыраш улăмне.
Ак çак самантрах урам хапхинчен
Чупсах пек кĕрет йал çынни—Йуксар.
Чакка çавранса сăмах хушиччен
Çитет ун патне вăл, пуçлать сив хыпар:
— Чакка! Ак мĕскер: хаљ çеç, пайан ир,
Пăхаттăм килте пур-çук выљăха...
Асра-тĕсре çук, кĕтмен нимĕн чир,—
Çумри сутникĕн криклетрĕ хапха;
Сассем кĕç... пăхап хўме хушшинчен:
Тăраççĕ сутник, Алапит, Текей,—
Пуçлаççĕ сăмах тўрех сан çинчен...
Ну, илтрĕм, пĕлтĕм. Пĕлни ку—телей!

Чакка:

Мĕскер-ха апла?
Усал пулмала?!

Йуксар:

Ай хăруш, Чакка! Ак çак кунсенчех,
Пайан-ыранах пурмис килмеле.
Пурмис çитиччен, çак çитес çĕрлех
Тытасшăн сана никам сисмесле.

Леш, пуп ыйтнипе тытасшăн, ара.
Йарасшăн уйес хулине вара...
Тата Тевенеш çинчен те темскер
Мăркарĕç хуллен. Тытасшăн пулас.
Шутлаççĕ ай-вай,—чейе те чипер!
Çĕкленнĕ вара: пуплеççĕ хавас.
Асту ес, Чакка, пытан хаљтерех.
Пурмис таппине ан лекчĕ текех.

Чакка:

Капла ку, иккен, çук пурнăç-телей,
Таса çинченех татаççĕ пуçна!
Ах, шелçке, пĕтет Тевенеш мучей;
Пытантăрччĕ вăл, каласчĕ ăна.

Йуксар:

Еп куртăм ăна кунта килнĕ чух.
Каларăм. Темме, чĕнмерĕ питех:
— Ват çын еп, тарса ман май килес çук,
Систер Чаккана,—тесе хучĕ çех.

Чакка:

Мĕн-ма шăна пек имшеррĕн парнас?
Упа-кашкăрпа—упах пулмала!
Май килнĕ таран кĕрешес, пурнас...
Каласчĕ ăна: ун пытанмала.
Кайам-ха, апла, унта—канашлар...
Ну, йурĕ... пĕлтертĕн, ыр тусăм, Йуксар.

Чĕнмерĕ текех пăлханнă Чакка.
Тăрук ывăтат алри супнине,
Шатăрр! чăмăртат ик селĕм чышка,
Тухат те утат Тевенеш патне.

* * *

Пухха виçĕ хут хăваççĕ вăйпах,
Çавах та унта йал-йыш пухăнмаст;

Сутник, Алапит... вун çын ытларах
Хурал пӳртӗнче халлапа çапат.
Йериле:
Ай-йай, Алапит, йал-йыша хуçан!
Ахаљ те Чаккан пырши тухас пек...
Аванччӗ пит те ӑна каçарсан,—
Начар çын... тӳсет тем тӗрлӗ инкек.
Алапит:
Çынна ан хӗрхен, нихçан ан каçар:
Пырши тухсассӑн—пыршине тапта!
Кам вӑл начар çын? Кахал—çав начар.
Çавсем хапсӑнаç çынри йамӑта...
Сутник:
Ун пек кашкӑра мӗнле хӗрхенен?!
Мӗнле вӑл пӗр кун вӗçтерчӗ пире...
Хӗнерӗ пупа... ун пирки мӗн тен?
Ун ӗçӗ пирки хыт сикрӗ чӗре.
Тем курса тӑра-а-ас!..—кӗвӗçет сутник.
Унпа килӗшет ик-виçӗ старик.

* * *

Ак шӑнкрав сасси, уй йенчен килсе,
Сасартӑк йала йантратса йарать.
Кантур таврашсем çитнине сиссе,
Пурин те чӗри çӳçенсе кайать.
Кӗçех ак вӗсем: пурмиспа тийек,
Вунпилӗк лавпа—вунпилӗк сутник,
Тӑман вӗçтерсе çитеççӗ туй пек.
Пӗчикçӗ йала хуплать пысӑк шик!
Пурмис-чунилли—хӑрать вӑл çавах:
Хӑруш саманра çӳремест пӗччен!
Вӑрманлӑх йенче, чӑн хаљ, хӑрушрах,
Çампа та вӑл ак килет темиçен!

Акӑ, хурал пӳрчӗн алӑк уҫӑлать,—
Пӳрте пӗр тийек кӗрет те иртет.
Хывать тӑлӑпне вӑл — гаврала пӑхать.
Курать сутнике—хайаррӑн калать:
— Сутник!..
Халӑху сахал...
Пухмастӑн, кахал!..
—Хутартӑм виҫ хут, хосподин тийек!..
Ех, ку халӑха!.. Чупӑр, теҫетник!
Ҫирӗм ҫын килмен... ну, ҫитрӗ инкек!
Пата-а-ак ҫав кирлӗ!—ҫуйхашать сутник.
Малта тӑракан тачка Алапит
Хавас пит-куҫпа вӑшт-вашт ҫаврӑнса:
— Та, та, та, ҫапла... килмеҫҫӗ-ха пит...
Чакка, хӑйамат, тарчӗ вӗт тухса...
Ватти хуть алрах...—тет вӑл тийеке.
— Ма тартрӑн!? Чӑваш! Усал сӗлехе!—
Хайаррӑн ҫӗмрет тийек, тарӑхпе.
Ак ҫак самантрах, сутник ушкӑнпе,
Капан пек пурмис пӳрте хӑй кӗрет.
Пӳрте кӗрсенех ҫакскер мӗкӗрет:
— Сутник! Ӑҫта сан пуху ҫыннисем?
Йе ес йурийех пухмастӑн капла?
Асту еп сана, чӗрӗлех сӗвем!..
Чуп!.. Пӗр сехетре пуҫтар халӑха!—
Тет те пӗрре ҫех чышать сутнике.
Сутник тулала сикет шӑшиле.
Ак ку вӑхӑта йерипен, майпен,
Вунпилӗк сутник кӗреҫҫӗ пӳрте.
Вунпилӗк йалпуҫ—хирти йалсенчен,—
Кантуршӑн—тӗрек вӗсем ҫак тӗлте.
Хайар пуҫлӑхсем пӑртак лӑплӑнсан,

Алапит майпе малала иртет.
Вашт! тайат пуçне пилĕкĕ таран,
Пур пуçлăхсене хăнана чĕнет:
— Пухха пур халăх килсе çитиччен,
Паха хăнасем, атăр ман пата.
Пăртакçă ĕçĕр-çийĕр çул çинчен,—
Тет те вăл, майпе авăнат тата.
Кантур таврашсем, пурте хаваспах,
Алапит патне кайаççĕ часах.

* *
*

Алапит панче кӳпсе сарăлсан,
Пурмис-сутниксем пыраççĕ пухха.
Анчах пухура йалти халăхран
Паçăрхи пекех нумайĕш çук-ха.
Çынсем сахалран шăртланнă пурмис,
Сĕм ӳссĕр пуçпе пушшех ак урат:
— Чупмастăр есир, усал ӳпре-вис!—
Çĕмрет вăл, йантрат, туйине çаврат;
Хирет сутнике—пĕлме çук ним шут!
Ик теçетнике çапат виçшер хут.
Сутник чĕркуççи çине хуçланса,
Хăй чупни çинчен калат йăлăнса:
— Хосподин пурмис! Ку пухха килме
Килтĕн кил кĕрсех хурăмăр виç хут;
Мĕскер-ха тăвас? Тараççĕ темме!..
Ун пек çынсене кирлех хайар сут!..
Пур ĕçлĕ çынсем хупланаççĕ шалт.
Пурмис аранах ĕçне пуçăнат:
Йалта миçе çын, миçе çĕрлĕ йат—
Пурне те ыйтат, тийекĕ çырат.
Ĕçе пĕтерсен, кантур таврашсем
Куçаççĕ старик Тевенеш çине.

Пуху шăнк хытат—чĕнмеççĕ çынсем.
Тухат Тевенеш ак сĕтел умне.
—Ес-и вăл путсĕр, пăлхавçă старик?!
Ăçта сан Чакка—усал йулташу?—
Çĕмрет хайпурмис.—Тарчĕ...—тетсутник,
Кĕтмест Тевенеш нимле каçару:
Тăрат вăл паттăр, хăйулăн пăхат,
Пурмис ыйтуне пĕр шиксĕр тават.

Пурмис:

Туслах-и чăнах есĕ Пахомпа?
Мĕскершĕн тата саван Чаккана?

Тевенеш:

Пахом ман тус мар. Чакка тӳрĕ чун,
Анчах елекпех пĕтме килчĕ ун.

Пурмис:

Çаплах-и усал таркăна мухтан?

Тевенеш:

Мĕн-ма вăл таркăн?—Тискер пурнăçран!

Тийек:

А... ес... апла-и? Патшана хурлан?!
Ку сăмахсемшĕн пуçна ес хуран!..

Пурмис:

Кала-ха тата: мĕн-ма ес, йалан,
Алапит çине тăма пăлхатан?

Тевенеш:

Çук, еп пăлхатман. Апла мĕн усси?
Кун пек елеке чăн та чăтасси!

Пурмис:

Ăçта сан Чакка? Ма ăна мухтан?

Тевенеш:

Таçта... Вăл тӳр çын. Анчах Алапит
Тĕп турĕ ăна. Пĕтерчĕ вăл, пит...

Тийек:

Тӳр çын Пахомка хăй патне кĕртмест.
Ыр çын вăл турра хирĕç еçлемест:
Хĕненĕ пупа, кулаť иконран,—
Çавна-и есĕ, ват супнă, мухтан?!

Тевенеш:

Турра хирĕç мар—анчах чăвашла.
Пахомка чĕнмен,—ку елек апла!
Выç куçлă пупа тӳсме ытла хĕн,—
Çампа лектерме кирлех пулнă-мĕн.

Пурмис:

Çитет, ват супнă! Хайар калаçан!
Хăна кура мар—чĕлхӳ вăрăм сан...
Сутник! Ес ăçта? Халех тупăр лав,
Çыхсах ку çынна хурăр лав çине.
Уйес хулине кайаť ку антрав.
Унта, сут хыççăн, параť вăл чунне.

Тевенеш:

Асатăр, йураť... кантăр Алапит!
Ват çын еп, кун-çулшăн хыпмастăп-ха пит.
Анчах ман килте ачан ачисем!..
Пĕтеççĕ вĕсем йĕрсех, тăлăхсем...
Кам пăхĕ?!—тейет Тевенеш хуллен.
Ак çак вăхăтрах çыхаççĕ ăна.
Çыхса тăлласан, кăларчĕç пӳртрен.
Вăл тухнă çĕре пыраť хуп çуна.
Çак хуплă çуна тĕпне пăрахса,
Ăсатаç часах ват Тевенеше.
Пĕчикçĕ пуху—йал-йыш—хумханса,
Пуçа пĕшкĕртет хĕнпе килĕшсе.

* *
*

Хурал пӳртӗнче ӗҫсем пӗтсенех,
Кантур таврашсем халӑхпах тухса
Чакка кил-ҫуртне ҫавраҫҫӗ тӗппен.
Анчах никама тупмаҫҫӗ тусса.
Каҫпа, кил-ҫурта хупса питӗрсе,
Пур пек выљӑхне кайаҫҫӗ хуса.
Кайаҫҫӗ вӗсем ҫил пек вӗҫтерсе,
Шӑнкрав сасси ҫеҫ йулат̆ йантраса.

* *
*

Ҫанталӑк сӑнне сӗм-тӗттӗм витсен,
Арпа ӑшӗнче ӗнтӗркен Тайпи
Илтет ак сасӑ ӳпле умӗнчен.
Кӑртах ун сикет хӑравҫӑ чӗри.
— Тух, Тайпи хӗрсем, карӗҫӗ лешсем,—
Чӗнет ку сасӑ чуна йӑпатса.
Хусканчӗҫ Тайпин йун тымарӗсем,
Часах вӑл паллат̆ ку ҫемҫе сасса,—
Аљинкӗш сасси—ҫинҫен йантӑрат̆!
Лармарӗ Тайпи текех хӑраса:
Ҫывран ачине вӑратса йӑтат̆,
Арпа айӗнчен ҫӗкленсе тухат̆.

А љ и н к е:

Ах, Тайпи хӗрсем, пытантӑр аван:
Ех, сирӗн килте ухтарчӗҫ пайан!..
Ват Тевенеше йачӗҫ ҫыхтарса!
Мӗн пур йал-йыша хучӗҫ хӑратса!
Шырарӗҫ сире тӗппи-йӗррипе,
Килте анчах мар—мӗн пур кӳршипе.
Лаши-ӗнине, сурӑххи-мӗнпех
Кантур йеннеле кайрӗҫӗ хуса.

Тата халăха—Чаккана халех
Тытса ăсатма хăварчĕç хушса.
Пўртпе хапхăра, тĕкĕсем лартсах,
Никам кĕме çук питĕрчĕç çапсах...
Тайпи:
Пĕтетпĕр,—вилĕм! Пĕтет вăл тинех!
Хĕрў чĕрипех пĕтетçке ку... ех!
— Ан йĕр-ха ытлах чун татса, Тайпи,
Тен ак каçару, тепле, пулмĕ-ши...—
Тесе йăпатса, шăннă Тайпине
Алђинкĕш кĕртет хăйĕн кив пўртне.

## XIII. ШĂННĂ ВĂРМАН ХŸТТИНЧЕ.

Кантур таврашсем пырса кайсанах,
Чаккана тытма хушнине пĕлсен,
Тайпи йăмăкĕ, Кулин, хăвăртрах
Йарнаť вăрмана йĕлтĕрпе, пĕччен.
Йарнаť вăл, утаť хура вăрманпа,
Пытаннă Чакка тĕлне чухласа;
Вĕт-шак туратсем пăрлак сулăмпа
Вăљ-ваљ сулланаç ăна çакланса.
Йарнаť Кулине сукмак-çулсăрах,
Шур кĕрĕт тăрăх тӳрĕ йĕр тытса.
Хăш чух ун çине, пĕлĕт пек, лаштах
Йăвăç çинчи йур анаť çавранса.

Хайарран сывлаť шур куçлă кăрлач:
Ниçта илтĕнмест пĕр кайăк сасси;
Тепле çеç умран ĕрженет мулкач.
Йе карăк-ăсан тăкаť хыр лăсси.
Пăрланнă вăрман лараť çывăрса:
Лутра çăкасем, пилеш тĕмисем,
Пур хулă, турат, çатра—арканса
Хĕрри çук, вĕç çук,—курнаççĕ пĕртем...
Йарнаť Кулине вăрман тĕпнеле
Карсак пек маттур çăмăл шăмшакпе.
Васкаť вăл, вĕçет Чакка патнеле,
Усал хыпара часрах пĕлтерме.

* * *

Тискер вăрманта пĕр лапчăк çĕрпӳрт
Ларат тан тапнă çыран хĕрринче;
Начар та пулсан, хĕл кунче ку хӳт
Питех те ырă вăрман варринче.
Çĕрпӳрт ăшĕнче, тăм урайĕнче,
Çунат, хĕмленет тип кăвайт вутти;
Сар çулăм çинчи хуран тĕпĕнче
Сикет, çаврăнат мулкачă йашки.
Вăхăт каçхине... Вăрман тăп-тăпах.
Тăмана анчах таçта ӳхĕрет.
Çара сĕм вăрман—çӳçенчĕк, улах!
Тулли уйăх çеç тухса чун кĕртет.
Çĕрпӳрт умĕнче, тулта, Йатарин
Çурат те ваклат каска вуттине.
Чакка хăй пӳртрех, карат вăл хаљ тин
Сӳсе пĕтернĕ пакша тирсене.
Ак çак самантрах, ик-виçĕ хутчен
Темскер улани килет инçетрен:
— У-у-у!..
— У-у-у!..
Ку сасă вăрах чăсăлса йĕрсе,
Хура вăрманта таçтах йарăнат.
Çывран кайăк та, пуçне çĕклесе,
Ăна пĕр самант шикленсе тăнлат.
— Пичче,—арçури!.. итле, ӳхĕрет,—
Тăнлат Йатарин ĕçне пăрахса.
— Çав пуљ, шеремет... тухнă, веç, йĕрет.
Персе пар çăкăр, хыптăр!—тет Чакка.
Йатарин чӳклет:—Çи, акă, лăплан!—
Тесе ывăтат çăкăр татăкки.
Анчах „арçури“ çырлахмаст,—кущтан!

Текех улашат̆, йӗрет ун сасси.
— У-у-у... ы-а-а-а... и-и!..
  У-у-у... ы-а-а-а... и-и!..
Ку сас вӑйланат̆, текех ҫывхарат̆,
Ӑна илтнипе Чакка та тухат̆.
— У... йыс-на-а!.. Йа-та-ри-ин!—
Тесе пекех мӗн йӗрет тӑлӑх сас.
— Чим ку, тӑнла-ха, Кулине мар-ши?!
Пирех чӗннӗ пек, тавай кӑшкӑрас...
— О-хо-хо-о-о... хо-хо-хо!—чӑсат̆ Чакка
хӑй.
— Ку-ли-не-е!..—чӗнет Йатарин.
— Ах тур, шыраса пӗтрӗ пуљ ун вӑй!—
Теҫҫӗ тӑвансем, сиксе ӳксех тин.

* *
*

Пӗр вунӑ самант... Кулине умра!
Ача пек кӳтсе—макрас ни кулас.
—Лери ҫӗрпӳртре тесе еп, ара...
Ну, ах хӑшкӑлтӑм!—терӗ ырнӑ сас.
— Ҫук ҫав. Вӑл пӳртре пурӑнма май ҫук.
Хавшанӑ, начар... Ну мӗн, Кулине?..
Ку, есӗ килни, ырра пулас ҫук,—
Тӗпчет ак Чакка, тӳсеймен йенне.
— Сыхлаҫҫӗ сана, тытасшӑн питех...
Лаши-ӗнине кайрӗҫӗ хуса,
Пӳртпе хапхӑра хупрӗҫ питӗрсех,—
Калат̆ Кулине хӗрсе, хыпӑнса...
Пӑлханчӗ Чакка, усайчӗ пуҫне:
Чылай вӑл тӑрат̆ йупа пек хытса;
Тӑн-пуҫ тӑрӑлсан, шарт! ҫапат̆ пӗҫне:
— Култармӑп!—тет ҫеҫ кӑкӑрне чышса.

* * *

Çĕрле... Çĕрпӳртре. Пурте йĕркерен
Лараççĕ чăрăш çапписем çинче.
Çунса йăлкăшан вутпуççисенчен
Шур сĕрĕм тухса палкать пĕр йенче.
Хĕрӳ кăвартан вĕçет хĕм вăлт-валт,
Çапать тавралах шупка-хĕрлĕ çут.
Чылай чĕм хушман Чакка, ĕнтĕ халт
Таттисĕр хирçет, тăвать тĕрлĕ шут:
— Ыр кун пулас çук... çуках, çук ырри!
Кăшлаççĕ иккен таса çын пуçне.
Ну, пĕт!.. пулам мар кашкăрсен хурри!
Пĕтсен те пĕтем—таврап çавсене!..
Есир, Йатарин, пурнăр-ха кунтах,
Ан тухăр йала тата ик-виç кун...
Ыран еп кайам кăвак çутăлах,—
Тупам Пахомка... хăват пур-ха ун,
Пур!—тет те Чакка, каллех шăпланать,
Каллех вĕçĕмсĕр шухăша кайать.
Çĕрпӳрт ăшчикки йӳçек те вĕри,
Пĕчик чӳрече сĕрĕме çăтать.
Тăм урай çинчи кăвайт кăварри
Йăл-йăл тĕлкĕшсе кĕлленсе выртать.

* * *

Чакка—тытасран тарса пурăнни
Сахал вăхăт мар—ерне те ытла.
Текех пытанса пурнайман Тайпи
Пырать çеç килне,—лекет вăл алла.
Шăнса тертленсе, патак та çисе,
Сутник витинче ларать вăл виç кун;
Чакка ăçтине пăвăртса, хĕссе
Ыйтаççĕ унтан,—чĕнмест мĕскĕн чун.

Çунат̆ тек Тайпи лапрак витере;
Илђуш ун Кулин патĕнче пурнат̆.
Макрат̆, тулашат̆ Тайпи тĕттĕмре.
Усал пурнăçне чунран ылханат̆.
Йал-йыш хĕрхенсе хăтарман пулсан,
Татах та Тайпи тӳсеччĕ пулас.
Пурмис аллине ăсатнă пулсан,
Пуçпех, пĕтмелех пĕтеччĕ вăл час.
Анчах ак, чылай ларса аптрасан,
Кĕç-вĕç кантура леçес пек çынна,
Ыр кӳрĕш—Йуксар, çĕрле, çын выртсан,
Вăрттăн кăларса тартат̆ йут йала.

## XIV. ХАЙАР ТАВĂРУ.

Пĕр сăхă сив каç... автан авăтсан,
Кушлавăш туйми ăйха туртнă чух,
Пахомкă шайкки тухаť вăрмантан;
Кĕрет вăл йала. Сас-чў тавраш çук.
Çывраççĕ пурте. Амаç Мики çех
Лаша шăварма тухма тапратсан,
Кураť кантăкран çакна пĕчченех.
Чухлаť вăл тўрех вĕсене курсан:
— Ех ку, етсемри!.. Итле, Ернепи,
Каллех таркăнсем килеççĕ пулас!—
Çывран арăмне вăратаť Мики.
Вĕсем иккĕш те çўсенчĕç пĕр кас.
Пахом çыннисем хăвăртах иртсе,
Часах çухалаççĕ Мики куçĕнчен,
Хайар йытсем çеç вĕсенеториссе
Хамлаççĕ сиксех хапха умсенчен...
Ак, катăк уйăх хуллен хăпарса,
Хăрах куçĕпе йала пăталаť;
Кăвак çуттине йал çине сапса,
Хура пўртсене ăйăхпа саваť.
Микин ăйăх çук, лараť шикленсе,
Кашни сас-чĕвве илтет, тишкĕрет:
Вăл кĕç-вĕç темскер, шăй-шай илтĕнсе
Тăп йал пуçхĕрлĕ тăрасса кĕтет.

* *
*

Усал-тĕселе кĕтмен çын—сутник
Лапка тăрринче туртать ййăха;
Нимле хуйхă çук. Çавах ун ăшчик
Темле лăпкă мар,—кансĕр шăмшакка.
Пăчăх хура пўрт... Сутник ăнтрашсах
Усал ййăхра выртать тĕлленсе:
„Çула пек, йалтах, паллană çулпах
Анать кĕпере вăл тислĕк лавĕпе.
Анса çитет çеç—кĕпер кисренет:
Ак, йăвăр лава кĕпер тўсеймест!
Ай-уй, çĕмĕрлет—шăтăрт-шат! тискер!..
Тўнет ак, тўнет, ишĕлет кĕпер!—
Сутник те пĕрлех чăмать çĕр тĕпне".
Чун хăпнă сутник çĕклерĕ пуçне:
— Чим! ай... Ку мĕскер? Чăнахçке
шăт-шат!—
Вăраннă сутник тинкерсех итлет:
Тул йенчен такам, чăнах та—шăлт-шалт!
Хытах шаккаса пўрте чĕтретет.
Вăраннă кил-йыш чĕнме те хăрать:
— Путь, ку ырра мар!—тесе шикленет.
Сутник, вата çын, йалт сиксе тăрать:
— Кам çав?.. Мĕн унта?—тесе çихĕрет.

Ч а к к а:
Ку епĕ—Чакка... уç-ха, алăк уç!
Хам ĕçĕм пирки санпа самах пур.
Пит кирлĕ пулсан—хампах манăн пуç:
Халех тытса çых, кирек ăçта хур!

С у т н и к:
Çĕрле ан çўре—ыран ирпе кил...
Çук, çук,—кўртместĕп... хуть те шăнса вил!

Чакка:
Кӳртместӗн пулсан, еп вӑйпах кӗреп:
Асту, алӑкна ватса ҫӗмӗреп!..
Кӳртместӗн ес?!—тет тархӑннӑ Чакка,
Унтах вӑл хыттӑн ҫапаť алӑка.
Тӑр-тӑрр! кисренет катмар хура пӳрт.
Шалта—шӑй та шай! ҫемйе ҫӗмӗрлет:
— Атте, ах, атте! Ах турах, ан кӳрт!
Кӑшкӑр йал-йыша!—тени илтӗнет.
Ак ҫак хушӑрах улт-ҫичӗ хусах
Сапур пуҫӗпе кисрӗҫ алӑка,
Ик-виҫҫӗ киссен, алӑк шалтӑрах
Чӗрпеклӗн ванса ӳкет таталса.
Алӑк ӳксенех, таркӑнсен пулкки
Кӗрет вӑркӑнса сӗм-тӗттӗм пӳрте,
Сехри хӑпнӑ ҫын—сутник карчӑкки—
Тӗн витӗр пӑхса вӑйпа ҫихӗрет.
Сутникӗ пӗччен, малти кӗтесре,
Мӑн сӑнӑ тытса тӑнӑ та чӗтрет:
— Ех, Чакка,—шуйттан, мӗншӗн ес пире
Хуплан Пахомпах!?—тет вӑл хирӗҫсе.
— Еп мар,—хӑвӑрах чӗнтертӗр ӑна...
Сире уншӑн тав!—пуҫ тайрӗ Чакка.
Сутник Чаккапа харкашнӑ тӗлте
Пахом хӑй кӗрет хӑй ҫутнӑ пӳрте:
— Акӑ, йал пуҫӗ—пурмисӑн йытти!
Ик чухӑн киле тӗп турӑр шалтти!..
Кулаймӑр ӗнтӗ текех халӑхран!..
Лаврушкӑ майла!—терӗ утаман.
Майла! тесенех, чӑсланкӑ хусах
Ик-виҫ йулташпе сутнике тытаť.
— Лавруш! Мӗн тума? Тивес мар аплах...

Çемйи ытла та чун татса макрат҆...
Шалкă...—тет Чакка. Леш тăрат҆ хытса.
Тĕпел йеннеле уттарнă Пахом
Лавруш чарăнса тăнине кура:
— Мĕн-ма ес тăран? Хăвна кирлим, хо?!.
Халех тирпейле!—тесе кăшкăрат҆.
Лавруш, сутнике хăлт-халт! сĕтĕрсе,
Ик-виç йулташпе тухса çухалат҆.
Пахом хайаррăн хушнине илтсе,
Чакка ăна тек чĕнме хăйаймаст҆.
Йĕрет, çуйăхат҆, çĕмĕрлет кил-йыш.
Пахом пĕрре çеç тапса кăшкăрат҆:
— Афоҥкă! пĕрер çăвар урлă чыш!..
Лăпланччăр вĕсем!—тет Пахом, урат҆.
Афоҥкă хусах çăмăллăн сиксе,
Тытат҆ те силлет—кам макрат҆—ăна.
Шикленнĕ çемйе малти кĕтессе
Ларат҆ чыхăнса, хăймаст҆ сывлама.
— Ну атăр, ачасем, ĕçе пĕтерер,
Еçе пĕтерсен, ĕçер те çийер...
Ыран ирпеле кантура вĕçер,
Тевенеш ватта хăтарса килер,—
Васкатат҆ Пахом; тухат҆ вăл пӳртрен,
Ыттисем пурте—унăн хыçĕнчен.
Пӳрт ăшĕ йантрат҆. Кил-йышĕ улат҆.
Çĕмрĕк алăкран сив сывлăш палкат҆.

* * *

Çуркаç тĕлĕсем. Пĕчĕк йал çыврат҆.
Йала таркăнсем килнине сиссе,
Унта-кунта çеç анчăк ханклатат҆.
Патри сĕм вăрман ларат҆ тĕлленсе.
Ак, Алапатĕн лĕпсĕркке йытти

Сасартӑк сиксе харлатма пуҫлать;
Ҫӑл-пар сирӗлет пуйанӑн ӑйхи,—
Тӑрать вӑл хуллен, кантӑкран пӑхать:
Мӑн пӳрт таврали катмар хуралтсем
Шӑпах-ха лараҫ шулапсем йатса;
„Хурах-мӗн кӗме ҫук-тӑр шӑтӑксем“,—
Алапит чунне йарать йӑпатса.
Анчах ак, темме, йытти чарӑнмасть,—
Хытӑран хытӑ пуҫлать харкашма,
Карташ таврала тарӑхсах чупать,
Сикет те тулать малти хапхана.
— Кашкӑр йе вӑрӑ!.. Айта-ха, Итрен,
Тумтир тӑхӑнса тухса пӑхкалар:
Ҫӗкле ес тукшан, еп илем кистен...
Йытти кускалать, тем ку—ырра мар!—
Вӑшт-вашт тӑхӑнса тухаҫ хайхисем,
Хапха патнеле тӑраҫҫӗ пырса,
Питех ҫӳҫенме пӗлмеҫҫӗ хӑйсем.
Сасартӑк пӗр сас кайать йантратса:
— Итрен! Алапит! Уҫӑр хапхӑра...
Ылханлӑ таркӑн парнать аллӑра.

Алапит:
Чакка-и есӗ?.. Кам санпа пӗрле?

Чакка:
Чакка еп, Чакка... хам пӗччен ара:
Анчах пирштисем сыхлаҫҫӗ тавра.

Итрен:
Мӗн ес, вӑрӑ пек, ҫӳрен сӗм ҫӗрле?..

Чакка:
Йӑваш мулкачӑн кӑнтӑрла кун ҫук,
Чаккан та ҫаплах—есӗр хӗснӗ чух.
— Ех, есрел ҫынни, ҫӗтен ахалех...

Шеллеп еп сана—тивтермĕп текех.
Айта кĕр, еппин; кĕр, хапха уçап.
Пӳртӳ сивĕ пуҫ... шăннă ес, туйап,—
Сĕрет Алапит ултавлăн шăлса.
Хăй çак вăхăтрах майланса тăрса,
Алри кистенне тытать çирĕпрех,
Çумри Итренне калать шăппăн çех:
— Кĕрет-тĕк, тӳрех йара пар пуçран;
Ăна вĕлерсен мухтав пуçлăхран!..—
Хапха йерипен—кăррик! уçăлать:
Хайар мăн йытти сикет харлатса,
Алапит ăна чаранçи пулать,
Итренĕ кĕтет, тукшана йăтса.
Ак, кĕç хапхаран курăнать пĕр пуç,
Ун пуçĕ çинче Чакка çĕлĕкех,
Итрен вашт! сулать. Чалхăрать пит-куç.
Мăн пуç лăпсăрах ӳкет çĕр çине.
— Е-хе, аплаçке! Ну йурĕ, еппин!—
Йантрарĕ хыттăн Чаккан уç сасси.
Итрен шăнк хытать, курать вăл хаҫ тин:
— Еппей, ку пуç мар—çĕлĕкпе алси!
Ах, шуйттан Чакки, питех те чейе:
Алси-çĕлĕкне тем çине тирсе,
Çын пуç пек туса хапхаран чикет.
Каçхи куç ула—вăл мĕскер пĕлет?!.
—Айта, тирпейлер! —теççĕ „паттăрсем“,
Иккĕш те сикеç урама вĕсем.
Йытти-качкипех хăваç Чаккана,
Итрен кăнтарнă пырать тукшана.
Чакка чавкăнать çумри хушшала,
Хайар йыт ăна пырать туласа.
Итрен те маттур, кĕç-вĕç çапасла,

Çитсех, çывхарсах пырать вашлатса.
— Ш-и-ик! шăхăрать Чакка, чупнă май.
Итрен, кĕç-вĕçех çитеп тенĕ чух,
Сасартăк илтет—патрах тем лăй-лай!
Ай-вай, нимскерне пĕлсе илме çук:
Ак кĕç, çывăхри пура хыçĕнчен
Улт-çичĕ мĕлке тухаççĕ сиксе.
Тăмарĕ Итрен камне палличчен,
Калла çаврăнса вĕçет килнеле.
Ак, унччен пулмасть, ăна çул татса
Тухаççĕ умма ик-виçĕ мĕлке...
— Киле кĕме çук! Ăçта тармала?
Пахомсем кусем!—терĕ вăл хăйне.
Ак курать Итрен—умра виç хусах
Илеççĕ тытса унăн ашшĕне.
— Ах, ку аттене мĕнле çăласах?—
Тесе ыткăнать вăл ашшĕ патне.
Çитет вăл вĕçсе, шарри! кăшкăрса,
Сулать те йарать катмар тукшана,
Пĕр çўлĕ хусах лачăрах анать.
Анчах çак тĕлтех сисет вăл,—хăйне
Пĕр çирĕп алă хыçран çулăхать.
Карт! çеç туртăнать Итрен пур вăйпа,
Вашт вĕçерĕнсе хыçалла пăхать,—
Ех-их, ан тĕрмеш! Вĕç сывă пуçпа,—
Вун-вуник таркăн ыткăнса пырать!
Чăнах та Итрен çывăрса тăмасть,
Тапса ыткăнать ирĕк йеннеле.
Чупать хăй луç пек, çăварне карать:
— Хурах! Таркăнсем!—тет, йал илтмеле.
Ун вăйлă сасси йала анчах мар,—
Çумри вăрмана та—йан та йан! йарать,

Каçхи тăлăх сас тискер те хайар—
Мĕн пур йал-йыша сăр-сăр сăркатать.
Анчах пĕтĕм йал хăрать Пахомран—
Никам та тухмасть ăна пĕлсенех;
Усал йытсем çеç кас-кас, тапхăртан,
Сас-чӳ илтĕнми хамлаççĕ хĕрсех.

* * *

Вĕçе-вĕç хуралт, кĕрнеклĕ кил-çурт—
Ларать сарăлса çырма хĕрринче.
Çумрах сат-пахчи,—икçĕр вĕлле хурт,
Лараççĕ вĕсем кĕрĕт айĕнче.
Ку çурт хӳттинче пурăнать Текей.
Паллах, Текейе хӳтленĕ „телей".
Ăна ĕмĕрте никам хур туман,
Никам „ырçынна" хăйман тĕкĕнме;
Халăччен пурăннă канлĕ те аван,
Анчах ак кĕçĕр лекет ун тӳсме!
Çуркаç иртейсе автан авăтсан,
Пырать те кĕрет таркăнсен шайкки.
Текей хăйториссе хăтăлать кунтан,
Арăмĕ лекет тарайман пирки:
Ик-виçĕ хусах вите тăрринчен
Ут-улăм туртса антарнă чухне
Кăларнă ăна купа айĕнчен—
Кăштах вăл вилмен сехри хăпнине!
Пахомкă патне çавăтса пырсан,
Çыхаççĕ ăна, лартаççĕ пӳртех.
Укçа хĕстерсе, пăваççĕ майран.
Инке пур пекне парать пĕтĕмпех.

* * *

Тăвас пеккине туса пĕтерсен,
Ĕçме-çимели тупса тултарсан,

Хусах-таркăнсем ик-виç пичкерен
Пуçлаççĕ ĕçме ик-виç килте тан.
Ĕçеççĕ ирĕк. Ирпеле супса
Ӳкеççĕ пурте йăвăр ăйăха.
Ик-виç хусах çеç, тем майпа чăтса,
Çӳреççĕ çаплах сыхлав-хуралта.

## XV. ПĂЛХАВЛĂ ПУХУ.

Хĕвел хăпарать... Хăлхалă хĕвел.
Йупа пек тӳп-тӳр çулăм хăлхасем
Шупкан та хĕрлĕн çиççе, пĕрешкел
Курнаççĕ хура вăрман хыçĕнчен.
Вăрман варринчи çавра таса уй
Сив çил каснипе хытса тĕлĕрет.
Уй тăрăх, çил май, йăлтăркка хăрпу
Хĕвел çуттипе йăлкăшса вĕçет.
Шăпăрт... йанрамасть хура вăрманта
Çулахи чечен кайăксен йурри:
Хура çăхан çеç тепле, кранклатса,
Уй урлă вĕçет—çак çеç мĕн пурри;
Йе выçăхнă тил, мулкач йĕрлесе,
Вăрман хĕррипе шăвăнса йуртать;
Кĕрĕт çийĕпе йуха вĕçтерсе
Вĕсен йĕррине йакатса лартать.
Кушлавăш йаль те хайар сивĕрен
Чĕрчунсăр, сассăр ларать лăпчăнса;
Ун сĕм пӳрчĕсем, шăнса кӳтнĕрен,
Пуçлаççĕ ирех сĕрĕм палкатма.
Сивĕрен анчах мар, сехри хăпнăран
Пушшех те сĕнкнĕ пайан ак ку йал:
Унти хăрушă ĕççене курсан,
Чăн çав, никамăн çĕкленмĕ вăй-хал!

Ку сехре хăппи хывакан усал
Пурне те курнаť урама тухсан,
Ун çинчен çĕрлех пĕлменни сахал.
Ку тискер хыпар вĕçет çилпе тан.
Хурал пӳртĕнчен виççĕр хăлаçра
Лараť тайăлса çĕмрĕк укăлча.
Укăлча йенче—таса уçлăхра,
Çул икĕ йенче тăраť ик шалча:
Вĕсен тăрринче—етем пуçĕсем
Вăш-вăш вĕçтерес çӳç-сухаљсене.
Кусем—Алапит... сутник тенисем,—
Хайар йал пуçсем пĕтнĕ мĕн çĕрле!

* * *

Хăлхалă хĕвел шăваť сисĕнми,
Çитет вăл майпе сĕм хырлăх тĕлне;
Ун ылттăн çуттин имшер пайăрки
Тăрнаť пĕр хушă Текей кантăкне.
Малти кĕтесре, тĕк тӳшек çинче
Пĕччен сарăлса выртакан Пахом,
Каçхи мухмăртан пуç ыратнипе
Кайаť вăранса, анаслаť:—о-о-хомм!..
Çитет!..—тет те вăл, сикет те тăраť.
Ак çак самантрах, Пахом тăнă чух,
Хуралçă хусах алăка шаккаť:
— Кам унта?..—Хамăрăн... сивĕ, тӳсме
çук!—
Пахомкă хăвăрт алăка уçаť.
— Миçен хуралта?—Сахал: виççĕн çех.
Вĕсем те шăннă, ыйтаç улшăнма...
— Ну, хаљ вăраннă... кала, кĕччĕрех:
Мĕкĕрт рожокна—пухăнччăр кунта.

Хуралҫӑ хусах вашкартса тухса
Какӑр рожокпа мӗкӗртет виҫ хут.
Чӗнен ҫурӑк сас кайат лӑрласа—
Йала сӑркатат вӑл вунӑ минут.
Нумай та иртмест, Текей мӑн пӳртне
Тулаҫҫӗ пырса ытти таркӑнсем;
Пахом вӗсене калат шухӑшне,
Калат—йал пуххи пухасси ҫинчен.

* *
*

Кантӑрла тӗлеш.
Имшеррӗн йӑлтрат кӑнтӑрти хӗвел...
Пахом хусканса, питех ан пуплеш:
Тӑват хӑй ӗҫне, тупат вӑл ӑс-мел!
Хӑраҫҫӗ унтан; ҫавах та пайан
Пухат вӑл йалти мӗн пур арҫына.
Паллах, Пӑкачав ҫынни пулнӑран—
Курасшӑн пурте хӗм чунлӑ ҫынна.
Пахом пурмис мар, Пахом тийек мар,—
Чухлат вӑл ӗҫҫынӗн чунне ҫавӑрма;
Пахом йӑваш мар—хӗрӳ те хайар,
Анчах вӑл ҫемҫе хӗн-хурлӑ ҫынпа.
Ак хаљ те пухха пыран ҫынсене
Чыслат вӑл, лапкат—ей, тӑван!—тесе.
Чӗнмесӗр тӑран хӑравҫӑсене
Тӑван сӑмахпа йарат ҫӗклесе.
Пырас пек ҫынсем пухӑнса ҫитсен,
Пахом сак ҫине тӑрат хӑпарса:
Пуҫлат вӑл сӑмах каҫхи ӗҫ ҫинчен,
Калат вырӑсла-чӑвашла ҫӑрса.
Пахом сӑмахне майласа пырса,
Ивашкӑ хусах калат чӑвашла.
Каҫхи пысӑк ӗҫ ҫинчен пӗлтерсен,

Пахомка пуçлатӑ хӗн пурнӑç çинчен:
Хресчен!.. Хура халӑх!
Çунан ес, тӳсен...
Мӗскер саншӑн лайӑх?
Мӗне ес кӗтен?!.
Çултан çул хайарран
Хӗсеççӗ сана,
Инкек-хӗн усаллӑн
Пусатӑ кӑкӑрна.
Пурмисӗ-тийекӗ
Тӳлевшӗн сӗвет,
Пур пурнӑç сӗтекӗ
Вӗсемшӗн типет.
Таçти çӗрулпучӗ
Касатӑ çӗршывна,
Нӳхреп куçлӑ пупӗ
Ӗмет пурлӑхна.
Тӑван вӑрманна та
Чараççӗ касма;
Сывлан сывлӑша та
Ак памӗç сана!..
Хресчен!.. Хура халӑх!
Татах-ши тӳсен?
Мӗскер саншӑн лайӑх?
Айта ак, çӗклен!..
Пур тӳснӗ хӗнсемшӗн
Таврар тӑшмана,
Манми Тевенешшӗн
Кисретпӗр ӑна...
Йӑтар хӗçпӑшал та
Кайар кантура:
Çӗмрер, салатар та

Çунтарăпăр ăна.
Пур халăх инкекĕ
Кĕллентĕр вутпа,
Пурмисĕ, тийекĕ
Тĕп пулĕç унтах...
Пире кура выртмĕç
Ытти йал-йышсем:
Хĕçпе пăшал тытĕç
Асап тӳсенсем.
Хресчен, чухăн халăх!—
Ес çеç ман хаваллăх...
Çĕклен вут хӳме пек—
Хăвна хĕçпе вит!
Ан пулччăр пирте тек—
Сутник—Алапит...
Кам савăннă, кулнă
Кантур хӳттинче—
Ун пек çынсен пуçĕ
Шалча тăрринче!
Çĕмрер кантура та,
Унтан—малала...
Выç куçлă пупа та
Тытса çакмала...
Кăвак утаман хĕрсе, талхăрса
Пуху пуç çинче çаврат çĕлĕкне,
Мăн çӳç-сухаљне аркатса йарса
Хайар сассипе чĕтретет пӳрте.
Пуху шарламасť, никам хускалмасť.
— Мĕн-ма-ха шăпах? Йе çук-тăр сăмах?
Йе ыр утаман сире улталаť?!—
Чакка кăшкăраť çиллес сасăпах.
— Çук ара, Чакка,—чăнни вăл чăнах,

Тӗрӗс пӗтӗмпех Пахом калани...
Анчах... ну... пӑртак... хӑрамаларах:
Хӑруш ҫав... пӑлхав!—тет Йериле мучи.
Чакка:
Мӗнтен хӑрама?.. Мӗн чӗтремели?
Ҫитет пусҫапса чуниллисене!
Мӗн чухлӗ йӑваш-хӗнрех тӳсмели...
Ҫӑлатпӑр, халӑх, Тевенеш пуҫне!
Пахом:
Кайатпӑр ҫӑлма! Пурте ман хыҫран!
Ан манӑр—еп кам? Еп Пӑкачавран.
Нимле улпута, нимле пуҫлӑха
Пире Пӑкачав хӗрхенме хушман...
Йериле:
Ҫынна ҫӑлас-тӑк пӑлхав тумала;
Анчах, утаман, мӗскер курмала?!.
Аван астӑвап Пӑкачав кунне:
Ай-вай ҫунтарчӗҫ кайран хамрӑнне!
Малтан чӑнахах, мӗн пур улпута—
Алла лекнинех чӗррӗн вӗҫертмен.
Кайран ун пирки шӑварчӗҫ йунпа!
Ҫунтарчӗҫ—вилӗм!..Тек кун-ҫул кӗтмен...
Майра патша хӑй салтаксем йарса,
Тустарчӗ, вӗтрӗ пӗтӗм йалсене:
Хирте, йалсерен ик-виҫ ҫын касса,
Пур пек арҫынна пӗтерчӗҫ хӗртсе...
Пӑлхав тапратсан, каллех кӗт ҫавна:
Ырри пулас ҫук, пӗтерӗҫ пуҫна!
Чакка:
Кун пек пурнӑҫа пурнӑҫ теме ҫук:
Капла тӳсиччен хӑватлӑн вилес...
Ӑшра чӗрӗ вӑй сиксе тӑнӑ чух

Ма-ха путек пек имшеррĕн пĕтес?!
Пурмис патакне пĕре курнăскер,
Нихçан та урăх ахаљ парнас çук.
Çук, çук, пурнăç мар,—асап та тискер!
Çапăçас, пĕтес луччĕ кун пек чух.
Йал-йышăм! шутла: мĕскершĕн мана,
Ман урлă—çынна тĕп турĕç капла?!.

Йериле:

Чакка! Ех, ачам, пĕлетпĕр хĕнне:
Пуçна хума та сана вырăн çук!
Тивме йураман çав вырăс пупне;
Мăшкăл та пулсан тӳсмелех ку чух.
Хырçу-марçуна çывхартнă пулсан,
Леш, вырăс пупне тĕкĕнмен пулсан,
Çаплах тĕп туса хумастчĕç сана...
Мĕнле-ха çăлас ĕнтĕ пурнăçна?!

Чакка:

Сĕлĕх пек пупа чĕррĕн чăтаймасп,
Нимле пуçлăха текех пуç таймасп.
Çавсем пиркийех тухрăм çынлăхран.
Мĕншĕн?—Тасаран! Çитмен пурнăçран!

Кĕшĕл хусканат тăп тăнă пуху.
Кĕрлет пĕр самант шăв-шав, калаçу:

1-мĕш сасă:

Асап та мăшкăл! Мĕскер ырри пур?
Çампа та Чакка кĕрешет... маттур!

2-мĕш сасă:

Никам мар, пĕр çав, Алапит шампи
Хупларĕ ăна... ну, тулчĕ шалчи!

3-мĕш сасă:

Кам çирĕ тата Тевенеш пуçне?
Çав çын шайккийех... Вилĕм вĕсене!

**2-мӗш сасӑ:**

Хаҫ вилнӗ ӗнтӗ, чӗрлеймӗҫ текех.

3-мӗш сасӑ:

Текей кам тата? Ӑна та кирлех!

4-мӗш сасӑ:

Текей—алри йытӑ. Лешсемччӗ пире...
Чирке каймасан, хӗрес ҫакмасан,
Икон лартмасан та ан сӗвччӗр тире.
Пурнасчӗ пирӗн, хамӑр пек, аван...
Кайар ак халех, мӗн пур халӑхпах—
Пупне, течукне тытар та вӗтер!
Ан хӑвччӑр вӗсем чирӗкне вӑйпах,
Ан килччӗр йала... лайӑх вӗрентер!

Чакка:

Тӗпех тумала вӗсене, Йуксар:
Пурмисӗ, пупӗ—вӗсем уйрӑм мар.

Йантрат, ҫуйӑхат, хумханат пуху—
Пӑш-пӑш калаҫу, унтах кӑшкӑру:
— Чӑнах, ӗмӗрне ӗҫлен, тӑрмашан,—
Пӗр пусӑн пухса харама паран!..
— Чакка чӑн калат: вӑй пур, мӗн хӑрас?
Ҫӗмрес кантура!!!—теҫҫӗ ик-виҫ сас.
Хӑш-хӑш, ҫак тӗлтех, шанусӑр куҫпа
Йӑпӑшт пӑхкалаҫ таркӑнсем ҫине.
Пахом утаман пӑлханчӑк сӑнпа
Тӑрат сак ҫинче, тӑнлат сассене.

Йериле:

Чӑнни вӑл чӑнах. Анчах, етсемри,
Пӑлхав хыҫҫӑнах, асту, мӗн курас?!.
Есир, ҫамрӑксем, ытла та вӗри,—
Ват ҫын канашне пӑртак хут тӑнлас...

Пахом:

Асту ес, ват супнă, пурмис майлă-и?
Мĕскершĕн текех пăсан халăха?!.

Йериле:

Пахом! Ех, Чакка! Пулмасть лайăххи...
Еп сирĕн майлах, пĕлсĕрччĕ мана...

Сассем:

Йериле суймасть: ыррине ан кĕт,
Пăлхав кăларма пирĕн вăй çук вĕт!
Ватти вăл курнă—тӳснĕ, ачасем:
Пушшех хĕн пулать,—теççĕ ват çынсем.
— Пахом, сан аван: сана тытас çук,
Ес пайан кунта, ыранах таçта!
Пире вăт майкăч ун пек пăлхав чух,
Киле пăрахса тарма çук ниçта!
Çампа та пире сирĕн сăмахсем
Йуравсăр вĕсем,—теççĕ теприсем.
Пахомкă старик пуçлать шăртланма,
Хайаррăн пăхса калать вăл çапла:
— Мĕнле тертленет ав мĕскĕн Чакка?
Пĕтет Тевенеш! Тухмастăр çăлма?!
— Хăратпăр, шиклĕ,—теççĕ ваттисем.
Чĕнмеççĕ, шăпах хĕрӳ çамрăксем.
— Мулкач чĕрисем!—терĕ утаман,
Анать кĕрст! сиксе лутра сак çинчен:
— Тавайăр лавсем! Ан йулăр манран!—
Тет те вăл, тухать хурал пӳртĕнчен.
Ун хыççăн кашах мĕнпур хусахсем
Тухаççĕ хăвăрт—кӳреççĕ лавсем.
Пуху пĕр тапхăр сĕнкет,—шăпăртах.
Ак, Чакка тăрать Пахом вырăнне;

Çĕклет аллине—каласшăн сăмах,
Анчах пӳлĕнет ăшчик кӳтнипе.

Йериле:

Чакка! Йун тăкмах сирĕн йураман,
Çитетчĕ пăртак хăрагнă пулсан;
Куштан та пулсан вĕсем хамрăннах,
Улпут-мĕн пулсан йуратчĕ касмах.

Чакка:

Пĕлсе ес пуплеш:
Ăçта Тевенеш?!.

Кала-ха татсах ес—камччĕ вăл саншăн?
Санран та хисеплĕ ĕçчен чăвашах!
Ак еп те пайан ылханлă таркăн!
Мĕн-ма, кам пирки пĕтетпĕр каплах?..
Сире ку паллă:
Вĕсем пит ылханлă...
Çавсемçке, чунилмĕш кантур йачĕпе,
Усал кашкăрсем пек кăшлатчĕç пире.
Тире сӳме хатĕр шампа пупсенне
Кушак пек çуллатчĕç ал-урисене...
Ан пулччăр ун пек улпут йыттисем!
Вилме! вилĕмех тивĕçлĕ вĕсем!..
Мĕн кирлĕ—вăл пулĕ:
Тăшман шалчи тулĕ!
Тек маншăн, пĕр çыншăн,
Пĕр пĕтнĕ кил-йышшăн
Хам пек чухăн çын ан куртăр инкек!
Ахаљ те пĕр ват çын тăкат-тĕр куççуљ...
Çавнаçке çăласшăн çунаттăм вут пек...
Ну... кирлĕ пулсассăн—еп хам аçачуљ!
Калап çак тискер кун:
Ман урлă хĕн-хурлăх ан тивтĕр йала!

Хаљ çеç йухнă йун
Никам пуçне мар вăл—хуплатăр мана!
Таса, таса мар-и ман хӗмлӗ чӗрем—
Хăйех пӗлсе татӗ тăн-пуçлă етем.

* *
*

Ак çак самантрах алăк уçăлат̆,
Кӗрет пӗр хусах, кăшкăрса калат̆:
— Часрах тух, Чакка!.. Кӗтеççӗ сана...
Чакка тытăнмаст̆—сикет тулала.
Пахомкă шайкки хайар тимпеле,
Кашни лав çине ик-виççӗн ларса,
Тухат̆ те вӗçет кантур йеннеле.
Пӗчик йал йулат̆ хытса, шăп пулса.

* *
*

Пӗр виçӗ кунтан мӗн пур таврана
Сарлат̆ хăвăртах хаваслă хыпар:
Пахом тӗртнипе усал тăшмана,—
Тискер кантура—тӗп тунă пушар!..
Пурмис та, тийек те кӗретчӗç „тӗне“,
Анчах, телейе, килте пулайман:
Ӗçпе, уйесри çарпуçӗ патне,
Кайайнă вӗсем пӗр-ик кун малтан.
Çаплах, Тевенеш те пулман кантурта,
Уйес хулине ăсатнă ăна.

## XVI. ÇĔРПӲРТ КАССИНЧЕ.

Ака уйăхĕн ачаш кунĕсем.
Çăра çулçăпа тумланаттӑ вăрман.
Каллех ак çитеç куксем, шăпчăксем—
Хура вăрмана йараççĕ йан-йан!
Кушлавăш таври йем-йешĕл çтена
Кашлаттӑ, чӳхенет çурхи леп çилпе,
Хĕлпех сĕм пӳртре пăчăхнă сынна
Чĕнет вăл хăйĕн чечен хӳтлĕхне.
Уйсем хуп-хурах,—унта çураки;
Кашни кĕтесрех хаваслă сассем.
Йухаттӑ йăлкăшса Кушлавăш çырми,
Çырма хысипе—чечен чечексем...
Кунсем ыррипе, ĕçчен арçынсем
Иртен каçченех уйра—акара:
Пурте пур унта, пурте йал-йышсем,—
Анчах, пĕр Чакка курăнмасттӑ уйра.

* * *

Кушлавăш уйне хыçа хăварса
Çут кăнтăр йенне кун çурă утсан,
Сĕм-тĕттĕм вăрман кăшт таткаланса
Ĕшне-уйсемпе уçăлаттӑ хушран.
Ку уçлăх тăрăх васанлă çыран
Выртаттӑ йăлкăшса мерчен шывĕпе,
Çыран ик йенпе çулăнман кăлкан

Ӳсет чăшканса вăрман хӳттипе.
Пĕр уй хĕрринче, хĕвел питне тӳрт,
Мерченлĕ çыра пат урлă пăхса,
Лараççĕ йĕркен çич-сакăр çĕрпӳрт:
Кунта таркăнсем пурнаççĕ хытса.
Пахомкă шайкки хăй каннă чухне
Йалан çак хӳтте килсе пытанать.
Нумай та мар вăл ку çĕнĕ çĕрте,
Пĕр çул йахăн çеç иленсе пурнать.
Чакка та ĕнтĕ çемйи-мĕнĕпех
Пăлхавăр хыççăн пытаннă кунта;
Пĕр лапчăк пӳртре, хусахсем пекех,
Пурнать вăл ĕнтĕ виç уйăх ытла.
Çĕрпӳрт кассинчен вун çухрăм кайсан,
Пĕчĕкçĕ Кутей—вырăс йалђ ларать;
Кунта хир-мĕн çук, çаплах-ха вăрман,
Кутей вăл хăй те вăрттăн çеç сывлать.
Кутей—улах йал, таркăнсен йăви,
Пахом хăй унтан туха та пĕлмест.
Йал умĕ ушах,—ун çӳçе-хăви
Йала йут куçран витсе хӳтĕлет.

* *
*

Хусах-таркăнсем çӳренĕ чухне
Чакка йаланах йулать хурала;
Шăлать, тасатать çĕрпӳрт ăшсене,
Хутать вĕсене каптак[1] вутпала.
Тирпейлĕх кӳрен ĕçчен стоража
Хайар хусахсем саваççĕ аван.
Мĕн тупнă йур-вар, пур мул тупăша
Валлеççĕ ăна ик-виç тӳпе тан.

---

[1] *Каптак*—каптака, хуçăлса хăрнă йăвăç тункати.

Анчах таркăнсем хăш чух нимсĕрех
Хăйсем те выçах килеççĕ киле.
Ун пек чух Чакка пӳрте чĕтретсех
Вăрçать пурнăçне, çĕре, хĕвеле...

* * *

Пĕрре, çĕрпӳртсем пушанса йулсан,
Хуралçă Чакка тертленет чылай.
Çемйи ун выçă. Çиме ним çукран
Лешсем çитессе кĕтет вăл пĕрмай.
Каç пулнă. Ак вăл çĕрпӳрт умĕнче
Ларать тĕлкĕшен пăлханчăк пуçпа;
Ун пек чух йалан инçе, пит инçе
Тĕнче хĕрнеле тĕллет вăл куçпа.
Ак хаљ те çавах. Умра, ту çинче,
Шыв урлă ăна сĕм хырлăх курнать.
Ăна хирĕçех, вăрман тĕлĕнче,
Хушка çут çăлтăр сиксе выљанать.
Ларать-ха Чакка. Тайпи çĕрпӳртрех,
Çыврать ачипе нӳрĕк кĕтесре.
Хатар Йатарин иртнĕ ернерех
Хусах пулккипе кайсаччĕ хире;
Вĕсем улт-çич кун калла килменни
Чакка чĕрине хускатать туртсах.
— Çакланчĕç пуљ ку!.. Ай, сехре хăпни!
Килмеççĕ!..—тесе хăрать вăл хытах.
Хура вăрман тăп... Тĕнче тĕлĕрет.
Йе шăпчăк анчах йурра шăратать,
Йе ак, сĕмлĕхре ӳхĕ ӳхĕрет,
Хăш чух кăрăпчак хуллен лăрлатать.
Аван кунта пит çурхи вăхăтра:
Улах!—килес çук тийекпе пурмис;
Анчах та выçă... тата пуç тавра



Нӗрлет те сырнаҫ ҫӗр пин ӳпре-вис.
Чакка чылайччен ларат йӑпанса,
Имлет вӑл пуҫне каҫхи илемпе;
Ӑшне пусарма инҫете пӑхса—
Вӗҫсӗр ирӗкре йарнат чунӗпе...

* * *

Кӑвакҫут килет. Ҫӗрпӳртри Тайпи
Сасартӑк, темскер, шарри! ҫихӗрет.
— Чакка! Ах, Чакка! Ӑҫта тарам-ши?
Сӑхатҫке, сӑхат!..—тесе ҫӗмӗрлет.
Чакка ваштӑртах чӑмат ҫӗрпӳртне:
— Мӗн пулчӗ, Тайпи?—тет вӑл хыпӑнса.
Ҫӳҫеннӗ Тайпи кӑш! шӑлат питне:
— Тӗл-л-лентӗм еп, — тет тӑн-пуҫне пухса.—
Ку тӗлӗк чӑна пӗлтерсен, каллех,
Чакка тем инкек пулат пуҫ сана...
Хӑрушӑ ытла. Хаҫ—куҫ умӗнчех!..
Ҫитсе пек хамӑр тин ҫеҫ вӑрмана,
Леш ҫул ӗҫленӗ сӗмри вырӑнах...
Шӑпах, никам ҫук—иксӗмӗр анчах.
Пуҫларӑмӑр пек курӑслӑх касма,
Тата ҫавӑнтах чӗренче ҫурма...
Анчах ӗҫлени ним те ӳсӗнмест,
Ҫуркам тӑрӑххи ӑнса чӗлӗнмест.
Ӗҫӳ ӑнманран вӑрҫса, тарӑхса,
Шыв ӗҫме тесе антӑн ҫырмана.
Кӗтетӗп, кӗтеп,—тухмастӑн унтан!
Пырап та шырап сана чылайран.
Курап пек—умра, ҫырма тӗпӗнче,
Ҫӑра хӑйахлӑх кӑштӑр хумханат.
Анап та унта—курӑк ӑшӗнче

Ес вил пек выртни курӑнах кайаҫ.
Сехре хӑпнипе, мӗн пулчӗ—тесе,
Сана тӑратса лартма пикенеп;
Витсе тӑракан ҫӳл куракксене
Уҫланкӑ пулма таптап та ҫӗмреп.
— Мӗн пулчӗ? тесе тӗпчеп пек санран.
— Ҫӗлен сӑххрӗ... — терӗн ес хуллен.
Ак ҫак самантрах куратӑп—умран,
Тымар айӗнчен тухаҫ пӗр ҫӗлен!
Пит пысӑк ҫӗлен—хураскер, шуса
Пыраҫ ман патах чаш-чаш! чашкӑрса...
Ҫакна курсанах епӗ хӑраса
Кӑшкӑрнӑ пулас... кайрӑм вӑранса.
— Усал ку, усал... инкек хуҫаҫ пулђ!
Ахаљ мар ҫампах ӑйхи те вӗҫет;
Леш каҫ тӗллентӗм—каллех ку куҫҫулђ...
Йатарин—йурлаҫ... ереке ӗҫет...
Ак хаљ те темле... килмеҫҫӗ, ара?!
Хӑруш!—тет Чакка кӗрӗкне сарса.
Илемсӗр халлап пӗтсе пынӑ май
Чакка шӑмшакки ҫемӗҫсе шанаҫ,
Ӑйхи пуснипе лӑпланаҫ самай,—
Хӗвел тухиччен ҫывӑрса кайаҫ.

* * *

Хӗвел тухайман. Анчах кӑвакҫут
Сисми шӑвӑнсах ҫитет тӳпене;
Куккук та ӗнтӗ хӗрсех, ик-виҫ хут
Куклаҫ хай Ҫӗрпӳрт касси тӗлӗнче.
Чечен ҫурхи каҫ хура чаршавне
Хаљ ҫеҫ ҫӗр ҫинчен ҫӗклейес пек чух,
Тӳп-тӳп! чупакан сассем илтнипе
Вӑранаҫ Чакка. Пӑхаҫ—никам ҫук.

Хуйханнă Чакка чупат̆ тулала,
Курат̆—ту çинчен, хура сукмакпа,
Улт-çич йуланут анат̆ варала:
Малта ав Лавруш—çӳрен лашапа...
Пурин хыçĕнчен килет Йатарин,—
Лаши ун утат̆ такăнкаласа.
Чупса ĕшеннĕ лашисем кашнин
Хашкаççĕ аран талпăнса утса.
Лере ав—Тайпи, тĕтре ăшĕнче,
Мерчен пек шывпа кĕпе-йĕм чӳхет,
Ак вăл та курат̆—çĕрпӳртсем патне
Хай çич йуланут йурттарса çитет.
— Лаврушкă!.. Сывă-и?.. Ну, ĕççем
мĕнле?—
Чĕнмест-ха часах хумханнă Лавруш,
Сăмах каличчен пăхат̆ хыçнеле;
Сăн-пичĕ ун шурнă, куçĕсем хăруш...
— Начар пирĕн ĕç...—пуçлат̆ вăл тăрук,—
Пĕр аллă салтак—апшурни камант
Хупларĕ пире, ниçта тарма çук!..
Айта, лаша кӳл, таратпăр самант!..

Ытти таркăнсем:

— Афоҥкă, Йашшут, Йемелкă, Алттын—
Çакланчĕç çĕрле пиртен тăват çын.
— Пĕтетпĕр пурте хура шăналах...
— Пĕтместпĕр!.. анчах тарас хăвăртрах...

Чакка:

Йепле ку? Ăçта?..

Лавруш:

Хаҙ çеç, каçхине, пĕр пĕчĕк йалта...

Чакка:

Ăçта ыттисем?!
Йе тарчĕç вĕсем?..

Лавруш:

Вун çухрăм хыçра, çула картласа,
Сыхлаççĕ вĕсем салтак ушкăнне;
Пире хăвăртрах, пур мула пухса,
Каларĕç тарма Улхаш леш йенне.

Йатарин:

Пĕтетпĕр, пичче, ку ват лашапа:
Чупмасть... кăштах еп лекеттĕм таппа...

Чакка:

Лăплантăм ĕнтĕ еп саншăн тинех...
Мĕнле те пулсан тарас пуль пĕрлех.

* * *

Манаççĕ пурте сăмах-йумаха,
Кӳлеççĕ часрах улт-çич лашине;
Мĕскер лайăхрах, мĕскер пит паха—
Тийеççĕ йăлтах лавĕсем çине.

## XVII. ХУПТĔРЛӲ.

Çурхи вут хĕвел сăнне хĕретсе
Хăпарчĕ малти хырлăх хыçĕнчен,
Тачка пĕлĕтсем кахаллăн ишсе
Шăваççĕ сайран çут кăнтăр йенчен.
Çĕрпӳрт çыннисем пурте хатĕрех:
Мĕн кирлĕ—ăна тийенĕ йăлтах.
Ак кĕç-вĕç, ак хаљ хусканас пекех,
Хăшсем лав çине ларнă майлансах;
Сасартăк хыçра, тӳр сукмак çинче,
Çатрак-хăрăка—çатарт! тем çĕмрет.
Кĕç—тӳп-тӳп! сассем.—Ак пĕтрĕ тĕнче!
Шăпах таркăнсем,—пĕри те сикмест.
Унччен те пулмаст—чĕтренчĕ вĕтлем[1],—
Ак тухрĕ... мĕн ку?! Йанккас кăвак луç!
Вун-вуник йупшерлĕ măн мăйракисем
Пыраççĕ выртса. Ĕрхет каççăр пуç...
Ак ун хыççăнах çил пек кустарса,
Тухаť йуланут—Ивашкă хусах.
— Часрах тармала! Килеççĕ хуса...
Хĕмлерĕç ай-вай!—тет вăл кăшкăрсах.
Л а в р у ш:
Ăçта ыттисем?..

---

[1] *Вĕтлем*—вĕтлĕх вăрман, хунав.

Ивашкă:
Хуравар тăрăх вĕçтерчĕç вĕсем...
Хăрушă иккен салтак пуљккисем—
Йĕрсе, шăхăрса хăваççĕ хыçран...
Ех, ырă вăрман, хӳтлерĕн аван!..
Çакна илтсенех, тийенĕ лавсем
Кашăл! хускалаççĕ ĕшне çулĕпе;
Чакка—çемйипех... Шикленнĕ çынсем
Пыраççĕ пăхсах хăйсен хыçнеле.
Сĕм хырлăх, хырлăх... ак ĕшне хĕрри...
Пыраççĕ лавсем хăвăрт кустарса.
Ак çак самантрах ушкăнран пĕри:
— Хăваççĕ!—тесе йарать кăшкăрса.
Пăхаççĕ пурте часрах хыçалла,
Кураççĕ: чăн та, çил пек вĕçтерсе,
Пĕр ушкăн салтак йуланутпала
Килет инçетрен çĕре тĕпретсе.
— Пăрахăр лавсе... вĕçер утланса!—
Васкатрĕ Лавруш. Пĕччен таркăнсем,
Кашни хăй лавне вăр-вар тăварса,
Утланчĕç харăс,—ак ирĕк вĕсем!
—Вĕçер, ну!—тейет Лавруш кăшкăрса,
Сиктерчĕç пурте хунав хушшипе.
— Лавруш, теп! Лавруш!..—тесе çуйăхса
Йулать ак Чакка ачи-пăчипе.
Ак Йатарин те чăтса тăраймасть—
Çумри вăрмана кушак пек чăмать.
Тăмасть ак Чакка та тĕнсе, пӳлĕнсех,—
Çăласшăн çапах вăл хăй çемйине.
Ак вăл хыпăнса, çулйĕр-мĕнсĕрех,
Чăмать лавĕпе хырлăх хушшине.
Нумай та кайман—лавĕ пӳлĕнет,

Унта та кунта кăмăр, çатрака...
Чакка çывăрмасť, хытса тĕлĕрмест:
— Тапас та сикес, пулмасť ку лавпа!..
Тарар çурранах.. ан йулăр манран..
Тавай ачана!..—тейейет Чакка.
Пĕчик Иљуша хăй алне тытсан,
Чăмаť хайхискер хунав чăтлăха
Чăмаť вăл, чупаť маттур луçăла,
Хунав-чăтлăха сирсе ик йенне,
Çатрак хулăсем вăљт-ваљт сулăнса
Çапаççĕ текех хыçри Тайпине.
Çур çухрăм йахăн чупса пăшăхсан,
Шуйханнă кил-йыш канма ак лараť.
Йĕри-таврари ват хырлăх вăрман
Каш-каш кашласа темскер канашлаť.
— Ах ку, ăш хыппи, пĕлмермĕр капла:
Пăхăр-ха йĕрре—паллах, курăнаť.
Тин шăтнă курăк çемçеçке ытла,
Ура тивсенех, тĕшрĕлсе анаť,—
Капла йĕр тăрăх тупĕç йĕрлесе!..
Чим-ха, пăртак çеç итлесе ларар... —
Ак çак вăхăтрах Йатарин çитсе
Лараççĕ канса пурте йунашар.
Канаť, канашлаť хĕн-хурлă çемйе
Каш-каш кашлакан ват хыр айĕнче.
Шачарт! тăвайса турат хуçăлаť.
Унтах, инçе мар, кайри йĕр çинче
Пĕр-ик хут мăр-мăр сас мăкăртатаť.
— Йĕрлеççĕ, пичче!..—терĕ Йатарин.
— Шыраççĕ... çавсем... тарар!—тет Чакка.
Сехри хăпнипе вăй та çук Тайпин.
Тăраççĕ вĕсем—тапратрĕç чупма.

— Сто-о-й!..—кăшкăраççĕ хайар сасăсем.
Çавах та Чакка, ачине йăтса,
Хырсем хушшипе тапса сирпĕнет.
— Ах, Чакка!..—йĕрет Тайпи йынăшса.
Ак вăл чупаймасть—ўкет вăл, ўкет.
Тайпи йеверлех йăшнă Йатарин
Сехри хăпнипе хăйне хăй пĕлмест.
Хыт шăнăр Чакка—тытаймĕççке тин!—
Мулкач йевĕрлех сиксе ĕрхĕнет.
— Стой та стой!—теççĕ каллех сасăсем.
Ак пăшал сасси: пăнн! панн! йантратать.
Вши-инн! — вĕçеççĕ тăхлан пуљкăсем.
Çут сывлăш чĕтрет, вăрман йынăшать..
— Мĕн пулĕ капла?!—çўçенчĕ Чакка,
Ларать вăл часрах мăк каски çине.
Пăхать кайала—никам çук унта!
— Ех, турă, лекрĕç лешсен аллине!.. —
Вут пек пĕçерет Чакка шăмшакки,
Çанçурăм çине вĕри тар тапать...
Шари те шари! макрать ун ачи,
Часрах вăл ачин çăварне хуплать.
— Капла йурамасть... ирĕклех парнас...
Пĕтес-тĕк пĕтес çемйепе пĕрле...—
Хĕрў шухăшсем çиçĕм пек пит час
Иртеç выљанса Чакка пуçĕнче.
Ак тăчĕ итлет:—ăçта-ха кусем?!.—
Вун утăм утать калла итлесе.
— Стой!!! - тесе йачĕç тискер сасăсем.
Умри вак хунав кайать чĕтренсе.
Тап! тăчĕ Чакка, пăхать сас йенне:
Хунав хушшинчен пăшал кăнтарса
Ик вăрăм салтак чупаç ун патне.

Пĕри çитсенех çапат̆ кăшкăрса,—
Антрарĕ Чакка—ваштах сулăнат̆.
— Ут!..—теççĕ ăна. Чĕнмест ку, утат̆.

* *
*

Йем-йешĕл ĕшне[1]—хунав пуснăскер.
Унтах лашасем, ик-виç пушă лав,
Пĕр ушкăн салтак, çарпуç-офицер;
Вĕсем хушшинче йулхавлă йăслав.
Кунтах Чакка лавĕ ларат̆ пĕр йенче.
Ун лавĕ тавра çич-сакăр салтак;
Тайпи, Йатарин вĕсен умĕнче
Тăраççĕ хытса,—минтренĕ йăлтах.
Çарпуç-офицер—йаштак, вăрăмскер,
Хăрах аллипе хĕç йĕнне тытса,
Тепринпе çӳхе шĕлепне йăтса,
Тăрат̆ уçланкра сивлек те тискер...
Çемçен вĕрекен çурхи ăш çилпе
Вĕçет ун вăр-вăр кăтра сарă çӳç;
Пăхат̆ хăй йăлт-йалт хурчка куçĕпе,
Хистет кĕтӳне—чурасен кĕтӳç.
Пĕр ушкăн салтак—салху салтаксем—
Ĕшне хĕрринче тăраççĕ сĕнксе;
Леррех виçĕ çын, чăваш лавăçсем,
Лараççĕ пăш-пăш сăмах пĕçерсе.
Ак çак ĕшнене илсе кăларсан,
Чакка таркăна хăй йышпе пĕрлех
Офицер умне тăратрĕç малтан;
Кунта хайхине пуçлаççĕ çимех.
— Ну-кă, лавăçсем, камсем ку çынсем?

[1] *Ĕшне*—вăрманти уçланкă, пĕчĕк уй.

Пахом-и, паллăр?—терĕ офицер.
— Пĕлместпĕр епир... епир хиртисем...—
Тет пĕр лавăçи, сар сухаллăскер.
— Пахом-и ес, йе?.. Ăçта ыттисем?—
Хайаррăн хĕсет йаштак офицер.
— Çук, еп таркăн мар: пĕлместĕп еп...
тем...
Еп Кутей çынни,—тет Чакка имшер.
Офицер:
Йалу кирлĕ мар!.. Йепле вăл сан шӳт?!
Кала: ăçта пур тата вăрттăн хӳт?
Чакка:
Ытла та аслă ку хура вăрман,—
Ун пысăкăшне виçсе илме çук...
Пăлан пек каскăн Пахом утаман,
Ăçта вăл пайан—ăна пĕлме çук...
Офицер:
Пĕлетĕн... хаљ çеç вĕçтерчĕç вĕсем...
Айта, тупса пар, тупмасан—пĕтен!
Чакка:
Таçта вăл çӳрет—йепле еп пĕлем?
Хусах шайккипе епĕ çӳремен...
— Ан суй!..—кăшкăрат йаштак офицер,
Йакăшт! кăларат йĕннинчен хĕçне:
— Калан-тăк кала—чăннине пĕлтер!
Тунатăн пулсан, касап чĕлхӳне!
Чĕнместне тата? Ак сана! ак! ак!..—
Тискер офицер хĕççи тӳртĕшпе
Чаккана хыттăн çапат шак та шак!
Тайпи—ах!.. тесе хуплат пит-куçне.
Иљуш мĕкĕрет—çурат таврана.
Улт-çиччĕ çапсан, лӳч! ӳкет Чакка.

— Калатăп... ан çап!..—терĕ вăл аран.
Мĕн пур пек салтак пухăнаттă унта.
Ак ăна иккĕн çĕклеççĕ алран.
Чакка тăраймастă, тытаççĕ ăна.
Тайпи, Йатарин йĕреççĕ ўксех.
— Кала, ну часрах, ăçта вăл Пахом?—
Хĕсет офицер шăртланса çитсех.
Чакка:
— Кайас патă чылай вăрман-шурлăхпа..
Хĕр шыв лешйенне хаљ тарчĕç вĕсем...
Тупап...—тет Чакка хурланчăк саспа.
Чĕтреççĕ унăн алли-урисем.
— Айта, тупса пар! Халех илсе кай!
Пахом шайккине тытма пулăшсан,
Тивместĕп сана... пул ес пирĕн май,—
Хистет офицер çилли çаврăнсан.
— Йуратçке, илĕрт, ĕненĕп сана,—
Шутларĕ Чакка пуçне кăшт сĕлтсе;
Анчах çав хушрах урăх сăмахпа:
— Кăтартăп, айтăр...—тет хăй тилмĕрсе.
— Кайатпăр халех!..—терĕ офицер.—
Суворăв йевĕр маттур пулмала.
Тăшман тенине часрах пусмала...
Кайар!..—терĕ вăл. Салтаксем имшер.
Вĕсем хавас мар вăрман тĕпнеле:
Сĕм-сĕм йут вăрман вĕсемшĕн—шў-шў!
Анчах, мĕн тăвас?!. Мĕскер темеле?
Пуçлăх мĕн хушатă—пултăр килĕшў!
Çарпуçĕ кăшт çеç шухăша кайатă,
Сасартăк ак вăл хушусем паратă:
— Ак ку çўп-çаппа леçес кантура...
Пĕр лав, ик салтак: Скворцов! Ваçилчук!

Ăсатăр халех кусене унта...
Асту, çул çинче ниçта тартас çук!
Вĕçтерĕр халех!..—терĕ офицер,
Чакка çемйинчен уйрăлса утса.
Чаккан ăшчикки вăркаť ак темскер,—
Вăркаť вăл, паллах, инкеке туйса.
— Вашĕ плахорот!.. çемйене хăтар..
Хама хуť тем ту—вĕсене ес йар!
Мĕн пур айăп ман хам чухăн пирки...
Тата ытларах çын елек пани...—
Чунран йăлăнаť Чакка çарпуçне.
Анчах офицер ăна итлемест,
Йараť кантурах Чакка çемйине:
Пĕр чун пек çемйен тĕвви сӳтĕлет.
— Утланăр харăс!.. Пурте йуртăпа!—
Кăшкăрчĕ хыттăн хĕрӳ офицер.
Командă сасси йарнаť вăрманпа.
Каш! кашлаť сĕмлĕх. Ун ăшĕ тискер.

## XVIII. ЧАККА ТЫТКĂНРА.

Пăч тĕттĕм. Çĕрле. Шав çамлăх
варри[1].
Вăрман çийĕнче хура пĕлĕтсем...
Çиçет тек çиçĕм, кĕрлет аслати.
Чĕтреççĕ тĕпрен катмар йумансем.
Тĕнче талкишпех йаванса килсе,
Хупласçĕ çĕре тĕтре куписем.
Кĕç çăмăр тăкса йарасса кĕтсе,
Чĕнмеç ӳхĕсем, шăпах шăпчăксем.
Ак çак самантра мăн вар хĕрринче,
Лутра, лапсака чăрăш айĕнче
Вут-хĕм сирпĕтсе кăвайт йалкăшать,
Кăвайт ик йенче ик-виç хӳш ларать.
Лăс çапĕ витнĕ хӳшсем умĕнче,
Малта, уйрăмрах—пĕр карнă шалаш;
Çурта çутатать шалаш ăшчикне...
Унта офицер. Темме вăл йăваш...
Ларать офицер каска çийĕнче,
Ун пĕр аллинче—шупка чечексем.
Шăршлать вĕсене вăл. Унăн пуçĕнче—
Манми хĕр сасси... шенкер çут куççем...
— Пĕлместçке-ха ун çеçпĕл пек хĕрĕ,

[1] *Шав çамлăх варри*—шавлакан çулçăлă вăрман хушши.

Йепле ак тискер чăваш çĕрĕнче
„Ĕçлет“ вăл патшашăн кунĕн те çĕрĕн?!.
Инçе унăн тусĕ—Украйнă йенче
Чечен сатсенче çӳрет-тĕр çиçсе...
Ах, кичем, тискер чăваш çĕрĕнче!..—
Таттисĕр шухăш хуплат тек килсе.
Сасартăк çиçĕм вут-хĕм сирпĕтет.
Тăрук çĕкленет йаштак офицер,
Пăхат тулала: кăвайт тĕлкĕшет...
Çил-тăвăл... тĕттĕм—çӳçенчĕк, тискер!
Шавлаççĕ талкин-талкин йуман тăррисем,
Турат хуçăксем çăваççĕ çӳлтен.
Хӳшсен хӳттинче ларан салтаксем
Хĕрсех сăхсăхаç хайар çиçĕмрен.
— Амвроçийĕв!—терĕ офицер хуллен,—
Тавай-ха кунта Чакка таркăна...—
Пĕр ватă салтак, ку сасса илтсен,
Чаккана вăрт-варт кĕртет шалаша.
Чакка кĕнĕ чух хайар аслати
Чи пуç тӳпинчех çĕмĕрсе кайат;
Хура пĕлĕтсен хуçăлат кашти,
Чĕресĕ тӳнет—çăмăр тăкăнат.
Хайар аслати патрах çапнипе
Мăнаç офицер те сăхсăхса илет,
Ăна вăл патша хăвачпе виçсе,
Пăхат шăтарса Чакка çинеле.
Чакка та шутлат:—Ах, манăн пĕрре
Çав аслати пек пуласчĕ хăват!
Çĕмрĕттĕм вара... таптăттăм сире!..
Санах вăл йатлат ак хаљ—хăйамат!
Ех... кайăк пулса, инçе, айакка
Вĕçĕттĕм санран!—шухăшлат Чакка.

Тек çиçĕм çиçсе аçа çапнипе
Çанталăк маччи ишĕлнĕ пекех;
Вăрманĕ шавлать, çĕмĕрлет тĕппех.
Хӳшсем айĕнчи йĕпе салтаксем
Чăркуççи çинче кĕллеççĕ турра.
Асар-писер çил, çӳлти хăватсем
Çăтса йараслах вĕсене йутра!
Кĕç-вĕç ак Пахом, шайккипе çитсе,
Йĕри-тавралах хуплассӑн туйăнать.
Маттур офицер те чĕтрет çӳçенсе,
Анчах пуçлăха хавшак йурамасть.
— Хурах,—терĕ вăл,—кала чăннипех:
Патрах-и ĕнтĕ Пахомкă шайкки?..
Мĕн шутлан есĕ, ăна ушкăнпех
Ыран ир тытса илесси пирки?
Асту ес, ан суй: суйсан—пĕтереп,
Халех вут çине хурса вĕтелеп!

Чакка:

Каларăм сире: виç çухрăм анчах...
Ыран ирхине тытмашкăн аван.
Ытти чух йалан хурал тавралах.
Ирпе—пыр та тыт!—çывраççĕ пĕр тан.

Офицер:

Кала чăннипе: миçе çын вĕсен?

Чакка:

Каланă сире—аллă çын ытла.

Офицер:

Вăйлах-и вĕсем хĕçпăшал йенчен?

Чакка:

Ех... ан та кала!..

Офицер:

Мĕн-мĕн пур вĕсен хĕçпăшалсенчен?

Чакка:
Пĕр вăтăр пăшал... хĕçсем, ухăсем...
Пăшал тавраШне салтак ушкăнчен
Илнĕ çĕмĕрсе Чĕмпĕр патĕнче.
Офицер:
Еппин, çăмăл мар унта сывхарма?
Çĕнейĕп-и еп пур пек салтакпа?
Чакка:
Пĕлместĕп, хĕн пуҙ... çампа еп сире
Сĕнетĕп ирпе, çыврăнă çĕре...
— Ну суйрăн... çитет!—терĕ офицер.
—Амвроçиĕв!—тет вăл. Ват унтĕр кĕрет.
— Хураллăр кăна!.. асту, ан вĕçер,
Алли-урине çыхсах тĕвĕлет!
Черетлĕ хурал икшерĕн тăрат...
Ытти салтаксен выртсан та йурат,
Анчах хĕçпăшал çумрах пулмала,—
Тет те офицер, пăхат тулала.
Тулта самайланнă: тăвăл тамалат...
Шавлат-ха çăмăр, кĕрлет аслати;
Анчах кай йенчен уйар курăнат,
Унтах йăлкăшат пăнч çăлтăр çути.

* * *

Шĕвек кăвакçут тухат йăпшăнса,
Каçхи сĕм чаршав майпе уçăлат...
Кас-кас сулхăн çил килет вашлатса,
Йуман айĕнче тăмла шăпăркат.
Инçе, мал йенче—тĕнче хĕрринчех,
Çиçет тек çиçĕм—сиксе, йăлтлатса.
Вăрман çийĕпе ăмăртса пекех
Çӳхе пĕлĕтсем чупаç унтала.
Нӳр сывлăш—уçă, ансат сывлама...

Шыв-шурлăх çинче тĕтре шуралать.
Çаранлă васан сырнать сывлăмпа.
Чечек-çеçкерен ыр шăрăш сарлать.

* * *

Ĕнер кунĕпе ырнă салтаксем
Çывраççĕ вил пек. Çыврать офицер.
Анчах ик салтак—Чакка хуралĕсем
Лараççĕ çаплах, сĕнкмеççĕ нимскер.
Çыврать-ши Чакка?—Çук, вăл çывăрмасть.
Анчах хăй çавах çывран пек туса,
Ват чăрăш кутне хутланнă, выртать;
Пусне çавăрать вĕççĕр шухăшпа:
— Мĕнле вĕçернес?! Йепле хăтăлас?!
Çук, çук—пулаймасть! Ан та ĕмĕтлен!..
Хурал-салтаксен куçĕ хупăнмасть...
Ав тул çутăлать... ех, Чакка, пĕтен!..—
Вут-хĕмлĕ, хĕрӳ хайар шухăшсем
Памаççĕ канма Чакка чĕрине,
Алли-урине çыхнă кантрасем
Пăваççĕ,—пит хĕн йун тымарсене.
Аптрать вăл: хыçа çыхнă алсене,
Çыххи каснăран, текех турткалать;
Ак, хăй те кĕтмен мĕн пулассине,
Çапла туртăшса çыхха пушатать.
Пушаннă алсем хăват илнипе
Ĕçлесшĕн текех, хурал сисмен чух;
Алсем ун хыçра—ĕçле тек майпа,
Вĕсем тем тусан та салтак курас çук.
Мăшт та мăшт сывлать çывран пек Чакка,
Анчах хăй сăнать хуралçăсене:
Тавра—мĕн çăт-çат, мĕн пурра-çукка
Итлет вăл йăлтах,—манмасть ĕмĕтне...

Шăпах пулаť ак пĕр самант хушши.
Чакка чăлт уçаť чĕрĕ куçсене,
Кураť: кăвайтра палкаť вутпуççи;
Унтах ик салтак тӳннĕ ик йенне...
Лăстăр чĕтренет йуманлăх тăрри;
Пĕр шăпчăк патрах йурра шăрататť...
Аванçке ирпе ку шăпчăк йурри,
Йепле вăл çынна чунран ачашлаť!
Те шăпчăк йурри ачашланăран,
Те ĕнер ытла утса ырнăран
Хурал-салтаксем шăпах ак, тăпах;
Сикмеççĕ вĕсем—куçсем те хупах!..

* * *

Чакка чĕрĕлет. Часрах, пур вăйпе,
Кăрт-карт! вăл туртаť хыçри алсене,—
Алсем ирĕкре!.. Хĕрӳ алсемпе
Салтаť те йараť ури çыххине.
— Ей, турă, хăтар... Пĕр çурă самант...
Тепле сиссенех пĕтепçке пушшех!—
Ак чунсăр Чакка çĕкленчĕ вăшт-вашт,
Кушак пек шăваť хӳшсем хыçнерех.
Пĕр хӳш хыçнеле йăпшăнса çитсен,
Сывларĕ вăл—хаш! Вĕçет ак хăвăрт.
Васканă йенне, инкекçке пĕтмен,
Ури айĕнче пĕр турат—шăтăрт!
Тăваť те, хайхи хурал-салтаксем:
—Сто-о-ой!..—тесе йачĕç вăрмана çурса.
Йалт! пăхрĕ Чакка—хăваççĕ вĕсем...
Пĕррех вăл сикет луç пек йаранса.
Сикет вăл, чупаť вăрман хушшипе,
Кĕç пуљккă çитсе çапасса кĕтсе.
Чупаť те хашкаť чĕри сикнипе.

Ак, аран чăмат вĕтлĕхе çитсе.
Ик-виç хут пăшал кĕрстлетрĕ хыçра.
Унтах хайар сас, офицер сасси,
Тем-тем йатлаçса йантратрĕ тавра,
Чакка хăтăлат,—пулмаст тытасси!

## XIX. КИЛ-ЙЫШНЕ ÇĂЛМА.

Çăра çам вăрман. Шултра йумансем
Лараççĕ çилпе хуллен шавласа,
Вĕсем хушшинче лашман каскисем
Выртаççĕ шÿсе, мăкпа хупланса.
Кунтах ак катмар йуман тункати,
Ларать ун çинче хай таркăн Чакка;
Çĕнми шухăшсем пуçне пĕçертни,
Кансан та, канлĕх памаççĕ ăна.
— Кил-йышăм! Кил-йыш ман!.. Мĕскер
                                        вăл тÿсет?
Хам пуçăм пĕтсен те çăлам кил-йышне...
Ах ку, хăçан-ха каç пулса çитет,
Шырап, тупăпах вĕсен тĕрмине...
Тупсассăн çăлăп, тен,—шухăшлать Чакка.
Анчах, чылайччен куçне хупманскер,
Тата пайан та утса ырнăскер,
Шутланă çĕртех кайать ăйăха.
Ырмасăр?—Пайан, вăтăр çухрăма,
Пĕр çулсăр, луç пек тухнă вăл утса!
Çапла килнĕ чух çатра та çырма
Нумай ăна пÿлнĕ çулне картласа.

* * *

Чакка ăйăхпа нумай канаймасть:
Çуммах пĕр пакша пат! сиксе ÿкни

Сасартăк ăна вăратса йарат...
Инçех те йулман хĕвел анасси.
Пĕрре хăй тавра пăхайса илсен,
Ак вăл умĕнчи каскана тĕллет;
Катмар йăвăçа касса йанинчен
Чакка хăйне хăй мансах тĕлĕнет:
„Ай-ай, шеремет лашман[1] çыннисем,
Мĕнле-ши тÿснĕ катăргă ĕçне?!.
Ик-виç çĕр çулхи кĕре йумансем
Тÿчлетнĕ вĕсен пуртти каснипе!
Калатчĕçке-ха Тевенеш мучи:—
Макратчĕç, тет, час лашман чурасем,
Аптратнă пуљ çав ун чух та патши.
Паллах, асапран макăрнă вĕсем...
Мĕн чухлĕ йуман—карап пурама
Турттарнă ун чух Хусан çывăхне?!.
Ак каснă кăна—илсе тухайман...
Ех, ĕмĕр хĕн-хур пирĕн пеккине!—
Пĕр тапхăр хытсах тĕлĕнсе илсен,
Чакка ак каллех хăй çине куçат.
Хĕвел аннă чух, тăрат вăл хуллен,
Лашман çулĕпе уй йенне утат.

Каç пулнă. Тĕттĕм. Тăпах сĕм вăрман.
Пĕр шăпчăк анчах йанрат сĕмлĕхре.
Çанталăк тÿлек, ăшă тăнăран
Шав вăрăмтуна сĕрлет тĕттĕмре.
Ак çак сехетре, вăрман тĕпĕнчен
Тухат хай Чакка Кушлавăш уйне;
Тухат вăл çулсăр, пĕр сассăр, пĕччен.
Тухат те ларат, пăхат йал йенне:

[1] *Лашман* (тĕрĕссипе „лажмăн")—голланди сăмахĕ; чăвашла—карап тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен çын.

Анчах савнă йал ăна курăнмасть,—
Малта вăл—хура лапам тĕпĕнче.
Çыврать уй—канать, анчах шăп тăмасть:
Йе йытă-качка ханккать йал йенче,
Йе ак айлăмра, çырма тĕпĕнче,
Шыв-шур шарлатса сикни илтĕнет;
Унтах шапасем—пĕве хӳринче
Асса туй туни тек ťакăљтетет.
Йе тĕттĕм, тӳлек сикми сывлăшра
Çара çерçи вĕлт! вĕçет пуç çинчен.
Анчах ку сассем каçхи вăхăтра
Пĕр майлă тăлăх, хăватсăр, пĕччен...
Ларать-ха Чакка, канать вăл, итлет,
Таттисĕр шухăш тухмасть ун пуçран.
Нумай та иртмест—пуçне вăл çĕклет:
Илтет ак уç сас—пĕр йурă таçтан.
Чакка лараймасть, хавассăн тăрать,—
Таçта тĕттĕмре тăсакан йурра
Кĕвви-сăввипех тытса вăл çатать.

„Шăнкăр-шăнкăр сиксе, ай, шы-ыв йу-уха-ать—
Çул çинчен мар, анча-а-ах, ай, чу-у-у-ул çинче-ен; 2 *хут.*

Кĕске ĕмĕр ирте-ет, кун-çу-уљ вас-ка-ать,
Ырлăх-сумлăхпа ма-ар,—хĕн ху-ушшинче-ен; *2 хут.*

Урать çилĕ, тула-ать—вăрма-ањ кашла-ать,
Тата темскер ха-алĕ-ĕ çăва-асси-и пу-ур; *2 хут.*

Хĕсет саккуњ, хĕсе-ет,—халă-ăх макра-а-ать,
Тата темскер умр-а-а кура-асси-и-и пу-ур? 2 *хут*

Йурри хурлăскер—йанрать тăплăхра;
Хĕрӳ, авкаланчăк йурă кĕввисем

Патри айлăмран шăранса тухса
Йухаççĕ тавра. Тĕттĕм кĕтессем
Тăнлаççĕ ăна шăп пулса тăрса.
Чакка та çаплах тăнларĕ ăна:
Унта туллийех пурнăçри хĕн-хур,
Пуçри хуйăха, ăшри хурлăха
Ак уншăн пекех шăратать ку йурă.
Ак вăл чăтаймасть, утать васкаса
Хай йурă йухса тухан вар йенне.
Курать—васанра кăвайт йăлкăшса,
Сӳни-сӳнейми сапать вут-хĕмне.
Хавассăн утать Чакка вут патне.
Çывхарчĕ. Курать—чылай çын мĕлки...
Ак йурă чарăнать. Вăйлатрĕç вутне.
Чакка та паллать: Љарук ав, Мики!..

* *
*

— Ей, хам тăвансем, йурлатăр хĕрсех!..
Лашасемпе пуљ выртатăр кунта?
Аван-и?—терĕ Чакка çитсенех.
Хуйханнă çынсем шăп пĕр саманта.
— Чаккаçке!!! Ăçтан? Тарса-и? Мĕнле?..
— Шăллу каласаччĕ сан çинчен йалта...
— Ех, Чакка, ĕнтĕ тинех пĕтмеле...
— Апшурни камант çийет вĕт кунта!..—
Вун-вуник етем—выртма çыннисем,
Вун тĕрлĕ чĕнсе тĕпчеççĕ унтан.
Чакка пĕлтерет. Ун сăмахĕсем
Кĕске те пулсан, тытаççĕ чунран.
Калаçнă чухнех, ĕшеннĕ Чакка
Ĕçме-çĕмели ыйтать кӳршсенчен.
Параççĕ сĕтпе тип çăкăр ăна;
Çийет вăл,—тĕпчет хăй йышĕ çинчен.

Ђарук:

Йышна пайан ир йачĕç кантура,—
Хаљ ĕнтĕ вĕсем кантур тĕрминче.
Ачу сан кунтах, хаљ—хуђамура;
Вилмест ĕнтĕ вăл таван аллинче...

Мики:

Сан йышна çеç мар, тата ик çынна—
Кĕслеç Йуксарпа Кĕске Ентрине
Ăсатрĕç пайан салтаксем тытса;
Ирпе, сан йышпах йачĕç вĕсене.

Ђарук:

Ай-ну салтаксем—усал кашкăр май—
Чĕтретрĕç йала шăпах виçĕ кун...
Пĕр çирĕм çынна ислетрĕç, ай-ай!
Каллех таврăнсан—йулмаст чĕрĕ чун!

Чакка:

Ех, мĕскĕн пуçсем... асап вĕсене!..
Парсамччĕ, Мики, çўрен лашуна,—
Часрах вĕçтерем кантур тĕрмине,
Пурне те çăлма хурап хам чуна.

Мики:

Йепле ес кайан? Çук-тăр сан вăй-хал?
Кайма та унта хăрушă, ай-вай!
Унта вĕт салтак... тен çĕрпех хурал...
Лашишĕн пулсан—утлан та, вĕç—кай...

Чакка:

Хĕвел тухиччен çитĕп-çитĕпех:
Йе хам çакланап, йе йăлтах çăлап...
Лексен те лекеп—пĕтетпĕр пĕрлех...
Анчах лашăра мĕнле-ха таврап?!

Мики:
Хам пуçта шел мар ман, саншăн пулсан!
Татах ик лаша йулат-тĕр хама...
Чакка:
Йурат, ырă тус!.. Анчах, чи малтан,
Курасчĕ манăн манми ачама...
Ђарук:
Йалтах вăл—куран... кай... пит ан хăра:
Кунта салтаксем хаљ çук-ха, ара...
Чакка:
Нумай-и кунта апшур пуçĕсем?
Сассем:
Пĕр вунă салтак çӳретчĕç вĕсем...
Чакка:
Кăвак çутăччен васкасчĕ хаљ ман...
Тен, майлă пулсан, тĕлпулпăр кайран...
Ан манăр!..—тесе васкарĕ Чакка.
Пĕр-ик самантран лаша ун—умра.
Утланчĕ ак вăл çӳрен ут çине,—
Ыр сывлăх сунса, вĕçет йал йенне.
Ђарук:
Çак таркăн пирки ĕнтĕ курмала...
Хăтланчĕç хĕлле... ак хаљ чăтмала!
Мики:
Чакка-и унта? Ан аташ, Ђарук!
Саккуњ—мур!.. Саккуњ йĕркелĕ пулсан,
Чакка та, ес те нимскер курас çук,
Асас çук йалта нимĕнле пуйан...
Чăнах ку, Ђарук, çавăн пек саккун:
Кам—муллă, пуйан—çавнах пулăшат,
Пур пуçлăх, улпут пуйанпа пĕр чун!
Кам—чухăн, начар—вăл татах путат.

Шур йур пек таса, тĕрĕс-ха ес ху—
Таптат ак сана, сăхат пуйан çын...
Анчах та ан чĕн, ан хирĕç, асту,
Хирĕçсен пĕтен,—ун майлă пур чин!

* * *

Выртма çыннисем тавлашрĕç чылай,
Калаçрĕç ирччен кашни харпăр май;
Тĕлĕнеç вĕсем Чакка чĕрринчен,
Пуплеççĕ апшур каманти çинчен.
Анчах ак Мики нумай калаçмасть,—
Ларать вăл çунан кăвайт çывăхне—
Хура куçĕсемпе вутта пăталать,
Тăсать хăй йурра хавас кĕвĕпе.
Хастарлăн йанрать ун йурри-кĕвви,
Унпа сўтĕлет пур хуйăх тĕвви.

## XX. ĂНĂÇСĂР ХĂТАРУ.

Çуркаç тĕлĕсем. Çĕр çийĕ тăпах.
Йăлтраççĕ çӳлте хушка çăлтăрсем.
Лӳ-лӳ! сулхăн çил çапаť тăтăшах.
Çывраççĕ йалсем, уйсем, рашчасем.
Ак çак самантрах рашча çуммипе
Пыраť пĕр пĕччен Чакка йурттарса,
Пыраť вăл çинçе сукмак ĕрешпе,
Кантур йалнеле тӳрĕ çул тытса...
Ак, хай йал умрах—рашча хыçĕнчех.
Кунта ĕнтĕ вăл лараť çĕн кантур.
Каç хӳтлĕхĕпе, шикленмесĕрех,
Чакка ку йала çитет пит маттур.
Кантур—çĕнĕ çурт, кивви вырăнчех,—
Лараť ĕлĕкхин кăмрăкĕ çинче.
Хаљ çеç тунăскер—çурчĕ пĕчĕкрех,
Ик-виç хуралт çеç ун таврашĕнче.
Кантур çывăхне пырса çитсенех
Чакка кăкараť çӳрен лашине;
Ак пĕчĕк тĕрме—лараť пĕчченрех!
Чакка йăпшăнаť часрах ун патне.
— Кунта пуљ Йуксар... Ентри... ман кил-йыш...—
Çунаť, хыпăнаť ĕшеннĕ Чакка.
Тăпах-ха, чĕнмест ăйхăлă картиш,

Туймасӗ вӑл шуса пыран таркӑна.
Тӑратӗ ак таркӑн тӗрме хыҫӗнче—
Пур пек сас-чӗвве сӑнатӗ тӑнласа.
Ак илтрӗ хайхи—тӗрме тӗпӗнче
Пӗр сасӑ ҫинҫен кайатӗ ӑнтрашса.
— Тайпи ку!.. Тайпи!.. Мӗнле-ши
ҫӑлас?!—
Хӗрӳлӗн сикет Чаккан вут чӗри.
Каллех, ак каллех... йынӑшнӑ пек сас,—
Паллах, ку хупнӑ ҫынсем тертленни!
Чакка ак тӗрме ҫумпе кускалатӗ—
Пӗр мӑксӑр хушӑк тупатӗ вӑл аран;
Шаккатӗ йерипен, шаккатӗ те тӑнлатӗ:
— Тайпи!.. Йатарин!—тет хай хушӑкран.
Начар, кив тӗрме—ампар майлӑскер,
Чакка сӑмахне хирӗҫ шарламасӗ;
Ун ӑшӗ, малтан сас-чӳ панӑскер,
Хаљ чунсӑр пулса лӑш та сывламасӗ.
Улт-ҫиччӗ чӗнсен, шалтан аранах:
— Кам-ха вӑл Тайпи?—тенӗ сас тухатӗ.
Чакка пӗлтерет кӗске сӑмахпах.
Шалти сас хуллен каласа паратӗ:
— Ес ыйтнӑ ҫынсем вӗсем кунта мар:
Пулас патӗ, анчах... подвалта пулас...
Асту, йерипен... сас-чӳ-мӗн ан йар—
Хуралҫӑ салтак тултахчӗ,—тет сас.
— Ма хупрӗҫ сире, тӑван?—тет Чакка.
Сасӑ:
Хӗлле, кантура ҫунтарнӑ чухне,
Пире те унта хутшӑннӑ тесе,
Вуник арҫынна, пӗрин арӑмне
Хупрӗҫ ку йалтан... ларатпӑр типсе.

Чакка:

Май çук-ши сире çăлса кăлармаʔ..
Нумай-и кунта хурал салтаксемʔ..

Сасă:

Салтакĕ сахал. Çапах та çăлма
Ниçтан майĕ çук. Сыхăçке вĕсем.

Чакка:

Çыврат-тĕр хурал—ăна еп кăнтам
Унтан тĕрминне виттине ватам.

Сасă:

Ай, çук, çук!—Ан тив!.. Апла çăличчен
Ларатпăр тӳссе ĕçе тĕпличчен.
Пирте айăп çук, пире йамала...
Вĕтсен те вĕтĕç тепрер,—чăтмала.

Чакка:

Апшурни камант аллине лексен,
Каçарĕç тесе ан кĕт, ан ĕнен!..
Тухмастăр, еппинʔ.. Май килнĕ пек чух,
Кĕске вăхăта сайа йама çук...—
Чĕнмерĕ текех ку çын Чаккана.
Каçат ак Чакка кантур картишне.
Пăхат, йăпшăнат—курмаст никама.
Ак, хăвăрт утсах кĕрет сарайне.
Курнат ак кунта—тăррисĕр пура...
Пура ăшĕнче—çĕр подвал ани.
Подвал анийĕ уççине кура—
Шăнк хытат Чакка, пулат сывлами.
Унччен те пулмаст, подвал тĕпĕнчен:
— Ах, кайсам... ан тив...—тесе йынăшса
Хĕрарăм сасси илтĕнет хуллен.
Чакка шăмшакки кайат сăркаса.

Тинех вăл курать: подвал çийĕнче
Выртать пĕр пăшал тата йĕнлĕ хĕç!
Чухларĕ Чакка ку мĕн иккенне,—
Шăртланчĕ вăл пит, çурлас пек кĕç-вĕç.
Çӳхе çут хĕççе йĕнрен кăларса,
Чакка подвала ӳпĕнсе пăхать:
Пăч-тĕттĕм шăтăк тăрать хуралса...
— Ес-и ку, Тайпи?.. Кам санран кулать?
Тайпи... тух!—тет вăл подвал тĕпнеле.
Йыт вĕрсе йарать крыльца умĕнче.
— Ей, ыр çын!
Çăлсам...
Çăлсам мăшкăлран!—
Тет сас подвалран.
Унччен те пулмасть, подвал анинчен
Йалт! çеç курăнать мундирлĕ салтак.
Чакка ăна—ласт! сулать майĕнчен.
Салтак кăшкăрма хăтланчĕ пăртак,
Анчах çивĕч хĕç памасть кăшкăрма—
Тăл-пӳ çинчи пуç лачăр усăнать,
Лӳппер ӳт—лӳч! çеç чăмать подвала.
Хапха йенчи йыт хыттăн хамлатать.
— Ну, тухăр часрах, хуралçă тек çук!—
Хайаррăн чĕнет шăртланнă Чакка.
Уй-хире ĕнтĕ çапнă кăвакçут,
Часрах тармала çумри рашчана!
Йалта автансем, ăмăртса пекех,
Автаççĕ хĕрсе—çунатсем çупсах.
Сарай çисенче чĕвĕл чĕкеçсем
Пуçлаççĕ йурра хавассăн, пĕртем.
Ак çак самантрах хура подвалтан
Тухать васкаса хĕрарăм мĕлки:





— Чакка!..—Ех, Тайпи!—хурланчĕç чун-
ран.
Чĕлхе çаврăнмаст̆ ăш кӳтнĕ пирки.
Чакка:
Ăçта ыттисем?.. Ăçта Йатарин?..
Тайпи:
Вĕлерчĕç персе... тарма тăнă чух...
Чакка:
Ох!.. Тайпи!.. Тайпи!.. Хăçан ку еппин?!.
Тайпи:
Йалтан килнĕ чух... Ай... хаљ тăнăм çук...
Чакка:
Айта хăвăртрах! Чуп ман хыçăмран...
Тайпи:
Вăй-халăм пĕр çук, ах... пулмаст̆ манран.

* * *

Чакка ак çакат̆ хĕçпе пăшала,
Тарма пикенет часрах уйала.
Ларат̆ вăл хӳме çине улăхса,
Çĕклет Тайпине—уйа каçарат̆.
Уйа тухсанах, утне утланса
Лараççĕ вăшт! çеç— çӳрен ут йарнат̆.

* * *

Рашча йеннеле сиксе, ыткăнса
Çырма хĕррипе пырат̆ йуланут;
Çил пек пынă май, хытах такăнса,
Ӳкмех те пуçлат̆ лаши пĕр-ик хут.
Анчах, йуланçи—Чакка—çирĕпскер,
Айри лашинчен хăпмаст̆ сухăр пек,
Умне Тайпине тытса ларнăскер,
Хыçал йеннеле пăхкалат̆ хăй тек.
Пĕр-ик çухрăма пырат̆ вăл тарса;

Рашча инçе мар—умрах тĕмĕсем...
Сасартăк хыçра—шăлт та шалт! туса
Йантратрĕç уйа пăшал сассисем.
Чакка йăлт пăхать—курать: йал йенчен
Улт-çичĕ салтак, пăшалпа персех,
Чупаççĕ иккен вĕсен хыçĕнчен!
Ак, ак пуљккăсем шўлеççĕ йĕрсех!..
Чакка, хăвăртрах пытанас тесе,
Çырма йеннеле çаврать лашине.
Лаши пур вăйпа пырать сиктерсе.
Инçех те мар ак çырма хĕррине—
Ши-ў-ў!.. шăхăрчĕç каллех пуљккăсем,
Йунпа чĕр ўте шыраса вĕçсе.
Унччен те пулмасть:—А-ă-ă!.. лекрĕ тем...
Ă-ă-ă!..—терĕ çеç Тайпи ĕнтрешсе.
Тайпи ăнтрашса пынă хушăрах,
Çырма хĕррине çитсе перĕнсен,
Палтăрт! такăнать çўрен урхамах,—
Ўкет те вăрнать хыса хĕрринчен;
Чакки ун çинчен, Тайпи-мĕнĕпех,
Вашт! çеç сирпĕнет çырма тĕпнеле.
— Пĕтерчĕç... ай ту-ур!.. Пĕтерчĕç тинех!..
Мĕн куртăм?! Чăн-и ку, йе тĕлĕк, темле?!—
Минтренĕ Чакка ăнланмасăрах
Сикет те тăрать часрах васкаса,
Пăхать арăмне: выртать вăл шăпах,
Тăнлав тĕлĕнчен йун йухать тапса.
Çўрен урхамах унтан çўлерех
Выртать месерле, пуçне тăратса,
Ун сылтăм ури шăп кăкĕнченех
Аманнă иккен, пуљккă çапăнса!

* * *

Тăн илнĕ Чакка тăмарĕ çĕтсе,
Хĕçне-пăшалне çакаť вăл хыçне,
Çĕклет Тайпине ик хулĕ çине,
Чăмаť çыранри çӳçелĕх ăшне.
Анчах инçех те пулмасť тарасси:
Пĕр çирĕм утăм йарса пуссанах,
Илтет вăл—хыçрах салтаксен сасси.
— Ай!.. мĕскер тăвам?.. Таврам лайăх-
рах!..—
Хĕмленнĕ Чакка тăраť чаранса,
Хураť Тайпине çӳçе тĕм айне.
Тăрук пăшалне илет вăл хывса—
Вăрт-варт авăрлаť,—сикет мал йенне.
Хăпарчĕ Чакка малти хысана,
Вак шĕшкĕ тĕми хыçне лăпчăнса,
Пăхаť кай йенне, ак курнаť ăна:
Улт-çичĕ салтак пыраť ыткăнса;
Чупаççĕ вĕсем тӳрем çеремпе
Çӳçелĕ çатра çырма хĕрнеле;
Чакка чĕтрекен вĕри алсемпе
Тĕллет пăшалне вĕсем çинеле.
Ак, ак салтаксем çырма хысинче,—
Пăхаççĕ хытсах лаша выртнине.
Ват унтĕр-пуçлăх пурин умĕнче,—
Темскер вăл хистет хăй командине.
Шаталт!.. тет пăшал малти хысаран.
Унччен те пулмасť, хай унтĕр тӳнет.
Ытти салтаксем сехри хăпнăран—
Тӳрех çырмана... çӳçелĕх чĕтрет.
Пĕр вăхăт шăпах. Шăп пулаť çатрак.
Вилен лаша çех тепле ӳхĕрет.

Йе пуљкка лекнӗ ват унтӗр-салтак
Имшеррӗн, сиввӗн йынӑшса илет.
Чакка куҫӗсем, кӑвар пек ҫунса,
Малти хысари хунав хушшинчен
Пӑхаҫҫӗ умри ҫӳҫе-ҫатрана;
Кӗтет вӑл салтак—ҫырма тӗпӗнчен.
Ак, кӗтмен ҫӗртен, ҫырма пуҫӗнчен
Шӑлт та шалт! пӑшал сасси йанӑрат.
Кӑвак сывлӑшра, Чакка пуҫ ҫинчен,
Ик-виҫ хут пуљкка вӗҫсе шӑхӑрат.
Ҫӗкленчӗ Чакка. Пӑхат тӑвала.
Курат вӑл: инҫе, васан хӗрринче,
Шур сӗрӗм тӑрат пӗр тӗм таврала.
Анчах ҫын мӗлки ҫук ун патӗнче.
— Ех... ҫырма тӗппе шӑвӑнна иккен!..
Чим, епӗ сире!..—тейейчӗ Чакка.
Тӗллет вӑл тӗме хунав кӑкӗнчен—
Улт-ҫичӗ хутчен шӑхӑртат пуљкка.
Улт-ҫиччӗ персен, пӗччен тӗмӗрен
Вӗлт те вӗлт! вӗҫрӗҫ хайхи салтаксем;
Ҫырма тӗпнеле тапса сикнӗрен,
Чакка куҫӗнчен сирлеҫҫӗ вӗсем.
Пӗччен ҫич ҫынна ҫӗнтернӗ пирки
Лӑштах пек пулат Чаккан вут чӗри.
Васкат вӑл часрах умри чӑтлӑха:
Анчах—Тайпи вилӗ!.. Лӳч! ӳкет Чакка.

## XXI. ИНКЕК ÇИНЕ СИНКЕК.

Ларат ак Чакка Тайпи умĕнче
Ун путнă куççем сÿннине пăхса,
Пăтравлă шухăш çаврат пуçĕнче—
Иртейнĕ çулсем килеççĕ аса:
Умрах ак, умрах ачалăх кун-çулђ,—
Тайпи те маттур сар хĕрччĕ ун чух.
Маттур хĕрĕсем татах пулнă пулђ,
Анчах Тайпи пек пулман-тăр çав... Çук!
Çич-сакăр çултах унпа паллашса,
Çерем çисемпе сиксе чупнисем;
Вун-вуник çултан пĕр-пĕрне савса,
Пĕр-пĕрин йенне чĕре туртнисем;
Йĕçре, вăйăра йе урăх çĕрте
Час-час тĕл пулса сăмах выљатни;
Ÿссе ар пулсан, иккĕш пĕрлешсе
Умри ĕмĕте тытма хапсăнни,—
Ак пурте, тем те, пулса иртнисем
Вĕркеççĕ Чаккан çунан пуçĕнче.
Вĕркеççĕ... ак, ак курнаççĕ вĕсем
Сÿнсе хытакан Тайпи куçĕсенче!
...Чылай тĕмсĕлсен, тăрат хай Чакка.
Тайпи виллине хурат хÿтлĕхе.
Ывтат пăшалне. Хусах луçăла,
Сăлтавсăр танккат рашча сĕмлĕхне.

* * *

Йӗлме рашчипе ишсе пынӑ чух
Тухат ак Чакка пӗчӗк ӗшнене.
Кунта кайӑк ҫеҫ... никам урӑх ҫук.
Патрах пӗр куккук хирет сассине.
Ҫӗртен вун хӑлаҫ хӑпарнӑ хӗвел
Ӗшнен пӗр йенне ҫутатнӑ самай,
Арман пӗвинчен ҫӗкленнӗ вӗтел
Хыт тикӗлтетсе вӗҫет улӑх май.
Ҫерем сывлӑмне сӑптӑрса утса
Чакка сулланат ӗшне леш йенне.
Кӗтмен те акӑ, тӑрат вӑл тухса
Кушлавӑш ҫулӗн ӗрешӗ ҫине.
Пырат вӑл ҫулпа. Йӗлми-вӗрени—
Ун икӗ йенпе лараҫҫӗ тӑпах.
Нумай та кайман. Ак, темскер купи
Умрах, ҫул ҫинче курӑнат часах.
Ҫывхарчӗ Чакка. Пӑхат—суланат...
Кӑштах вӑл ӳкмест. Чӗтрет ун чӗри.
Хӑрушӑ! Тискер!—Мӗскер вӑл курат?
— Йуксар, Йатарин, тӗпӗнче Ентри—
Ҫуркам пек виҫҫӗн выртаҫҫӗ пӗрле!..
Вӗсен тумӗсем—ҫӗтӗк-ҫатӑк, йун...
Тӑхлан пек куҫӗсем пӑхнӑ пӗлӗте.
Мӗнле асапна, мӗнле панӑ чун?!
Чакка вӑй илсе вӑрт-варт, хӑвӑртрах
Ҫӗклет вӗсене. Курат сурансем...
Ҫаврат, хыпашлат—суран тавралах:
Пени анчах мар—штыкпа чикнисем!
Ахлатрӗ, ларчӗ вӑй кайнӑ Чакка.
Пӗр тапхӑр чул пек ларат вӑл хытса.
Тӗллет куҫсемпе таҫта айакка,

Тайпи сӑмахне илет вӑл аса:
„...Вӗлерчӗҫ персе, тарма тӑнӑ чух...“—
Каларӗ саспах вӑл ку шухӑша.
— Пӗтерчӗҫҫке, ех!.. Пӗтрӗҫ!.. Манма
çук!..
Тӗнче... Ех!.. саккун... çунтарат̆ ӑша!..

* *
*

Лармас̆т те тӑмас̆т минтренӗ етем,
Пуçлат̆ ун çӗтме тертленнӗ тӑн-пуç.
Пуçа итлемен ырхан урасем
Утаççӗ тӗлсӗр,—ӑçта туртат̆ куç.

* *
*

Йӗлме рашчинчен хӗвелтухӑçре
Пурнат̆ çӗрхуçи—пӗр Кулђцав улпут.
Сӗвек улӑхри тӳрем çеремре
Ларат̆ ун чӑнккас ик хутлӑ çӗн çурт.
Çуртран инçе мар, курнат̆ вырӑс йалђ.
Ку йал çыннисем—улпут чурисем,
Куçайнӑ кунта, нумай та мар, халђ,—
Вун çул патне çех пурнаççӗ вӗсем.
Улпут йалӗпе кӳршӗ чӑвашсем
Вун çул иртсе те пӗрле хутшӑнман.
Вун çул хушшинче кӑвак мучейсем
Вӑл улпут йатне сахал ылханман.
Чӗнменçке, кӗтмен ун пек выç куçа,
Касат̆ те илет чи лайӑх çӗре!
Халђ ӗнтӗ ан пыр,—унта вӑл хуçа...
Патри халӑха йарат̆ хӗн чире:
Алри халӑхне уртса, хӗтӗртсе,
Йарат̆ вӗслетсе чӑваш çинеле;
Чӑваш уй-хирне ватса, тӗшӗртсе,
Хӗсет хӑйсене вӑрман тӗпнеле.

* * *

Патрах йытăсем хайаррăн вĕрни
Вăратрĕ вил пек çывран Чаккана.
Ун пуç вĕçĕнчи лапсак вĕрени
Лăп-лăп! ал çупса хускатрĕ ăна.
Çĕклет вăл пуçне: унтах ик пурсуй
Тăраççĕ чăлт-чалт сиксе, харлатса.
Йытсем тĕлĕпех курнаŤ тикĕс уй,
Унта тăрантас пыраŤ кустарса.
Чакка ăнланмасŤ,—ăçтан, мĕн майпа
Тасти йут çĕре килсе ўкнине.
Анчах астăваŤ:—синкер хуйăхпа
Пур хал, пур тăн-пуç пĕтсе çитнине...
Унччен те пулмасŤ, чарнаŤ тăрантас,
Хыçран ун патне вĕçет йуланут.
Тăрук илтĕнет пĕр хулăм уç сас.
Чакка тавçăраŤ: „Ку—Куљцав улпут!"
—Обйешчĕк!—тет вăл,—кай-ха, мĕн вăл,
пĕл:
Ав Ромпа Трезор ураççĕ унта...
Тен, вăрă пулсан,—тыт, тух уйа—чĕл!
Уйра сухаççем... йарăп сан пата,—
Тейейчĕ улпут, вĕçет малала.
Йуланçă сикет йыт вĕрнĕ йенне.
ПыраŤ вăл, тайăлаŤ, тытаŤ пăшала:
— Ромкă... туртса тух!—хушаŤ йыттине.
Унччен те пулмасŤ, пăру пек мăн йыт
Сикет те хыпаŤ Чаккана хулран.
Чакка карт! сиксе чышаŤ ăна хыт.
Йытти, ыткăнса, çыртаŤ ураран.
Чакка йытсемпе тĕрмешнĕ хушра,
Улпут йуланçи çитет ун патне.

— Мĕскершĕн вĕслен?.. Чарăр йыттăра! —
Кăшкăрчĕ Чакка улпут çыннине.
Пĕр тапхăр вăрçса çилне сĕвĕртсен,
Обйешчĕк чарăт. Йытсем те шăпах.

Обйешчĕк:

Çӳревçĕ тетне?.. Аван ес пуплен,
Анчах тем тесен те есĕ таркăнах...
Улпут ак тĕпчĕ, пĕлĕ ес камне.
Йарăт кантура вăл, вара сывă пул!
Анчах пуçу шел-тĕк, тавай мĕн пурне!
Нумай пуљ сирĕн çаратнă ыр мул...

Чакка:

Хаљччен мул тытман. Мĕн пурри — пĕр
пуç.
Çак пуç та шел мар: кас, тат ăна, хуç!

Обйешчĕк:

Чăваш, ес — тĕнсĕр! Чăваш — етем мар...
Сана хаљ тĕнтсен те пулмасăт нимле сут.
Çавах тивем мар. Айта-ха, кайар.
Тĕпчĕ те майлĕ сана ак улпут...

Чакка талпăçăт йуланçă умпе.
Пурсуй йытăсем чупаç ыткăнса.
Тухаççĕ уйа. Рашча çуммипе
Кас-кас çил вăшкăт тусан хускатса.
Хыçăл йеннеле сулăннă хĕвел
Çаплах-ха хĕртет шенкер тӳперен.
Ирпе йанкăшан çатăлти вĕтел
Кăшт çеç сас парăт арман пĕвинчен.

* * *

Обйешчĕк умпех утăт-ха Чакка.
Çул икĕ йенпе кашлăт кĕр калчи.

Лере хресченсем тӑвассӗ ака.
Унтах ав йурлаҭ пӗр сӳре ачи.
Улт-çич ана пӳ малта, улӑхра,
Лараҭ чӑнкамас ик хутлӑ çӗн çурт.
Унтах пӗчӗк йал, пахча—йал тавра...
Ку пурлӑх хуçи—Куљцав, хай улпут.
Чакка таврала пӑхса пынӑ чух,
Пыраççӗ чупса хирӗç виç мужик.
— Çак çӗтӗк çех-и?.. Татах-и, йе çук?—
Ыйтаҭ хыпӑнса пӗр тӗксӗм старик.

Обйешчӗк:

Çак çеç. Сире кам... улпут йачӗ пуљ?

Мужиксем:

Улпут йачӗ çав, сана пулӑшма.

Обйешчӗк:

Ӑçта халљ улпут—килте-и, Коссуљ?
Кайатпӑр унта çакна кӑтартма.

Коссуљ-мужик:

Çук, вӑл килте мар. Алмачӗн йалне
Вӗçтерчӗ пулас—йулташӗ патне...

Обйешчӗк:

Ӑ-хӑ... Çук апла... Килмест вӑл касчен.
Ку çынне ӑçта хупас ыранччен?!.

Коссуљ:

Мӗнле çӗтӗк вӑл? Вӑрман вӑрри-и?
Йе тасти пулмас, сӳсленчӗк етем?

Обйешчӗк:

Вӑрман вӑрри мар, темле, урӑххи...
Шанмастӑп епӗ—тӳр çын-ши ку, тем?!

Мужиксенчен пӗри:

Пахомкӑ çынни пуљ тетӗн-им, еппин?
Анчах та вӗсем кунтах-ши халљччен?..

Обйешчĕк:

Çавсен пулмала... Пахомкă шайкки
Çак иртнĕ каç çеç кĕнĕ кантура.
Мĕскер тăвас тен? Пăлхатнă такки...
Ик-виç салтака вĕлернĕ, ара.
Йĕрлеççĕ таврах. Анчах та çапах
Усал Пахомкăн сехри-мĕн хăпмасť!
Хăй çыннисене çаклатнăшăнах
Урать ĕнтĕ вăл: таварма шутлать.

Мужиксем (*хавасланса*):

Н-да-а... хăрамасť! Хăйулă, маттур!..
Çаплах выртаççĕ-и леш хай вилесем?

Обйешчĕк:

Выртаççĕ çаплах... илмеççĕ, тем мур!
Иртсе çӳреме вăл çулпа кичем.

Мужиксем:

Н-да-а!.. çӳçенчĕк! А кăна мĕнле,
Ăçта усрас, тетĕн, улпут киличчен?

Обйешчĕк:

Улпут хăнаран тахçан килмеле?
Йулташĕ панчен килмест вăл каçчен...

Коссуђ:

Чим-ха, Карăпыч, епир каçхине
Кайатпăр выртма малти улăха.
Ертел пĕчĕк мар, шан ес ман çине,
Кăна ыранччен сыхлатпăр унта.

Обйешчĕк:

Уйра май килмест. Хупатпăр ăна.
Тартсан, мĕн тусан—çийетĕн пуçна!

Коссуљ:
Хупсан та хурал кирлĕçке вара,
Çĕрле арçынсем пурте выртмара.
Мужиксем:
Чăнах, чăн, Карпăч, Коссуљ калани;
Шан есĕ пире. Тартмастпăр, ни-ни!

* * *

Чылай шавласан, Карпăч килĕшет.
Коссуљ аллине парать Чаккана.
Чакка таврала халăх хĕвĕшет;
Унтах ак лартса çыхаççĕ ăна.

## XXII. УЛПУТ ХРЕСЧЕНЁСЕМ ПАТЁНЧЕ.

Çеремлĕ васан. Сайра йăвăçсем.
Васан варринче пĕр шывлă çыран.
Çыран хĕрринче—хăва хуллисем.
Унтах тек кĕрлет пĕр йапăх арман.
Çерем çийĕнче, тĕмсем хушшинче,
Каçхи тĕттĕмре çиçет вут çути.
Васан кай йенче, тăвайкки çинче,
Ларат йешĕрсе ват йуман кати.

* *
*

Сиксе çунакан кăвайтă тавра
Лараççĕ сĕнксе выртма çыннисем.
Тĕмсем хушшинчи çерем-курăкра
Хăрт-харт! тулхăраç вĕсен лашисем.
Кусем—куљцавсем, кашни каçхинех
Лаша çитерме анаççĕ кунта.
Çитернĕ чухне, вутне чĕртсенех,
Лараççĕ вара халлап çаптарма.
Кунĕпех улпутшăн тертленнĕ çынсем
Имшеррĕн, майпе пуплеççĕ вĕсем;
Пуплеççĕ мĕн-мĕн ĕçлени çинчен,
Йара кун ĕçпе ĕшенни çинчен.

Ак халљ те вĕсем, ытти чух пекех,
Сиксе хĕмленен вут тавра ларса,
Пуплеççĕ текех, анчах хĕрўрех.

Унтах ак Коссуҗ ларат палкаса.
Коссуҗ хыҫӗнчех, ҫерем ҫийӗнче
Выртат ал-урне тăллана Чакка.
Сӳсленнӗ ҫӗтӗк кӗпе ун ҫинче,
Ҫара пуҫ вӗҫне тӗкӗлет каска.
Выртма ҫыннисем—ватти те вӗтти—
Йумах-халлапа ҫаптарнă хушрах,
Тӗллеҫҫӗ куҫпа Чаккана кашни.

Калаҫу:

— Ку кам-ши, вара? Ай, типнӗ, ырхан!..
— Пахом ҫынни мар-и? Йар ăна, Ҫтоп-
пан!..

Коссуҗ (Ҫтоппан):

Йама йурамаст!.. Илнӗ хам ҫине.
Ыран ак улпут йарат кантура.
Тӗпчеҫҫӗ унта вăл кам иккенне.
Хут кам пулсан та кăнтаҫҫӗ вара.

Сасăсем:

—Ех, хăрăк ҫуркам!
—Ăҫтисем ес? Кам?..

Чакка:

Еп—килсӗр етем... Вӗри чунлă ҫын:
Пур пусмăр-хурра тӳссе тăманскер...
Ак, ҫавăн пирки пур пуҫлăх, пур чин
Йӗрлеҫҫӗ мана. Ман пурнăҫ синкер...

Чаккан йулашки сăмахне илтсен,
Шăпланчӗҫ ҫынсем:—Пахом ҫыннийех!..
— Тавай-ха тӗпчер,—теҫҫӗ мужиксем.
Пыраҫҫӗ пурте Чакка патнерех.
Анчах ак Коссуҗ пуҫлат кăшкăрма:
— Калап улпута!—тет, чарат калаҫма.



* * *

Çуркаç тӗлӗсем. Сӳнет тул çути.
Тӳлек те тӗттӗм—тӗнче хӗррипе.
Тăпах, сикленмест ват йуман кати.
Çӗр пин çăлтăрпа чалхăраť тӳпе.
Çурçӗр çитнипе çӗршыв тӗлӗрет.
Çывраççӗ ӗнтӗ выртма çыннисем.
Улт-çичӗ çын çеç выртман-ха, пуплет.
Темскер, шăппăн çеç шутлаççӗ вӗсем.
Ак кӗç çӗкленет пӗр çамрăк мужик,
Пыраť вăл Чакка патне йăпшăнса,
Тӗкет Чаккана:—Ей, тус, нимле шик
Ан пултăр санра пиртен хăраса...
Коссуђ хађ çывраť хыт ӗшеннӗрен...
Пӗлтерччӗ пире ес хăвăр çинчен:
Ăçта хађ Пахом? Пӗлетне ăна?

Чакка:

Пахом?.. Пахома пӗлеп...
Анчах мӗн тума вăл кирлӗ сана?

Мужик:

Маттур вăл, паттăр. Ăна хисеплеп.

Чакка:

Ес тӗрӗс!.. Пурте Пахом пек пулсан,
Ниçта та, никам чура пулас çук...

Мужик:

Ăçта-ши вăл хађ çӗмрен-утаман?
Ăна чухăнсем кӗтетпӗр чунран.
Пӗтетпӗр епир улпут ӗçӗпех.
Ак, çимӗк çитет,—епир акарах!
Кантур таврашне çӗмрекенскерех,
Куђцав улпута ма манчӗ вăл?.. Ах!

Чакка:

Пахом—аслати, хӑватлӑ тӗрек!
Анчах паллӑ мар вӑл халӗ ӑҫти.
Ват луҫ хыҫӗнчен арӑслан хунӑ пек,
Хӑват хаљ ӑна апшур каманти.

Мужик:

Кунтах пуљ... Леш каҫ кантур патӗнче
Вӗлернӗ вӗсем ик-виҫ салтака.

Чакка:

Ӑна Пахом мар. Пахом хаљ инҫе;
Кунти ӗҫсене ҫавраҭ-тӗр Чакка.

Мужик:

О, паттӑр Чакка! Вӗсене мӗнле
Пӗлен ес йӑлтах? Йе есӗ пӗрле?

Чакка:

Еп хам вӑл—Чакка...
Выртап ак ҫапла!

Мужик:

Ой!.. Чакка ес-и?..
Чим, йулташсене ман пӗлтерес-и?
Ҫӑласчӗ сана...—тейейчӗ мужик.
Сикет вӑл ваштӑрт! вут тепӗр йенне.
Унта ларансен ҫӳҫенет ӑшчик.
Хускатрӗ мужик йулташӗсене
Ак пурте шӑппӑн, пӗр сассӑр утса,
Лараҫҫӗ пырса Чакка пуҫ вӗҫне.
Ак хӗрӳ халлап кайаҭ пуҫланса.
Чакка пӗлтерет тӳсни-курнине.
— Ей, Фиљӑ! Кољӑ! Йегоркӑ!—тимлер,
Мӗнле те пулсан ҫӑлар Чаккана...
Коссуљ килӗшсен, тӑвар ак мӗскер:
Халех ак салтса йаратпӑр кӑна.

Ирпе Карпӑча тыттарар ҫапла:
Ҫуркаҫ тӗлӗнче Пахомкӑ шайкки
Сасартӑк пырса хӑтарчӗ вӑрра;
Хӑрарӑмӑр, тейер. Ӗненӗ такки?—
Тейет хӗмленсе хай ҫамрӑк мужик.
— Аван, пит аван... пултаран, Иван...
Аван ӑс, Ваҥӑ,– терӗ пӗр старик.
— Вӑрат Коссуле!—терӗҫ ыттисем.
Хӗрӳлӗ сассем ӳссех пынӑран,
Коссуљ ак хӑйех вӑранчӗ,—кичем.

Коссуљ:

Ну туртрӑм пӗр кас тутлӑ ӑйӑха!
Хаљ ӗнтӗ ирччен ларатӑп хурал.

Мужик:

Тӑрас паť, тӑр, тӑр! Ӑс пар-ха пухха,
Ес майлӑ пулсан, ӗҫ тухӗ кал-кал.
— Итле-ха, Коссуљ,—теҫҫӗ мужиксем,
Чакка ҫинчен ак калаҫҫӗ вӗсем.
Малтан чиперех тӑнланӑ Коссуљ
Иван шухӑшне илтсе пӗтерсен,
Сасартӑк ураť:–Ай-вай, аван пуљ!
Мӗн пулӗ тетӗр, улпут хӑй пӗлсен?!
Чӗр пуҫҫӑн сӗвет вӑл пирӗн тире!
Еп панӑ сӑмах ӑна тартмасса!
Ех, ухмах... сире-е-е...
Кӑтартӑп пӗрре!—
Йуман пек патвар, кӗрнеклӗ мужик
Иван ҫинеле йунаť, талхӑраť.
Иван пичӗ ҫинче хускалаť кӑшт шик.
Никам та чӗнмест. Коссуљ ҫех йанраť.
Ун йӑвӑр сасси, чул пек йӑванса,
Ҫӗмрет ак тӗттӗм тӳлек улӑхра.

Çывран ачасем карах вăранса,
Лараççĕ йăлт-йăлт сикен вут тавра.
Хĕрӳ чун Иван, чаппан пĕркенсе,
Кайса тĕршĕнет çӳçе тĕм айне.
Коссуљ çинеле аллипе сĕлтсе:
— Тăмпус!—тет, шăлат сара уссине,
Унтах вăл хура тӳпене пăхса,
Тĕллет тинкерсе çут çăлтăрсене.
Çĕр пин çăлтăрсем, сиксе выљанса,
Чĕнеççĕ хăйсен ытамĕ çине.

* * *

Тĕнче аслăхпе йăпанна Иван,
Ак хăй те туймаст, чĕри хуйхине
Пуçлать йухтарма капланнă ăшран,
Пуçлать вăл хăйĕн савнă йуррине:

— Не шуми, мати зеленая дубравушка,
Не мешай мне, доброму молодцу, думу думати...
Как заутра мне, доброму молодцу, во допрос идти
Перед грозного судью—самого царя.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Йурра пĕр çавра шăратнă тĕле,
Вырттма ачисем пĕри те тепри
Пыраççĕ шуса Иван патнеле.
— Айта, Иван, йар!..—Чĕрлет ун чĕри.

— Еще станет меня сам-судья спрашивати:
„Да скажи, скажи, детинушка, крестьянский сын..."

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Хресчен таркăнсен йуратнă йурри
Вĕçет, йаранать хура сывлăша.
Ват йуман рашчин сĕм чăтлăх варри

Ҫӑтат ку йурра,—кайаҫ йынӑшса:

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

„Что умел ты воровать, умел ответ держать;
Я за то тебя, детинушку, пожалую
Среди поля хоромами высокими,
Что двумя столбами с перекладиною..."

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ак йурӑ пӗтет. Ун вӗҫӗ хуллен
Вӑљ-ваљ аванаҫ рашча хӗрринче.
Чӗрлет чун-чӗре выртма ачисен;
Хаваслӑх, йӑслав вӗсен хушшинче.
— Иван!.. Ей, Иван!.. Пуҫла-ха „Горе"...
— Ҫук, ҫук... ӑна мар, урӑхне йурлар...
„Уж как пал туман на сине море!"..
— Ҫак йурӑ аван...—Чим хаљ, ӑна мар...
Анчах тавлашу пымасҫ нумайа.
Ҫӗнтерчӗ часах „Горе"... йурласси...
Иван пурне те ҫавраҫ пӗр майа,
Каллех ак йантраҫ ун уҫӑ сасси:

А и горе, горе, горева-а-аньице!
А и лыком горе подпоя-са-лось,
Мочалами ноги изопу-у-таны!
А я от горя в темные леса-а-а...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

Вӗҫе-вӗҫ тӑсан йурӑсен кӗвви
Сӗм улӑх тӑрӑх йухаҫ шӑранса;
Йанравлӑ сассен пӗр ҫирӗп тӗвви
Тӗнче хӗрринех вӗҫет йаранса.

* * *

Ире хирӗҫле. Сӗнкет вут хӗрри.
Кӑвайтӑ вутти сӳнсе кӗлленет.

Хуллен çеç йумах çаптарать пĕри,
Нумайшĕ çывăрать йе кăшт тĕлĕрет.
Иван çĕкленсе пăхать вут йенне.
Курать вăл—Коссуљ чунран, пиккенсех
Туртать, пăркăчлать Чакка ал-урне.
Чаккийĕ вил пек вызтать куклеисе.
— Ах, анчăк! Сухал!..—тейейчĕ Иван,
Хура чаппанпе пĕркенсе выртса...
Автан авăтнисем илтĕнеç йалтан.
Арман йенче шыв сикет шарлатса.

* * *

Уйар тӳпене карнать шурăмпуç.
Нӳр улăх тăрăх сарлать шур тĕтре.
Иванăн чăл-пар уçăлать пит-куç:
— Е-их, кăвакçут çиçет тӳпере!..—
Çӳçенчĕ Иван, пăхать таврана:
Коссуљ ӳпĕнсех туртать айăха.
Вăл хăй уринчен çыхнă Чаккана.
— Е... ку çывăрни пире лайăх-ха!—
Шутларĕ Иван хуллен çĕкленсе;
Пырать вăл Чакка патне йăпшăнса.
— Чакка!.. хатĕрлен! — тет ăна тĕксе.
Ак вăл пур çыхха пăрахрĕ салтса.
— Вĕçтер ну, часрах!.. Ну, пире ан ман!
Пахом таврăнсан—тӳрех кунтала!
Ну, сыв пул! Вĕç!..—тет Чаккана Иван.
Чакка йăпшăнать—шăвать уйала.

## XXIII. САЛТАКСЕН ТИСКЕРЛĔХĔ.

Апшур каманти килни тăват кун.
Хĕрсех вăл шыраť Пахом шайккине.
Ку хуш йал-йышсен çук ĕнтĕ чĕр-чун—
Кĕтеççĕ пурте синкер кунсене.
Кушлавăш йалĕ чĕтрет çўçенсе,
Кĕтет вăл камант калла пырасса.
Нумайĕш тарнă вăрман тĕпнеле,
Пуйан йышсем çеç йулнă лăпланса.
Хăш пуйансем те пайан ирпеле
Килне питĕрсе, мулне тийесех
Вĕçтернĕ таçта—Хумпуç йеннеле.
Çтенкке, Митрапан... пытаннă йышпех.
Апшур каманти каллех çитесрен
Хăраççĕ вĕсем Пахомран ытла:
Хаљччен чăваша курман салтаксем
Кулни, çаратни—чăтма çук йала!

* *
*

Шăп кăнтăр тĕлеш. Уйар та вĕри.
Кас-кас çил анчах уçаť сывлăша.
Вил çын пек—тапмасť Кушлавăш чĕри,
Путаť вăл йăлтах салху шухăша.
Еççи пек, шăпах урам хушшинче:
Сайра çеç чăх-чĕп йе йыт чупкалаť.
Çак тĕл ак, Текей пури çумĕнче,

Ик-виçĕ арçын тăни курăнать:
Текей—хăй, Итрен, Хура Йаратав
Тăраççĕ унта тем канашласа.
Вĕсем те кичем. Çук нимле йăслав.
Тепле, автан çех автаť шарлатса.
Иртет ак самант. Сасартăк уйра,
Вăрман йеннеле лăркаť йыт сасси.
Нумай та иртмест унтах, Тукасра,
Шăлтăр-р-р! илтĕнет урапа кусси.
— Çитеççĕ пулас?!. Çавсем!.. Салтак-
сем!..
Мĕнле хăналас?!—хумханаť Текей.
Ак, пурте сасса хускалчĕç вĕсем,
Пурин те чĕри чĕтрет,—çемçеккей!

* * *

Ак çитет йала тулли çирĕм лав,
Кашни лав çинче ик-виçĕ салтак.
Пуçланчĕ йалта сивлек сас-йăслав,—
Йал мар, вăрман та йантрарĕ хытах.
Анкана, выçă лўппер салтаксем
Кашни хапхана чупаççĕ йуртса:
Лутра та ырхан вĕрлĕк хапхасем
Лăчăр та лачăр ўкеç тайăлса.
Ум хыçлăн пыран лавсем, лашасем
Капланчĕç çитсе хурал пўрт умне.
Ĕшеннĕ вирйал чăваш лавăçсем
Имшеррĕн пăхаççĕ пĕр-пĕрин çине.
Малти лав çинчен сикет офицер.
Çĕклет вăл алла:—А ну-ка, çигнал!..
— Тў-тў! тў-тў! тў-тў!..
— Тў-тў-тў! тўўў-тў-тў!..

Мĕкрет йĕс тăрпа. Йанраť пушă йал.
Ку вичкĕн йанрав çӳçенчĕк, тискер.
— Тӳ-тӳ! тӳ-тӳ! тӳ-тӳ!..
— Тӳ-тӳ-тӳ! тӳӳӳ-тӳ-тӳ!..
— Тӳ-тӳ-тӳ!!!
Нумай та иртмест... ик-виçĕ самант, —
Йăлтах пухăнаť арканнă камант.

* * *

Çырма хĕрринчи пуш пура хыçне:
Хăйулăх пухма кăшт тăнă виç тус
Хускалнăччĕ çеç салтаксем йенне:
— Çук, Текей пичче, пымасп, хуť те пус!..
Хăрап, ырра мар,—терĕ Йаратав.
Текей шăртланаť, вăрçса пăрахаť:
— Патши хамăршăн салтак йараť, ав...
Йураť-и тарма?.. Кам ырă тăваť?!—
Тесе ӳкĕтлет хумханнă Текей.
Анчах Йаратав ытла çемçеккей!
Текей ӳкĕтне тăмасť тăнласа,
Çырма тĕппеле шăваť тăвала.
Итрен те хăраť. Çапах та хытса,
Текей хӳттипе утаť малала.

* * *

Хурал пӳрчĕ умĕ—сип-симĕс çерем.
Ват чăрăш кашлаť çерем варринче.
Унтах—ĕшеннĕ утсем, лавăçсем;
Пĕр ушкăн салтак лавсем умĕнче.
Тин çеç пухăннă лӳппер салтаксем
Çтена пек тăраççĕ ик ĕрет пулса.

Ик вата капрал, чулланнă çынсем,
Кĕтеççĕ приказ, йупа пек хытса.
Хурчка пек каскăн йаштак офицер,
Ырхан йал çине хăйаккăн пăхса,
Çерем çийĕпе уткалаť чипер,
Утаť хĕç йĕнне чăнкăртаттарса.
— Робйата!..—тет вăл улпут чĕлхипе,—
Çӳрерĕмĕр нумай, тӳсетпĕр чылай.
Çӳрерĕмĕр луçпа упа йĕрсемпе!
Ну, уншăн кунта кантарăп самай.
Халех ку йалта пуху пухтарап.
Сире ваљљи ак, кашни çын йатнех,
Пĕрер пуç така тытса пустарап.
Тĕнсĕр чăваша вĕрентпĕр тинех!..

* *
*

Хĕрӳ офицер сăмах çапнă чух
Текейпе Итрен çитеççĕ утса.
— Вашĕ плахороť!.. спаçибă тем чул...
Спаçибă...—терĕç вĕсем пуççапса.
Улпут тăп чарнаť, тĕллет çаксене:
— Сутник-и ес... кам?—тет вăл Текейе.
— Та, та, çĕн сутник... ех, тӳссе хĕне!..
Пĕр ырă тумтир йулмарĕ çийе...
Ак кун ашшĕне пăрахрĕç касса...
Ех-хех!..—тет Текей, маларах пырса.
Анчах офицер тăмаст итлесех,
Текей патĕнчен пăрнаť тӳртĕнрех.

Офицер:

Ну, çитĕ, сутник, халех пуху пух!
А ес, çамрăкки,
Виç пăт така ашĕ халех тупса тух!



Текей:
Вашĕ плахоротĭ.. никам çук йалта...
Пур халăх таçта... шалта—вăрманта...
Офицер:
Суйан!..
Текей:
Суймастăп. Чунран...
Офицер:
Суйатăн, сысна...
Лекмен-и сана!..
Текей:
Чăнах... чă... чăнах,
Вашĕ плахоротĭ... (*ÿксе пуççапать*).
Ак, шырăр йăлтах,
Кашни килренех хăтĭ...
Йулсаччĕ вун çын пуль,—
Вĕсем те халь çук...
Офицер:
Мĕн-ма ес йатăн вăл йытăсене?
Текей:
Нимпе чарма çук... йăлт тарчĕç вĕсем.
Офицер:
Тараççĕ тен, е?..
Вĕрентĕп сире!..
Апла-тăк тавай вунă пуç така!
Халех тăрантар мĕн пур салтака.
Текей:
Халех пулаймасть: кĕтÿ çук уйра.
Таçта, халăхпах вăл тарнă ара...

* * *

Текей вырăсла пĕлнĕ-пĕлменрен,
Унпа калаçса йĕрĕннĕ улпут—

Пуҫне вашт! ывтаť, пăрнаť Текейрен;
„Бакенбард“ măкне шăлаť ик-виҫ хут,
Хываť шĕлепне, утаť йаранса.
Хăрах алли ун саблипе выљаť.
Ак вăл, пĕр кана утса ҫавранса,
Чаранаť те хайар сасăпа пуҫлаť:
— Рот-та-а-а, ҫмирно-о!
Слушай мою команду...
Ёшеннĕ, лўппер тăлпан салтаксем
Камант сассипе тўрленчĕҫ чăнках.
Вĕсен, улма пек, чармак куҫĕсем
Офицер ҫине тĕллеҫ харăсах.
Хĕрў офицер ҫăвара караť;
Вăл хăй камантне, килрен кил кĕрсе,
Йала тĕппипех тустарма хушаť.
— Кам лекнĕ алла, ăна сĕтĕрсе
Тўрех ман пата!—тет вăл кăшкăрса.
Выҫă салтаксем—хавас приказа.
Пĕр-икĕ самант... мĕн пур пек салтак
Чăл-пар! саланаť пуш йал хушшине.
Хĕрў офицер, ĕшеннĕ шăмшак,
Кĕрет канмала Алапит килне.

* * *

Хĕвел каҫ йенче. Шенкер тўпере
Шăваҫҫĕ сайран кăтра пĕлĕтсем.
Вăш-вăш ҫил вăшкаť хĕвеланăҫрен.
Патри сĕм вăрман кашлаť тек кичем.
Йала тĕппипех тусса пĕтерсен,
Пур пек салтаксем—каллех пĕр ҫĕре.
Ватă капралсем ăнман ĕҫ ҫинчен
Параҫҫĕ рапăрт пуҫ-офицере:

— Ваш высокороди!.. Есир хушнипе
Ухтартмӑр йала килрен кил ватсах.
Анчах—никам ҫук... тупмарӑмӑр ҫиме...
Пӳртсем, хуралтсем пурин те пушах!
Мӗн тума хушан?—тет ватӑ капрал.
„Матур“ офицер тӑмасӗ шутласа,
Пуҫлатӗ вӑл хуллен:—Тӗп пулӗ ку йал...
Ил вунӑ салтак. Икшерӗн йарса;
Тивретӗр ӑна пилӗк кӗтесрен.
Кӗллентӗр тӗппех!—терӗ офицер.
Хыҫра тӑракан Текейпе Итрен
Тӑнлаҫҫӗ кӑна:—„Ах, Итрен, мӗскер?
Йала вут тӗртес темест-и... ей-ей?!
Пӗтетпӗр, ех тур!.. Айта, тилмӗрер,—
Чӳхенчӗ чӗри хусканнӑ Текей.
Пыраҫҫӗ вӗсем офицер умне,
Лараҫҫӗ кӑпӑрт чӑркуҫҫи ҫине:
— Вашӗ плахоротӗ!..
Хӗрхенӗр пире...
Йалпех ҫунтарсан та,
Хӑвар ик киле!.. *(ӳксе пуҫҫапаҫҫӗ).*
Ак сирӗн ваљљи
Пулатӗ ҫимели...
• • • • • • • • • • • • • • • • • • •
Ҫиллес офицер кӑшт сиввӗн кулса:
— Чӑваш та чӑваш!—тет ҫеҫ вӗсене.
Итренпе Текей—шарри! ҫухӑрса,
Ача пек йӗрсе чупаҫ килсене.

* * *

Нумай та тӑмасӗ, Кушлавӑш ҫинчен
Унтан та кунтан сӑр сӗрӗм палкатӗ.

Кĕçех ак— хĕлхем... çулăм пур йенчен
Йалт-йалт! сикейсе йала вăл хуплаť.
Вут çулăм йала хыпса иличчен,
Командă шăваť кўршĕ йал йенне.
Хурал пўрт панчи ват чăрăш пĕччен
Кашлаť, чыхăнаť йўçĕ сĕрĕмпе.

## XXIV. ЧАККА—ЙАЛ-ЙЫШ СУТЁНЧЕ.

Ирхи апат тёлё.
Кушлавăш çинче
Шăват хура пёлёт.
Кўтет çут тёнче.
Ак çак самантрах хёмленнё Чакка
Тухат вашкăртса рашча хушшинчен.
Курат вал уйа, курат айакка,
Анчах ак тётём палкат йал çинчен.
Чупат йал йенне вăл—хытат, тăп тăрат:
Умра ун йал çук!.. шёл кăмрăк та кёл!
Кёл-кăмрăк купи шур сёрём сарат.
Ниçта пёр çын çук! Мён-ма ку, ак пёл!?
Васкарё Чакка хăй килё йенне.
Çитет. Кунта та—кăмрăк, кёл купи!
Кăвак сёрём лач хуплат кил тёлне,
Çаплах ав çунат пёр аслăк йупи...

* * *

Кама та пулин курас тенипе,
Тăмарё Чакка,—каçат йал хыçне.
Унта каççанах, вăрман хёррипе
Курат вăл кас-кас ларан çынсене.
Кусем йал-йышсем. Çеремлёх çинче
Лараççё вёсем вак-вак ушкăнпа;
Кăшт-кашт пурлăхсем вёсен умёнче

Выртаç арканса вĕт-шак купапа.
Чакка çывхарать хăйулăн утса,
Паллать вăл унта Амаç Микине.
Çемйи умĕнче йупа пек хытса
Тăрать ку Мики. Унтах Алинке.
— Мики!.. Ей, Мики!—кăшкăрать Чакка,
Чупсах вăл пырать Мики патнеле.
Чаккан уç сасси кайать айакка,
Пăхаççĕ пурте ку сас йеннеле.
— Чакка-иç!.. Пурнан?..—тейейчĕ Мики
Икĕ аллине те ун йенне тăсса.
— Пурнап та, Мики, ну... пурнăç тӳсми!..
Йала?..—тет Чакка куççене шăлса.
Ăшчик кӳтнипе чарнать ун сасси.
— Йала салтаксем йачĕç çунтарса...
Ак çуртсăр, выçă... тӳс, кур!—тет Мики.
 Чакка:
Çапла пуљ, Мики... ыр тумĕç вĕсем,
Анчах ман пушшех... лашу... ех-хе-хех!..
Хыçран хăвакан хурал салтаксем
Ӳкерчĕç персе Тайпи-мĕнĕпех...
 Алинке:
Тайпи те вилчĕ-и?!.
Ей... ылттăн пĕрчи!..
 Чакка:
Пĕтерчĕç йăлтах... Йуксар, Йатарин,
Кĕске Ентри те çук ĕнтĕ текех:
Кунтан кайнă чух, канвуй-чунилли
Вĕлернĕ персе рашча варринчех.
 Сассем:
Вĕлерчĕç пулать!!!
Ех, мĕскĕн чунсем!.. Епир ним пĕлмен...

**М и к и:**
Ай-ай, ку хуҫаҫ!..
Лаши хуҫ пур ман...
Ай-вай ку тӗнче!..
С а с ӑ:
Ачу пурӑнаҫ-ха, хуҫаму панче...
Ч а к к а:
Иҫуш ман!.. Ҫав ҫех... Ӑҫта-ши вӗсем?
С а с ӑ:
Килмен-ха, вӗсем—Хумпуҫ йалӗнче...

* * *

Ик-виҫ самантрах мӗнпур пек етем
Пырса пухӑнаҫ Чакка таврала.
Унта та кунта ларан кил-йышсем
Пыраҫҫӗ чупсах пурте унтала.
Нумай та тӑмасҫ, хускалаҫ пуху.
Тин ҫитнӗ Итрен халӑха сирсе:
— Ей, халӑх, итле: куратра, кам ку?
Чакка!.. Ҫак ҫынҫке пӗтерчӗ пире!
Никам пирки мар, пӗр ҫакӑн пирки,
Тӗп пулчӗ пур йал... пӗтетпӗр ак хаҫ...
Ҫтенкке! Митрапан! Итле ес, Мики!
Чакка ӗҫӗсем каҫмаҫҫӗ ахаҫ!..
Мӗн пур йал-йыша инкек кӳрекен—
Халех вӑл тивӗҫ пур халӑх сутне!
Кушлавӑш никӗс ҫунса пӗтиччен
Хуратпӑр ӑна пайан вут ҫине!..
Ҫтенкке, Йаратав, Куштан Митрапан,
Вӗлернӗ сутник ывӑҫ—Кӗркури
Тӑраҫҫӗ карах хыҫри вырӑнтан:
— Тытас та вутта! Пӗттӗр арҫури!..

Е-е-е, му-ур!!!—ҫӗмреҫҫӗ ҫиллес сасăсем.
Ак ҫак самантрах хăрнă Чаккана
Тытаҫҫӗ вăйлăн ҫирӗп аласем,
Ҫунан йал йенне туртаҫҫӗ ăна.

* * *

Пӗччен Чаккана туртма тапратсан,
Сасартăк пуху пуҫлать хумханма.
— Ан тивӗр, Итрен!.. Пăрах, Митрапан!
Ахаль те ҫыннун шăммисем анчах...
— Ан тивӗр!!!—теҫҫӗ улт-ҫиччӗн пӗр кас.
Малтан хыттăнах хирҫеймен Мики,
Чакка май сассем пулнăран пулас,
Тăрук ҫӗкленет. Йантрать ун сасси:
— Ҫтенкке!.. Митрапан!..
Кулатăр есир пӗтнӗ Чаккаран?!
Ну, йарăр халех!—тет вăл кăшкăрса.
Хăй ҫак вăхăтрах тытать Итрене.
Итрен талхăрать. Микийе пăвса,
Ҫӗклет те ҫапать пӗрех ҫӗр ҫумне.
Итрен Микийе ватса ҫӗмриччен,
Чакак, Ахманей тата ик-виҫ йаш
Тухаҫҫӗ чупса пуху хушшинчен.
Ку ҫамрăк ҫынсем пурте пӗр канаш.
Ҫӗклеҫҫӗ вӗсем малтан Микийе,
Унтан Чаккана илеҫҫӗ туртса.
Усал Итренпе куштан Ҫтенккийе
Вирлех лектерсе йачӗҫ уйăрса.

* * *

Урать, хирӗҫет пур куштан шайкки,
Ҫаплах тăрăнать пӗр Чакка ҫине...
— Ей, халăх!—тесе пуҫларӗ Мики,—

Парас-и вара Чаккана гивме?..
Чӑнах-и кунта, Итрен тӑснӑ пек,
Йая пӗтнӗ пирки айӑплах Чакка?
Çук, ку тӗрӗс мар! Пур тип шар, инкек
Ӑçтан тухнине шутлас пат̆ пуçпа,
Инкек тымарри—кантурпа пупра.
Ӑна сирме те май пулнӑ пулсан,
Каллех те Чакка айӑплӑ-и вара?
Çук, çук! Ку йӑлтах йалти куштанран.
Пире Чакка мар,—ӑна çийенсем—
Йала ӗмекен куштан-пуйансем
Çитерчӗç тӗксе çак кун-çул патне.
Ак хаЉ çавӑнпа—тӳс инкексене!..

Митрапан:

Суйу çыпçӑнмаст̆! Тархасшӑн ан суй!..

Çтенкке:

Мики, ан пӑтрат... ан çуйӑх пустуй!

* * *

Ак çак вӑхӑтрах, çуйхашнӑ тӗле,
Татах пӗр вун çын пырат̆ пухӑнса.
Кусем хушшинче—Љарук, Йериле...
Текей те тин çеç тӑрат̆-ха пырса.
Мики чарӑнмаст̆. Хӗрет вӑл пушшех.
Ларан Чаккана хӑйпе хӳтлесе,
Калат̆ вӑл малла хӑйӗн шухӑшнех.
Итрен каманти тӑрат̆ йӳçӗхсе.

Мики:

Чаккан пӗр айӑп: вӑл хӑй чухӑнни.
Пит чухӑн пирки пуппа пурмиçе
Хырçи-марçине татса тӑманни.
Ак мӗн Чаккана хучӗ пӗтерсе...

Ҫарук *(кăшкăрса):*
Чиркўпе кантур —
Пире ҫийет мур!..
Мĕскершĕн илес ҫав хырҫă-марҫа?
Мĕн-ма туйас мар ҫак хĕн пурнăҫа!..

Мики:
Пурнатчĕ Чакка... Ăна Аҫапит
Салтака сутса тĕп турĕ, йал-йыш!..

Итрснпе Йаратав:
Ан кар ҫăварна пит!..

Сассем:
Пар!.. Пар ăна! Чыш!..
Ҫăварĕнчен чыш!..

Пуху хумханать. Итрен, Йаратав—
Хĕрў Микийе илеҫҫĕ тытса.
Каллех ак—шăй-шай! Тĕрмешў. Пăлхав...
Итрен ушкăнне лартаҫҫĕ чарса.

Йериле:
Мики калани тĕрĕс вăл, чăнах...
Мĕскершĕн капла инкек-усала
Чакка ҫине ҫеҫ хумала йăлтах.
Усал унтан мар,—саккунĕ ҫапла!..
Чаккан пĕр кăмăҫ хайарри анчах
Хупларĕ ăна иртнĕ ĕҫсенче...
Саккуҫ, самани пулас лайăхрах—
Чаккан та чĕри пулĕччĕ ҫемҫе.
Чăнах, кантурпа чиркў пусмăрне
Йăвашшăн чăтма нимпе те май ҫук.
Анчах... хирĕҫме вăй ҫитмен йенне,
Тўсес пать йĕрсех вĕсем пăвнă чух...
Чакка тўсеймест... Пăхрĕ хирĕҫме...

Ак çакăн пирки пуçланчĕ хĕн-хур...
Сутник, Алапит—хĕсме те хирме!
Нимскер те урăх пĕлместчĕç ик мур...

Йаратав:

Ан... ан елекле!
Ха, ес те йепле!?.

Йериле:

Çынна хĕрхенсе çăлас вăхăтра
Вĕсем, куштансем, тапранчĕç пушшех.
Леш пуп та, пĕлтĕр çўренĕ хутра,
Пĕр Чаккана çеç тустарнă тĕппех,
Ун пек никама та хĕсмен тек йалта.
Паллах, ун чухне çав куштансемех
Хĕтĕртнĕ Чакка çемйине пăвма.

Итрен:

Апла ес, Йерил,—
Влаçа хирĕç тил!..

Йериле:

Сутник, Алапит тăп пулнă пулсан,
Йулаĭчĕ Чакка чылай инкекрен.
Çавсем, путсĕрсем, ыр йатшăн йалан
Тултарчĕç текех елек ун çинчен.
Аптранă Чакка ак хўтлĕх шыраĭ.
Ăна вăл Пахом çумĕнче тупаĭ...
Пахомкă шайкки кунта çўрени—
Йал-йыш, етсемри, вăл Чаккаран мар:
Ун çулĕ çапла... çапла самани...
Çампа Чаккана тивме мар,—сыхлар!

Сасă:

Чăн-чăн ес калан, Йериле пичче,
Пур айăп кунта куштансем çинче...

Çтенкке:

Чакка пек çук çын сахал-и йалта?
Мĕнле-ха вĕсем пурнаççĕ тата?..

Мики:

Пуçне хуни те сахал мар, Çтенкке...
Патак çинисем, вилсе выртнисем—
Пĕр сиртен пуçне вăл кашни килте.
Есир—ыр çынсем...

Ак сас илтĕнет.
Ку Текей сасси:
— Итрен!.. Ей, Мики!.. лăпланăр... çитет!
Капла çапăçса пулас çук усси...
Хăçан вăл пĕтет?. Пĕр йал, пĕчĕк йал...
Мĕскершĕн вăрçас, йал-йыш, тăвансем!
Вырăс пуçлăхсемшĕн—епир пĕр усал:
Итрен йе Мики?—пĕлмеççĕ вĕсем.
Вĕсемшĕн епир пурпĕр—сĕм чăваш;
Апшурни камант кăтартрĕ кăна.
Тавай, тăвансем, пурнар пĕр канаш...
Çураçăр, Итрен! Каçар Чаккана...

Чарăнат çуйхашу.
Шăпланат пуху.

Мухтат Текейе Йериле старик.
Парат ăна ал. Тулат ун ăшчик.
Хаљччен ним чĕнмен, тăп ларнă Чакка
Тухат малала:
— Выçăпа, асаппа хăрнă шăмшакка
Еп патăм йала...
Еп килтĕм кунта çаксене кĕтсех.
Сут тутăр йал-йыш, ман айăп пулсан,
Пĕр пуç шалкăмар, терĕм еп хĕрсех.

Анчах, хăтартăр мана айăпран.
Ман пурнăç çине, ман ĕççем çине
Пит тĕплĕн пăхса сут турăр мана.
Чухларăр, сисрĕр пуйансен чунне.
Йал-йышăм, уншăн тавтапуç сана!..
Тав сана, Мики! Тавай аллуна!..
*(Микине ал парат).*
Манми тусăмсем!..
Хам пек чухăнсем!
Есир хўтлесен те кунта ман май çук.
Апшур каманти тусса хĕснĕ чух
Тăван çĕршывра пурнаймăп çав еп.
Хам пуçшăн хыпмасп—сире инкеклеп...
Çампа та халех сирлетĕп кунтан.
Те курăп, те çук сире еп кайран,
Ăна пĕлме çук... ну, ырлăх сунап!
Йал-йышăм, сывпул... каçару ыйтап...
Сассем:
— Ăçта ес кайан?
— Аранçке утан?!..
Чакка:
Ăçта ирĕк пур—шырап ireke.
Текей:
Кайни лайăхрах... аван ку хăйне.
Чакка:
Сире те аван çав...
Анчах пĕр чăрмав:
Ăçта-ши мĕскĕн, пĕртен пĕр ачам?
Ăна йулашки хут тытса ыталам!
Сасă:
Тухман-ха, килмен вĕсем—Кулинсем.
Хăраççĕ килме кам хĕр пуррисем.

Усал салтаксем хĕрне анчах мар,
Хăш чух арăмне те çулăхаççĕ вăр-вар...

* * *

Ак çак вăхăтрах
Малти сăртламра
Курнаť тăруках пĕр вун йуланут.
— Каллех салтаксем! —терĕç ик-виç хут.
Хăравçă халăх чăл-пар! арканаť:
Итрен те, пурте вăрмана чăмаť.
Пур халăх тараť. Чакка ак, тăпах!
Йупа пек тăраť пĕччен вăл хытса.
— Мики! —терĕ вăл, леш ал парсанах,—
Парсамччĕ мана кăшт çăкăр касса...
— Айта-ха, Чакка, часрах пытанар! —
Хистерĕ Мики çăкăрне парса.
— Тармастăп епĕ... ман пуç шеллĕ мар.
Анчах, Мики тус, йăлăнап сана:
Ӳстерччĕ ес ман тăлăх ачама!..
Мики:
Ăçта-ши кайан?!.
Асту, çакланан!..

* * *

Ал пачĕç ик тус. Чуптурĕç пĕр хут.
Мики вĕçтерет сĕм вăрман ăшне.
Чакка—чул чĕре (çук ун хăрас шут),
Утаť йерипен хир çулĕ йенне.

* * *

Кун хыççăн кунсем шăваççĕ хуллен,
Иртеççĕ аран синкер уйăхсем.
Апшур каманти тусса çӳренĕрен
Чĕтреççĕ сиксех Кушлавăш йенĕсем.

Выç куçлă камант хăш-пĕр йалсеччĕ
Ернипе тăрса аптратат йăлтах:
Вуншар пуç така, сурăх, йе ĕне
Пустарат тытса пĕр укçасăрах.
Ăçта çит—унта, кашни йал-йышрах
Хĕнеççĕ тытса вуншар мужике;
Хĕнеççĕ тӳсми, кăшт айăп тупсах.
Вилни те нумай салтак патакпе.

* * *

Çитет кĕркунне.
Тăхлан тĕс çапат çанталăк сăнне.
Уйсен, улăхсен илемĕ кайсан,
Вăрман тăррисем типсе сарăхсан,
Тинех ак хăпат апшурни камант.
Тинех ак çитет кăшт лăпкă самант.
Тискер салтаксем кайнине пĕлсен,
Сывлаççĕ лăшах аманнă йалсем.
Кушлавăш йал-йыш те туйат çăмăлрах,
Кĕл-кăмрăк купине чават макăрсах.
Хĕле кĕриччен, кам вăй пуррисем
Тăваççĕ кăшт-кашт ӳпле пек пӳртсем.
Лартаççĕ вĕсем ырхан пӳртсене
Тата сĕмлĕхрех вăрман хушшине.
Ку йалăн йатне те—Кушлавăш йат мар,
Хураççĕ N-кас текен çĕнĕ йат.

* * *

Кĕрхи уçă кун. Хĕвел—каç йенче.
Имшеррĕн ларат N-кас ĕшнере.
Пĕр чăнкă, начар çĕн пӳрт умĕнче
Лараççĕ Мики, Чакак, Йериле.

Лараççĕ вĕсем хуллен пуплесе
Курни-тӳснипе малали çинчен.
Кас-кас сулхăн çил килет кĕрлесе,
Сар çулçă сапат вăрман тăрринчен.
Ак çак самантрах хай чухăн пӳртрен
Хыткан Итукка тухат Илюшпа.
— Мики, ех, ыр чун, ес хĕрхенмесен
Пĕтеттĕмĕр пулӡ... пӳрт ăшĕ лăпах...
Илюш йуншăхлат. Манмаст амăшне...
Ех!—тет Итукка, хуллен хăшлатса.
Халлап çапăнат Чакка пурнăçне:
— Çакланчĕ пулӡ...—тет Мики кулӡанса.
Тăвата çулхи сарă Илюшша
Кукамĕш çинчен чупат çул çине:
Мики йавса пана кантра пушăпа
Çапат вăл, хăват сар çулçăсене.
Нумай та иртмест, ак çывăх уйран
Йĕс шăнкрав сасси çитет йанраса.
— Каллех кантуртан, йе пуп, ку—шуйт-
тан!..—
Теççĕ те çынсем, кĕреççĕ тарса.

## XXV. ÇИРĔМ ÇУЛТАН.

Кушлавăш çунни çитет çирĕм çул.
Çитет çирĕм çул Чакка çухални.
Çак çирĕм çулта улшăну темчул:
Темчул çурални, темчухлĕ вилни.
Иртет çирĕм хĕл, иртет çирĕм çу:
Нумай çил вĕрет, нумай шыв йухат—
Вăрманлăх çĕрне çапат улшăну.
Кушлавăш уй те сарлат, çаралат.
Кив йал вырĕнчи кĕл-кăмрăк купи
Çĕрпе танлашса йулат пус айне;
Ырхан сухапуç, сÿри, урапи
Çуллен тикĕслет кив йалăн тĕпне...
N-кас сарăлат. Ÿсет çĕн йал-йыш.
Çĕн йышшăн—хăйне усал самансем.
Пĕр çирĕм çул çеç кайали кил-йыш
Текех ĕнтĕ çук. Хаљ çĕнĕ йышсем.
Çирĕм çул ĕлĕк каччă пулнисем
Хаљ пурте ĕнтĕ сухаллă мÿжик;
Ун чух вăй-питти мужик пулнисем—
Хаљ пурте вĕсем—чалланнă[1] старик.
Çулсем иртнипе кивви сирĕлет,
Пулса иртнĕ ĕç йулат манăça.
Кушлавăш йачĕ те çаплах ак çĕтет,

[1] *Чалланнă*—çÿçĕ-сухалĕ шуралма пуçланă.

Тепле, ватăсем çеç асăнаç ăна.
Чакка, Алапит, Тевенеш йачĕсем
N-кас хушшинче пулнă айала;
Иԓуш та Йымăԓ, ытти çĕн йатсем
Тухаççĕ ĕнтĕ йалта хаԓ мала.

* * *

Пĕр çӳпсĕр, тăлăх йулнă Иԓушша
Хаԓ ак вăй-питти арçын шутĕнче.
Анчах ачаран çĕмĕрнĕ нуша
Паллах курăнат̆ ун сăн-питĕнче:
Хыткан вăл, хавшак, ашшĕнчен лутра,
Ун кăмăԓ—имшер, хăравçă, ĕçчен.
Вунултă çултан пурнат̆ тарçăра—
Текей патĕнче çунат̆ вăл пĕччен.
Кукамĕш ун çук—вилни вунă çул.
Кулин—хăшкăлат̆ хăйĕн çемйипе.
Микин те пулман ăна ваԓԓи мул,
Çампа та Иԓуш ванат̆ çын ĕçпе.

* * *

Текейпе Итрен пурнаççĕ аван.
Вĕсем, çĕнĕрен пуйса пынă май,
Лартаççĕ кашни ик чуллă арман.
Кунта Йаратав та илет хăйне пай.
Апшур каманти йала пĕтерсен,
Пур халăх аптăрат̆. Итренпе Текей
Йусанаç часах пушар чирĕнчен.
Пуйанăн ĕçĕ ăнат̆çке, текей!..
Йепле ăнас мар? Çунсан та, вĕсен
Йулсаччĕ кашнин çĕршер вĕлле хурт;
Кĕтӳпе выԓăх—пĕрин те пĕтмен;

Иулсаччĕ кашнин урам тулли çурт.
Ахаљ те вĕсен йат çĕр те нумай,
Мĕнпур çĕрĕсем—чипер выранта.
Çампа пуйансен тырпул та самай.
Начар уйсенче—сӳсен-муçалта!..
Çапла майсемпе Текейпе Итрен
Пушар хыçĕнчен вӑй илнĕ часах.
Пĕр пилĕк çултан тӳрленнĕ вĕсем,
Тӳрленнĕ, йал-йыш тертленнĕ хушрах.

* *
*

Пĕрре, çуркунне,
Çур шывĕ сиксе шарлатнӑ чухне,
N-кас уйавлатӑ мӑнкалӑм куна.
Шерпет-сӑрапа чыслаççĕ ӑна.
Текей пӳртĕнче. Хӑна йышлах мар.
Кĕреке хушшинче виç-тӑват арçын,
Тĕпел кукринче—çум-çум йунашар—
Улт-çичĕ арӑм... Мĕн пурĕш—вунӑ çын.
Текей халлаплатӑ кĕреке пуçĕнче.
Ун çӳçĕ-сухаљ шуралнӑ чылай.
Паллах, вӑл ватӑ, пĕр çитмĕл йенче.
Кӳршĕ хӑнисем хаваслӑ самай.
— Итрен,—тет Текей,—каллех еп калап:
Хаљ тупӑш курма арман лартмала.
Миçе хут сана тимлеп, хӑвалап,
Уйпех арман çук... хире каймала...
Айта-ха, кӑçал пуçлар ку ĕçе.
Малтанлӑх лартар пĕр лаша армаљ.
Чӑнах, пĕр чӑрмав—чул кӳме инçе!
Чулне кӳрсенех ĕç кайатӑ аван...
Ака пĕтсен ак, кайар Чĕмпĕре,

Кӳретпӗр унтан пӗр-ик пустав чул.
Арманшӑн—кантур чарас ҫук пире.
Кушлавӑш ҫинче, асту, ҫитес ҫул,
Ҫак вӑхӑт тӗлне кӗрлетӗр арман!
Йуратӑ-и, Итрен?—тет Текей, тимлет.
— Вара ҫӑнӑха чыхма ҫеҫ ан ман!
Аван ку, чӑнах... анчах ал ҫитмест...
Лартасчӗ... хе-хе!—йӑлкӑшатӑ Итрен,
Хура сухалне шӑлатӑ вӑл вӗҫрен.
— Лартасчӗ... лартас, чӑн, ку армана,—
Тимлешрӗҫ вӗсем сӑмаха татса.
Ӗҫеҫҫӗ шалттин тулли куркана.
Унтах хаваспа йачӗҫ йурласа.
Ак ҫак вӑхӑтрах, сарай умӗнче,
Йаш тарҫӑ Иљуш пӑхатӑ выљӑхсем.
Пур ҫамрӑк шавлатӑ урам хушшинче,
Анчах Иљушшӑн ҫывӑх мар вӗсем.

* * *

Ҫӗртме уйӑхӗн вӗри кунӗсем.
Шур Чӗмпӗр хули кӗрлет хӑй майпе:
Вӗркет ҫурран ҫын, шӑваҫҫӗ лавсем...
Выљатӑ хула чунӗ Мӑн Атӑл вӑйпе.
Ак Чӗмпӗр хулин чи вӑйлӑ касси,
Кунта тӗрлӗ шав... кӗрлет чан сасси.
Тумланнӑ кӗптек купца-хуҫасем,
Катмар ҫатансем ҫинче сарӑлса,
Вӗҫеҫҫӗ анчах. Хастар йамшӑксем
Пыраҫҫӗ текех хоп-хоп! хоплатса.
Чечен те чипер пике-майрасем
Кӗпи аркине купа пек сарса,
Хуракӗш йевӗр утаҫҫӗ пӗртем,—

Утаççĕ вĕсем хуллен йаранса.
Унтах аластаç—суту-илÿççем;
Вĕркет хура халах... тĕрлĕрен етем.
Тусанла, тĕркĕш, çинçе урампа
Варман пек етем пырат турашпа,
Вараххан сĕрлет тропар йурлани;
Йан-йан йанкашат шанкрав йантрани.
Шавлат те вĕркет ман урам касси.
Кунта тĕрлĕ шав. Кĕрлет чан сасси.

* * *

Шур Чĕмпĕр хули... чул çурт нумай
мар,
Йĕри-тавралах йаваç хуралтсем.
Пÿрчĕсем чанка, ик-виç хутлашар.
Вĕсен пысак мар тĕксĕм кантаксем
Ултавлан йалтраç хĕвел çуттинче,
Кашни хуçаннах хапхи умĕнче
Тарат çаканса алак пек тур сане.
Улт-çич кил урлах—хупах, трактир...
Вĕсен ашĕнче çарлат хула тане:
Йурлу, çуйхашу—хут кас, хут те ир...
Ак çакан пек чух, çапла сехетре
Пыраççĕ кĕрсе йалтан Чĕмпĕре—
Итрен, ват Текей, ун тарçи Илъуш.
Кусемшĕн хула—тĕлĕнчĕк, харуш!

* * *

Ак Атал хĕрри...
Тÿлеккĕн йаранан сарлака шыв çи
Чĕлтĕр! чĕтренсе тĕрлет çил тĕрри,
Йе чÿхет ана кимĕç кĕреçи.
Çанталак уйар. Хĕвел пĕçертет.

Тăп шыв çийĕпе çил вăшкани çех
Вĕри сывлăша пăртак сĕвĕртет.
Хăватлă Атăл выртаť пĕр пекех.
Ак пристăӊ—çыран...
Чăнкă хысаран
Анаť унта çул.
Сар тăм, кăвак чул—
Ку пристăӊ çулне выртаť хупласа.
Сăртра ав—Чĕмпĕр лараť сарăлса.

* * *

Хула хушшипе чылай йăпшăнсан,
Пĕрре, каçпала, ĕçрен пуш чухне,
Итрен, ват Текей, Иљуш—виçĕш тан
Анаççĕ утса çыран хĕррине.
Çыран хĕрринче—шав, йăслав, сассем...
Унта бурлаксем, купца таврашсем,
Тавар турттаран лавçă-мужиксем;
Шыв тăрăх—кимсем, пĕчĕк баржăсем.
Унтах ак баржа пушатнă çĕртен
Хăр-хар! илтĕнет асли хăтăрни.
Таçтан, анатран, çут кăнтăр йенчен
Йан-йан! çĕкленет бурлаксен йурри.
Ак çак вăхăтрах икĕ пысăк ким
Анаççĕ туран хуллен йарăнса.
Кимсен ик йенпе вуншар çын—пĕр тим
Пыраççĕ харăссăн шыва авăсса.
Ак çитрĕç хайхи кĕрнеклĕ кимсем,
Чарнаççĕ вĕсем. Кимсем тĕпĕнчен
Тухаççĕ майпе купца-хуçасем.
Паллах, ку çынсем таçтан, инçетрен...
Вĕсем хушшинчех курнаť ак—виç çын:

Кусем купца мар, темле пуçлăхсем.
Вĕсен çийĕнче çиçет кĕмĕл чын.
Анаççĕ çӳлтен кӳмелĕ лавсем,
Лартаççĕ вĕсем виç чаплă çынна,
Улхаççĕ сăртри шавлак хулана.

* *
*

Мăн Атăл тӳлек, тулли кăмăлпа
Хавас йышăнаť „йут“ чăвашсене;
Çыран хĕрринчи хĕрӳлĕ шавпа
Туртаť вĕсене кал-кал ытамне.
Çанталăк хĕртсе тăнă тăркачах
Итрен, ват Текей, Илђуш та çаплах
Тăхăннă сăхман, тăла йĕм, шлепке;
Сăхман айĕнче—шур, тĕрлĕ кипке.
Кашнин уринчех—çăпата, тăла;
Ури сыррисем тури вирйалла.
Хула хушшинчи йуть етемсем
Часах витлесе мăшкăл тунăран—
Чăваш йалĕнчи куштан-пуйансем
Шăп çеç, именсе утаççĕ аран.
Илђуш та çавах. Ниçта тухманскер,
Хăраť мулкачлах хула хушшинче.
Лутра çын, ырхан, начар тумлăскер,
Пыраť вăл йалан Текей хыçĕнче...
Ак анчĕç вĕсем çыран хĕрнеле.
Хăйулăх çукпа тăраççĕ хытса
Купипе выртан шур чул çумнеле:
Пăхаççĕ умри шава тăнласа.

* *
*

Пур чаплă çынсем куçа шарнипе
Чăваш мужиксем курман та малтан,

Ак, Атăл тăрăх çыран хĕррипе
Вĕçе-вĕç баржсем çитеç анатран.
Улт-çичĕ баржа... вĕсем туллирен,
Бурлак ушкăнĕсем тапсах туртнипе,
Йухха хирĕçле шăваççĕ хуллен...
Унтах шыв чăххи вĕçет кĕтӳпе.
Бурлак ертелĕсем хулана кура,
Чĕре хавалĕпе тăсаççĕ йурра.
Йантрак йура кĕвви тӳрем шыв çипе
Вĕçет тăвала хĕрӳлĕх вăйпе.
Тăраççĕ çитсе малти баржăсем.
Мĕн пур пек бурлак канмашкăн ларать.
Канаççĕ, унтах çийеççĕ вĕсем,—
Кашни çăкăрпа тип пулă чăмлать.
— Кайар-ха лерех, курар çавсене.
Пит хĕн пуљ пурнăç ку лаша-çынсен...
Ай-йай!—тет Текей çумри Итрене.
Утаççĕ вĕсем малала, хуллен.

* * *

Хĕвел хĕртнипе çуннă бурлаксем—
Тĕксĕм, кăштăркка. Вĕсен çийĕнче—
Тумхахлă, хура, çĕтĕк кĕпесем;
Мелке пуççенче—çӳçпе сухал çеç.
Çыран хĕррипе ертеллĕн ларса
Лĕп Атăл шывпе сыпса çинĕ май,
Чĕр вăй пуррисем сăмах çаптарса
Пуплеççĕ, кулаççĕ—хавас-мĕн самай!
Унтах теприсем, вăй-хал пĕтнĕрен,
Хыт тăм çийĕнче выртаççĕ шăпах.
Таварлă, тулли баржасем çинчен
Асли кăшкăрни йантрать тăтăшах.
Итрен, ват Текей, Иљуш та пĕрле,

Сӑнаҫҫӗ тӑрсах умра мӗн пурне.
Кунтах ак, пӗр ҫын, купца темеле,
Иртсе кайнӑ май витлет вӗсене...
Ак ҫак вӑхӑтрах, шыва пӑлхатса,
Тӑваттӑмӗш баржа ҫитет ак кунта.
Ку баржа та ак тӑрать чарӑнса,
Бурлакӗсем унӑн тухаҫҫӗ канма.
Баржи тӑрсанах, унтан ик ҫынна
Тухаҫҫӗ йӑтса - хураҫ ҫыр хӗрне.
— Чирлисен ҫуртне, ҫӳле, хулана
Леҫетӗр йӑтса вара вӗсене...
Хаљ канӑр пӑртак!—кӑшкӑрчӗ асли.
Мӗн пур пек бурлак шӑп пулать пӗр си:
Чарнать ҫуйхашу—чӗр пурнӑҫ палли.
Ҫут шыв тӑрӑх ҫеҫ шывкайӗк сасси.

* * *

Чӑваш мужиксен куҫ-пуҫ чалхӑрать,
Утаҫҫӗ вӗсем баржасем патне.
Ак, хай сывмарсем: пӗри ахлатать,
Теприн—сасси ҫук, анчах хӑй чӗрех.
— Ай-йай, мӗскӗнсем, вилеҫҫӗ кусем!
Мӗскершӗн ҫапах пӑхакан ҫын ҫук?!.
Шӑна вырӑнчехҫке ку чухӑн етем...
Ӗҫлен ҫав... мӗн тес?!—кулљанчӗ Илљуш.
— Нумай ес пӗлен!.. кам унта ахаљ?
Канма вӑхӑт ҫук... куран!..—тет Итрен.
Сӑмах май чӗтрет ун алса пек сухаљ.
— Пӗр хыт тӑм ҫинчех мӗнле вӗлерен?
Хӑйсем те ҫара!—харкашрӗ Илљуш.
— Кунта килти мар!—тет Текей пӳлсе.
Хирҫӳлӗ сӑмах чарнать ак пӗр хуш.
Илљуш ӑшчикки йӳҫет кӳренсе.

Ак ҫак вăхăтрах пĕр баржа йенчен
Тумтир ҫĕклесе пыраť ват бурлак.
Илђушпа Итрен сăмах хушиччен
Ҫитет вăл, кăҥ-каҥ пăхкалаť пăртак.
Унтан, хай сывмар йулташĕсене
Кăшт ҫĕкле-ҫĕкле, сараť ашăксем;
Вĕсен ҫăмламас пуҫĕсем айне
Пуҫелĕк йатне—хураť тумтирсем.
Ĕҫне пĕтерсен, ку ҫын йусанаť.
Пăхаť мужиксем ҫине тĕллесе,
Унтан пыр тĕппĕн чăвашла ыйтаť:
— Чуаш булĕҫке?.. Кăҫтан-ха килсе?
Тĕлĕннĕ чăваш мужиксем карах:
— Чăвашҫке, чăваш... Йухма леш йен-
сем.
Ес те чăваш-им?—теҫҫĕ йăлкăшсах.
— Ҫук, ебĕ туттар, Сӳве панчисем.
Ак ку, вăт, чуаш. Вилет-тĕр, мур-и!—
Кăтартаť тутар пĕр ҫынĕ ҫине.
— Ну!.. Сирĕн хушра чăваш та пур-и?—
Теҫҫĕ мужиксем тĕлĕннĕ йенне.
— Пулсаччĕ ик ҫын... ак, вилет пĕри.
Калам-ха ăна... тăн пур ун пăртак...
Ав, леш вăт начар; кун ӳчĕ вĕри,—
Тет те пĕшкĕнет ват тутар бурлак.
— Иптеш!.. а, иптеш! Уҫ халĕ куҫна...
Ав Йухма йенчи чуашсем кунта.
Пăх-ха!—тет тутар шăп выртан ҫынна.
Ак, чирлĕ старик хыткан вырăнта
Аран ҫаврăнса выртаť месерле.
Имшер куҫсене аллипе шăлса,
Пăхаť вăл, сассăр, ҫынсем ҫинеле.

Пĕр тапхăр пурте тăраççĕ хытса.
Ак ку вăхăтра вĕсем тавралах
Унтан та кунтан бурлак пуçтарнаť...
Çут Атăл тăрăх ум-хыçлăн каллах
Ик-виçĕ баржа çитсе чарăнаť.
    Кăвак çўç-сухаллă чирленĕ старик
Мĕшĕл хусканса, куçсене уçаť.
— Ай, ай, ку шăмшак... ах, хыпаť ăшчик!..
Абдул, парччĕ шыв, —тет вăл, ахлатаť.
Шывне ĕçнĕ май илет ўсĕрсе.
— Чăваш-и, есир?.. Ăçти чăвашсем?..—
Ыйтаť вăл Текей çине тĕллесе.
— Епир инçетри, Йухма леш йенсем.
— Йухма леш йенсем?!. Хумпуç патĕнчи-и?—
Кун пек ыйтупа хумханаť Текей.
Итрен те тĕлĕнет, тăраť сикленми.
— Мĕнле ку пĕлет Хумпуçне... еккей!
Хумпуç патĕнчи çав, Кушлавăш уйсем.
Пĕлетне?—терĕ Текей чĕтренсе.
„Кушлавăш“ тесен, хай сывмар етем
Хăрах аллипе витет куçсене.
Выртаť пĕр самант ăшчик хурланса.
Унтан йерипен:—Текей мар-и ес?!.
Ма килтĕр кунта-а-а?—тет вăл уçăлса.
— Текейçке... епĕ... анчах кам-ха ес?!.—
Аптрарĕ Текей, хытаť нимуйла.
Итрен ун хăлхи патне лăпчăнса:
— Чакка мар-ши ку?.. Чакка пулмала...
Ех тур, тамаша!—тет пăшăлтатса.
Иљуш ăнланмасť, тăраť хыçалта.

Вилес пек старик темле хăватпа
Сикет те ларат:
— Текей!..
Ес—Текей!?.
Мĕнле ку, ара?..
Ес ма хулара?..

Т е к е й:

Текей çав... епех...
Арман чулĕсем илесчĕ тесех
Килтĕмĕр кунта.
Ак Итрен тата...

С т а р и к:

Итрен!? Çак хура сухал?..
Хăй ашшĕ пекех выç сăнлă... усал!

Т е к е й:

Ес кам-ши капла?
Йепле ес паллан?

С т а р и к:

Чакка еп... çапла...
Леш, сирĕн тăщман.

Т е к е й:

Ей, ну-у-у!.. Пурнатăнçке ес!
Йалта вĕт вилнех шутлаççĕ сана...
Тахçан вăрçнине хаљ ма асилес?!.
Ман ес иртнине! Кўр, пар аллуна!

Ч а к к а:

Çук, алă памасп!..
Анчах та ыйтап:
Мĕнле пурнат йал?..
Ах-х... вăйăм сахал...—
Каллех лап выртса ахлатрĕ старик,
Пăлханчĕ пулас ун чирлĕ ăшчик.



* *
*

Хусканчĕ Илъуш, ыйтать Текейрен.
— Атте-и куман?..—Аçу çав!—тет леш.
Хăвăрт вăл тухать çынсем хушшинчен:
— Атте!. ей, атте!.. телейлĕ тĕлеш...
Еп сан ывăлу—сан тăлăх Илъуш!
Ак çирĕм çултан курап сана тин!..
Анчах тапит шел... ес чирлĕ... хăруш!—
Йанратрĕ Илъуш çăварĕ туллин.
Калатчĕ татах вăл, анчах ăш кӳтсе,
Ун пыр питĕрнет. Хумханнă Чакка
Сасартăк каллех пуçлать çĕкленме,
Анчах йăтаймасть хавшак шăмшакка.
— Илъуш!.. Илъуш·и?! Ех, мĕскĕн ачам!..
Ăçта ес?.. мĕнле?..
Ах... çук... çук!.. Тĕлĕк!.. Чăн мар ес—
такам!
Кай!.. Кай!.. Кай, ес лереле!..—
Кăшкăрать Чакка Илъуша тĕксе.
Выртать вăл чылай, чĕнмесĕр тĕнсе.
Йĕри-таврала тăран бурлаксем
Тĕпчеççĕ хĕрсех Текей-Итренрен.
Вырăсла пĕли-пĕлми мужиксем
Калаççĕ кĕтмен тамаша çинчен.

* *
*

Хĕвел аннă чух...
Çанталăк тӳлек.
Тăп Атăл çинче сас-чӳ тавраш çук.
Хула йенчен çеç илтĕнет кĕрлек.
Сывмар выртакан ик-виç бурлака
Йăтса ăсатаççĕ хула хушшине.

Иљуш ыйтнипе пӗр старик—Чакка
Йулайна выртса çыран хӗррине.
Канма чаранна бурлак таврашсем
Çыран хӗрринче курнаççӗ сайра;
Çывраççӗ хăшпӗр ырса çитнисем,
Укçа пуррисем—труктир-хупахра.
Чакка çумӗнче –Иљуш, ик бурлак;
Кăштах айакра—Текейпе Итрен
Лараççӗ тӗнсе. Чакки ак пăртак
Самай пек туйса, тӗпчет йал çинчен:
Ыйтать вăл, пӗлет йал-йыш мӗнлине,
Ыйтать пурмис-пуп çаплах хӗснине;
Тӗпчет Иљушран—мӗнле ўснине,
Пӗлет—вăл Текей тарçи иккенне...
Чылай тӗпчесен, хашлатрӗ Чакка:
—Ех, мӗскӗн!—тет вăл,—ес тўснӗ, ачам!..
Ирех сив тăмпа аманна папка,
Çапах та ўссе çын пултăн-мӗн, кам!..
Ачам... ху аçу вут чунлă пирки
Ес тўсрӗн çакна... анчах ан кўрен:
Палхатрӗ мана тӗреслӗх çукки.
Çампах пӗтрӗм еп... ак ес те тўсен...
Тӗнчиçке усал...
Пуйан çынна çех
Ку Раççей кал-кал...
Саккуњ пӗтӗмпех
Хўтлет пуйана...
Кун çук чухăна!..

И љ у ш:

Çапла пуљ вăл... ну,
Мӗнле ес, атте, манайрăн мана?..

Ҫунмастчĕ-и чуну?
Пĕрре хут пырса пăхас ҫĕршывна!

Чакка:

Манман та, ачам...
Сана вилчех пулђ тесеттĕм еп хам.
Йала пыма ман май ҫукчĕ, апла...
Пур пуҫлăх уншăн ҫийетҫке йала!

Илђуш:

Калаччĕ, атте, ес мĕнле майпа
Вырнаҫнă килсе ҫак Атăл ҫине?
Шăлтах тĕлĕнеп: мĕнле хăватпа
Тĕл пултăн ес халђ ман куҫăм умне?

Чакка:

Кĕтмен вăхăтра сана курнипе
Ăсран еп кайап...
Вилеп еп... анчах кун пек телейпе
Вилсен те хыпмасп...
Илђуш, ес пĕлсен, кайăн тĕлĕнсе:
Бурлак ертелне килсе кĕриччен
Чылай ҫулсем еп ҫӳрерĕм ҫĕтсе.
Малтан Хапăсри Пахом тусĕнчен
Йут паспăрт илсе,
Карăм Чикмене...
Унтан сулăпа—Царицăн йенне...
Царицăн йенчен—Йаик[1] улăхне...
Унтан, пĕр ҫултан, Аҫтăрхан ҫĕрне...
Вара, Капкаспа Кубаҭ тăрăхне.

Ҫӳрерĕм чылай...
Анчах тавралах—

---

[1] Урал шывне ĕлĕк Йаик шывĕ тенĕ.

Хĕн-хурлăх пĕрмай.
Ырри çук ниçтах...
Ак хаљ бурлакра, шăп вунпилĕк çул...
Ман çывăх туссем ак – Филька, Абдул...
Çӳрерĕм çапла -
Афоњка йатпа...
А б д у л:
Çӳренĕ нумай старикпе, ей-йей!..
Аван çынччĕ ул—Афуњкă пичей.
Царицăнра еп паллашнă унпа,
Филька Чикмерех тусланнă пулас...
Пĕр тапхăр каллех сăмах чарăнат.
Шăпланнă Чакка аран çеç сывлат,
Пĕр виç хăлаçра – Текейпе Итрен
Темскер çинчен тек мăркаççĕ хуллен.

* * *

Чылай вăхăтран Чакка ак чĕнет,
Сасси ун аран, имшер илтĕнет:
— Иљушкă, ачам,
Вилеп пуљ часах...
Ес ан куљансам:
Капла курнăçни пит ырă çавах.
Анчах та, итле:
Йалта ес çунан упа йĕннинче...
Хура сĕлĕхсен хыт ытамĕнче
Пиçен пиçмеле...
Ан кай кайала,
Ачам, вăл йала...
Абдул, ак Филькă... нумай ман туссем,
Вĕсем пĕтĕмпех аван бурлаксем,—
Пăрахмĕç сана:
Илĕç ушкăна...

Бурлак пурнăç те, чăн та, çăмăл мар,
Анчах çăмăлне ăçта хаљ тупар?!
Çапах та Атăл уçă вăл—тĕнче!..
Сан пек етемсем пинĕпех ун çинче.
Вĕсен хушшинче чунна йăпатан:
Пĕрле канашлан... пĕрле халлаплан...
Хĕлле—хулара вырнаçăн пĕр-пĕр...
Йална та кайăн... сан пур-ха ĕмĕр...

Абдул:

Калап ертеле:
Афоњкă ачи тесе илмеле...

Иљуш:

Атте, еп хавас...
Анчах ман сана мĕнле хăварас?

Чакка:

Ку баржа кунтан тухса кайиччен,
Ачам, еп вилеп... йулан ес пĕччен...

Иљуш:

Чăвашçке-ха еп,
Кулаççĕ пуљ, теп...

Абдул:

Бурлак хушшинче ун пек мăшкăл çук:
Чăваш-и, вырăс-и,—пурин те пĕр чун...

Текей (*çывхарса*):

Чакка... пуплесшĕн епир...
Пăрах кĕвĕçме. Хайарлăхна сир!..

Чакка:

Ан кил!.. Ан çывхар!
Ман чун тухас чух ес кунта ан лар!..

Аптранă Текей шарт! çапатť алла,
Итрен патнеле чакатť кайала.
Каллех ак шăпăрт.

Вăхăтран вăхăт
Чакка çеç варах чăсса ăнтрашат.
Йĕри-таврана шĕв тĕттĕм хуплат.

* * *

Ирпе...
Хайар çиллĕ кун.
Çанталăк йĕпе.
Шавлат аслă Атăл, ташлат çийĕ ун.
Çил май, кăнтăртан, хула çыранне
Хум хыççăн хумсем çапаççĕ пырса.
Тĕнче тӳпипе таçта, сив йенне,
Хура пĕлĕтсем иртеççĕ шуса.
Ак çак сехетре,
Хула çумĕнчи çăва хĕрринче,
Тӳрем çеремре—
Тăрат ак Иљуш. Иљуш умĕнче
Ун ашшĕ тăпри—виле тĕмески.
Ăна ĕнер çеç пытарнă кунта,
Пытарнă ăна бурлаксен пулкки.
Иљуш ирпе ир çитнĕ çакăнта.
Çитсĕн вăл тӳрех хăй ашшĕ çинчен
Кăклат те перет чăрăш хĕресе.
Тупат пысăк чул хыса хĕрринчен,
Хурат çак чула хĕрес вырăнне.
Тин çеç хăй Иљуш ларсаччĕ канма
Тĕме çумĕнчи çеремлĕх çине;
Йӳççе килекен чунне хытарма
Пăхат вăл шавлă Атăл ташшине.
Унччен те пулмаст, чăнкă çыранран
Улхат ун патне ĕшеннĕ Абдул:
— Мĕскер ес, шăллăм?.. кайаççĕ—йулан...

Пыран-тăк—часрах, йулан-тăк—сывпул!..

Илљуш:

Хавас еп пыма...
Анчах та мĕн-ма
Сирĕн баржа хуçи—
Начар ес, терĕç—тиркерĕ мана..

Абдул:

Ес пурте саван Афоњка ачи. .
Хуçа мар, ертел йышăнаť сана...
Пыран·тăк—часрах...
Кайаççĕ веç... ах!..

Тăмарĕ Абдул текех калаçса:
— Сывпул!—тет те вăл, сулаť аллипе,
Шырлак хысаран анаť варкăшса.
Чупаť хускалан баржасем йенне.

Ăш вĕçнĕ Илљуш тăраť çĕкленсе.
Чи чăнкă хыса хĕррине тăрса
Пăхаť вăл хумсем çине тинкерсе.
Ытамсăр Атăл выртаť шавласа.
Кураť ак Илљуш: пĕр çухрăм тура,
Улт-çич барж харăс, вĕçе-вĕç, ум-çум
Хусканчĕç хуллен... йăслав, сас-хура!..
Кашлаť хайар çил. Шавлаť, сикет хум.
Шăваç баржасем Хусан йеннеле:
Кашнин умĕпех—пĕр ушкăн бурлак,
Малала ўпĕнсе мĕн пур вăйпеле
Туртаť каната. Мăн Атăл шавлак.
Çыран хĕрринче етем йăслани,
Мăн Атăл хумсем сиксе шавлани
Çилпе варăшса пулаççĕ пĕр сас;
Йанраť вăл хăватлăн, ирĕклĕн, хавас!
Йăпанчĕ Илљуш çак ирĕк саспа.

Ашшӗ сӑмахне илет вӑл аса:
Ҫут Атӑл—тӗнче... йепле вӑл хапа!
Мӗн-ма ҫӳрес мар ун тӑрӑх курса?
Йала таврӑнсан—каллех хаљчченхи:
Куштан-пуйана пуҫҫап та—тек пиҫ!
Атте калашле: йал—упа йӗнни...
Текей пусмӑрне—ан шутла, ан виҫ!
Вӑрман тӗпӗнче хӗн-хур тӳсиччен,
Тухам тӗнчене—ҫӳрем ҫаврӑнса!—
Шутларӗ Иљуш, сикет ту ҫинчен,
Чупаť баржасем хыҫҫӑн ыткӑнса.

* * *

Хула ҫумӗ шӑпах. Чаккан ҫӗн тӑпри,
Хӗрессӗр тӑпра йулаť хуралса.
Таҫта, айакра кӗрлет аслати.
Патрах Мӑн Атӑл выртаť шавласа.

ВӖҪӖ.

# ТУПМАЛИ

Стр.

I. Кантур—чунилли . . . . . . . . . 5
II. Куланайшăн . . . . . . . . . . . . 9
III. Йунлă мунча хыççăн . . . . . . . 16
IV. Пĕрре, çурхи каç . . . . . . . . . 25
V. Пăкачав мĕлки—Пахомкă . . . . 31
VI. Çапăçу . . . . . . . . . . . . . . . 37
VII. Тĕшмĕшлĕх . . . . . . . . . . . . 46
VIII. Икĕ йунав хушшинче . . . . . . 50
IX. Алапит ĕçки . . . . . . . . . . 54
X. Пуппа течук . . . . . . . . . . . 63
XI. Турă йачĕпе . . . . . . . . . . . 67
XII. Пуçлăхсем пăвасçĕ . . . . . . . . 74
XIII. Шăннă вăрман хӳттинче . . . . . 83
XIV. Хайар тавăру . . . . . . . . . . 88
XV. Пăлхавлă пуху . . . . . . . . . . 97
XVI. Çĕрпӳрт кассинче . . . . . . . . . 108
XVII. Хуптĕрлӳ . . . . . . . . . . . . . 115
XVIII. Чакка тыткăнра . . . . . . . . . 123
XIX. Кил-йышне çăлма . . . . . . . . . 130
XX. Ăнăçсăр хăтару . . . . . . . . . 137
XXI. Инкек çине синкек . . . . . . . . 145
XXII. Улпут хресченĕсем патĕнче . . . 153
XXIII. Салтаксен тискерлĕхĕ . . . . . . 161
XXIV. Чакка—йал-йыш сутĕнче . . . . . 169
XXV. Çирĕм çултан . . . . . . . . . . . 181

Хакĕ 3 тен. 50 п.
Цена 3 руб. 50 к.

С. ЭЛЬГЕР

# ПОД ГНЕТОМ

ИСТОРИЧЕСКАЯ ПОЭМА

★

ЧУВАШГОСИЗДАТ ● 1937